Ю41
4-35937

Анатолий Юман

Суйласа илнисем

Национальная библиотека ЧР
4-035937

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

Суйласа ИЛНИСЕМ

подарок Ульян

Ульяновск
«Симбирская книга»
1994

А. Юмашев

коп
кс(4ув)
Ю41

Анатолий ЮМАН

Сăвăсем, поэмăсем, сăвăлла роман

ББК 84.4 Чув.
Ю 41

Книга издана в соответствии с постановлением Главы администрации Ульяновской области от 19.06.93 г. N 205 «Об областной программе книгоиздания на 1993-1996 г.г.» Позиция N 148.

Искренне благодарен Главам администраций Ульяновской области Ю.Ф. ГОРЯЧЕВУ и Цильнинского района Х. В. РАМАЗАНОВУ за помощь в издании этой книги.

Автор.

ЮМАН А.

Ю 41 Суйласа илнисем. Избранное. Поэзия; Ульяновск, «Симбирская книга», 1994. с.

В «Избранное» чувашского поэта А. Юмана вошли стихи и поэмы разных лет, а также роман «Водоворот», в котором на историческом фоне прослеживается судьба четырех поколений обычной семьи чувашского крестьянства.

В центре произведений А. Юмана - человек, самозабвенно любящий отчий край.

Чăваш поэчĕн А. Юманăн «Суйласа илнисем» кĕнекине тĕрлĕ çулхи сăввисемпе поэмисем, çавăн пекех «Пурнăç авăрĕ» ятлă савăлла романĕ кĕнĕ. Унта вăл тăватă ăру кун-çулĕ урлă чăваш хресченĕсен шăпине çырса кăтартнă.

А. Юман хăйĕн хайлавĕсенче тăван тавралăха чун-чĕререн юратакан çынна тĕпе хурать.

ISBN 5-8426-0159-1 ББК 84.4 Чув.

© «Симбирская книга», 1994.
© Оформление. Художник В. Кашеев.

4 35937

НАЦИ... БИБЛИОТЕКА
ЧУВА... ОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2010

ЧЁМПЁР ЕН ЮРӐÇИ

1957 çул. Эпир Иван Кузнецов критик-писательпе пёрле çамрӑк поэтсен сӑввисене пухса «Çеçпёл çеçкисем» кёнеке кӑлартӑмӑр. Кёнеке редакторё Юрий Скворцов поэт пулнӑччё. Çапла, кёнеке валли пичетлеме сӑвӑсем хатёрленё чухне манӑн алла «Йӑмра» ятлӑ сӑвӑ лекрё. Сӑвӑ авторё Анатолий Ермилов халё Юман хушаматпа пичетленекен поэт иккенне пёлпёмёр. Ун сӑвви пирён кӑмӑла кайрё. Ӑна, пёр кӑмӑллӑ пулса, кёнекене кёртес, терёмёр. Сӑвӑ:

Каç карчё чаршавне мӑн йӑлӑмра,
Çӳл тӳпере çут çӑлтӑрсем çунаççё.
Канать, тёлёрет кӑшт тайӑлнӑ йӑмра,
Ун айёнче яш-кёрёмсем выляççё.
Ёç хыççӑн лӑпкӑ, савӑк каçсенче
Кунта аван-çке вӑйӑ вылямашкӑн,
Йӑмра çумне сёвеннё сак çинче
Чун савнипе сӑпайлӑн калаçмашкӑн...

текен йёркесемпе пуçланать. Çакӑн пек илемлён янӑракан, чун-чёрене çёклекен йёркесемпе вёçленет. Анатолий Федорович Юманпа эпё ун чухне, «Çеçпёл çеçкисем» кёнеке тухнӑ кунсенче, паллашнӑччё пулас. Вӑл тёлёнмелле ёçчен, пултарулла, сӑпай поэт иккенне туйса илтём. Унӑн произведенийёсене эпё яланах юратса вулатӑп. Уйрӑмах поэтӑн «Телей сӑпки», «Чёмпёр чулё калаçать» поэмисене, «Çулпуç сӑпки» сӑвӑ ярӑмне кӑмӑллатӑп. Вёсене вуласа тухнӑ хыççӑн Анатолий Федорович пултарулӑхё, сӑвӑ-юрӑ çырас ӑсталӑхё ӳссех пынине туйса илтём. Юман çырнӑ произведенисене ватӑ çынсем те, ачасем те хисеплеççё, юратса вулаççё. Ку пире пурне те савӑнтарать.

Анатолий Федорович Юман 1932 çулта Ульяновск облаçёнче, Чӑнлӑ районёнче, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан тӑрӑхра çуралнӑ. Темиçе çул каярах кӑна-ха эпир вӑл утмӑл çул тултарнине паллӑ турӑмӑр.

Ку кёнекере поэтӑн тёрлё çулсенче çырнӑ сӑвӑвисемпе поэмисем пичетленеççё. Унта «Пурнӑç авӑрё» сӑвӑлла роман тёп вырӑн йышӑнать. Унӑн малтанхи сыпӑкёсемпе эпир маларах «Телей сӑпки» ятлӑ пысӑк сулӑмпа çырнӑ поэмӑра паллашнӑччё. Унтанпа чылай шыв-шур юхрё. Автора çав пысӑк калӑплӑ хайлаври пулӑмсемпе персонажсен шӑписем пултарулӑх çулё тӑршшёпех канӑç паман иккен. Çапла вара событисемпе сюжет йёрёсем та аталанса пынӑ, юлашкинчен вёсем сӑвӑлла романа çити ӳснё. Акӑ пирён умра - чӑваш тёнчи. Ӑна автор ялти ахаль хресченён тӑватӑ ӑру сыпӑкё урлӑ кӑтартса пама тӑрӑшнӑ.

Çаплах «Тăван» ялта» тата «Йывăç велосипед» поэмăсемпе те вулакансем малтанхи хут паллашаççĕ. Çырасса вĕсене те тахçанах çырнă-ха. Ку е вăл хайлав шăпи те, çын шăпи пекех, тĕрлĕрен килет. Асăннă хайлавсен вулакансем патне тухмалли çулĕ те тумхахлă пулнă. Çулсем иртнĕ хыççăн вĕсене темиçе хутчен че чутлама, саваласа якатма тивнĕ.

«Ултав» ятлă пĕчĕк поэма - аслă ăрури çынсен пурнăçне кĕрсе вырнаçнă ăс-хакăл пуянлăхне çĕнĕ куçпа хаклама вĕрентекен, уйрăм çынна пысăка хунă вăхăтра ку е вăл событие илеологие май пăсса кăтартнă «куçпăвансене» тăрă шыв çине кăларакан гражданла çивĕч туйăмпа çырнă хайлав.

Кĕнеке поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисемпе уçăлать. Вĕсем, тĕпрен илсен, халиччен ниçта та пичетленмен.

Анатолий Юмана эпир Чĕмпĕр поэчĕ тетпĕр. Анчах ку вăл унăн тавра курăмĕ ансăрланса ларнине пĕлтермест. Пачах урăхла, чĕре витĕр тухнă вырăнти пулăмсем ăна тĕнчепе этем кун-çулне чăваш чунĕпе ăнланса илме май параççĕ. Поэтăн çĕнĕ кĕнекинчи хайлавсене те шăп та шай автор этем пурнăçĕ çине кун-çул тӳпинчен тӳрĕ те çивĕч куçпа пăхса çырнăскерсем тес пулать. Çакна эпир унăн кĕнекине кĕнĕ сăввисемпе поэмисенче, уйрăмах сăвăлла романĕнче туллин туйса илетпĕр. Вĕсенче автор пултарулăхĕ çĕнĕ енчен палăрать.

Ёмĕр пуçламăшĕнче чăвашсен малтанхи юратăвĕ - «Нарспи» поэма тĕнчене килнĕ хулара ёмĕр вĕçĕнче чăваш поэзийĕ тепĕр хут сас парса ентешсен чунне вăратма пултарни хăех, пирĕн шутпа, калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май ман Анатолий Юмана, чăвашсен ятлă-сумлă поэтне, Раççей Федераци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченне, хамăн ĕçри шанчăклă тусăма, юлташăма пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, телейлĕ çул сунса çапла калас килет:

Эпĕ саншăн çаплах савăнатăп,
Тус-юлташăм, тăванăм Юман.
Пуç тайса ырлăх-сывлăх сунатăп,-
Пурах шанчăк çумра эс пулсан.

Чăваш халăх ятне эс ямарăн
Ёмĕрех ĕçчен çын пулнăран.
Туслăха, çынлăха шав упрарăн,-
Тавах уншăн сана чун-вартан!

Ваçлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,
Чăваш халăх поэчĕ.

ТЁРЛЁ ÇУЛХИ СĂВĂСЕМ

Шурă хурăн

Паркра ешернĕ йывăç-курăк
Пач улăштарчĕ хăй тумне.
Тӳпи те, сывлăшĕ урăх,-
Кунта хуçи халь - кĕркунне.

Сив çумăрпа исленнĕ йывăç
Ларать салху, ĕнтĕркесе.
Лăскать те çил - ӳкет ун йăвă,
Çавра çулçи пĕтĕрĕнсе.

Пĕр хурăн çеç çаплах мăнаçлă -
Кĕвĕçтесе хăва-тусне -
Тăкмасть-ха хăйĕн сарă сăнлă,
Тĕсне çухатнă кăтрине.

Унпа çаплах кив парк илемлĕ,
Чун савăнать ăна пăхса.
Пĕчченçĕ шурă хурăн пек-мĕн
Этем те, ак, пĕр шутласан:

Шеллевсĕр вăхăт иртнĕçемĕн
Пĕркелĕ çамрăк сăнсене,-
Анчах нихçан ватăлтаймĕ
Хастарлă, яш чĕресене.

1954.

Йăмра

Каç карчĕ чаршавне мăн йăлăмра.
Çӳл тӳпере çут çăлтăрсем çунаççĕ.
Канать, çыврать кăшт тайăлнă йăмра,
Ун айĕнче яш-кĕрĕмсем выляççĕ.

Ёç хыççăн лăпкă, савăк каçсенче
Кунта аван-çке вăйă вылямашкăн,
Йăмра айне сĕвеннĕ сак çинче
Чун савнипе сăпайлăн калаçмашкăн.

Çĕр çул та, тен, ларать çак ват йăмра.
Çавах хитре, çавах кăтра туратлă.
Мĕн чул, мĕн чул-ши каччă-хĕр чунран
Ун айĕнче пĕрне-пĕри юратнă?

Эп те хĕре юратрăм çакăнта...
Хальччен чĕре нихçан савса курманччĕ.
Лашпра йăмра хумханчĕ те пăртак -
Ăшра асамлă туйăмсем вăранчĕç.

Пăхсам, пăхсам: йăмраллă ял çинче
Çут çăлтăрсем ялтăртатса çунаççĕ.
Ахальтен мар сӳнми телей çинчен
Яш-кĕрĕмсем хавасланса юрлаççĕ.

1954.

Çырма

Ял çумĕпе юхать тӳлек çырма,
Ик хĕррипе ӳсет черченкĕ çирĕк.
Кунта аван ырсан канса ларма,
Ĕмĕтсемпе çунатланмашкăн ирĕк.

Ача-пăча йĕмпĕççине тытса
Чупать кунта. Шывра ишет хут-кимĕ.
Янрать кăна, янрать хавасла сас,
Кавир-çерем кĕççĕленет сип-симĕс.

Юхать çырма, мала тек ăнтăлать,
Пĕчĕк пулсан та хăй ун пысăк кăмăл:
Йăваш хумне хăвать вăл Атăла,
Ăна унта чупмашкăн пулĕ çăмăл.

Çырма кĕске те ансăр Атăлтан,
Хур çеç унта чăмать-ха çăтăл-çăтăл.
Анчах вак çырмасем пулман пулсан
Хăй хăватне тупайĕччĕ-ши Атăл?

1956.

Кимĕç

Халăхшăн атте вăл Атăл.
Кам савман ун илемне!
Паян шуххăн хăвалать вăл
Шурă кăпăклă хумне.

Эп сасартăк куртăм - ку мĕн? -
Хам тăратăп сăнаса:
Чӳхенет шывра пĕр кимĕ,
Кăкрипе хума касать.

Çӳлелле пĕр çĕкленет те,
Чăмать тĕпсĕр авăра.
Ирĕксĕрех шикленетĕн:
Ма çаплах тухмасть ара?

Çук, путман-мĕн кимĕ, меллĕн
Малаллах вăл вирхĕнет.
Пăртакран тĕрĕс-тĕкелĕн
Ишсе çитрĕ çыр хĕрне...

Эп шутларăм: пурнăç - Атăл,
Ун пек лăпкă та кăра.
Кимĕç пек, ăна пул хапăл,
Йывăр хумран ан хăра!

1955.

Икĕ кĕпер

Пĕр тапхăр çумăр шавласа
Мăн Атăла шывпа чӳхерĕ.
Хĕвел унран кулма тăрсан -
Çĕкленчĕ асамат кĕперĕ.

Умра хитрен тăрать çиçсе
Чăн улăп пĕкĕ евĕр авăк.
Ахальтен мар çав поэтсем
Ăна савса çыраççĕ сăвă.

Тинкертĕм акă малалла,
Умра каллех кĕпер эп куртăм.
Самант кăна тăхтамалла -
Унта çитет ман пăрахутăм.

Ай-хай мăнаçлă çывăхран,
Никĕсĕнче ун - чул та хурçă.
Ăна çĕкленĕ халăхран
Тĕлĕнмелли ку чух та пур çав.

Ĕçчен, хастар этем алли,
Тытса туман ĕç çук та пулĕ.
Кĕперĕ - самана палли,
Çĕкленĕскер тĕреклĕ, çӳллĕ.

Вăл калăн икĕ ĕмĕре
Çыхса тăрать, гранит пек, çирĕп.
Ман хумханса тапать чĕре,-
Ун урлă эп те иртсе çÿрĕп.

1956.

Тĕл пулу

Сергей Есенина

Юхать çĕнелнĕ Атăл сарăлса,
Яка питне пăхсассăн тинĕс тейĕн.
Ишет умри вак хумсене çурса
Шур акăш-пăрахут «Сергей Есенин».

Хĕрсен юрри хаваслăн янăрать,
Чун-чĕрене çĕклет илемлĕ çаврăм.
Тăван Сергей пичче! Çав самантра
Çут тĕнчене нихçанхинчен те саврăм.

Тахçан эс бронза-Пушкин умĕнче
Пуçна пĕксе сăпайлăн тăнă евĕр
Куçа илместĕп пăрахут çинчен,
Пĕрне-пĕри тĕл пулнă тейĕн эпĕр.

Калатăп эп: пăхсам, Сергей пичче,
Этем ăс-хакăлĕ епле çунатлă!
Халь пурнăçсем тумхахлă мар, чечен,
Ĕçчен алли нихçанхинчен хăватлă.

Хула е ял çыннисене курсан,
Пĕр тăвансем тесе хаваслăн калăн -
Кив тумтирне яланлăхах хывса,
Йăлтах çĕнелчĕ ман йăмраллă ялăм.

Кашни этем çинчен хуть юрă хур -
Ун ĕçĕ тивĕç кĕнеке пулмашкăн.
Алла перо тытма сăлтавĕ пур,
Сăлтавĕ пур хавхаланса çырмашкăн.

Тăван çĕр-шывăн ĕçлĕ çыннисем
Талантсене хисеплеме пĕлеççĕ...
Паян сана сума суса хумсем
Илемлĕ, çепĕç çемĕ кĕвĕлеççĕ.

1956.

Ялавăр

Ялавăр,
Ялавăр,
Ялавăр...
Ан тĕлĕнĕр: пур ун пек ял!
Çитететĕпĕ унта эп: çĕр тăвăр,-
Каллех çула чĕнчĕ кăçал.

Эп куçлăх тытса тăхăнатăп
Санпа тĕл пулсассăн ялан.
Тĕтре сирĕлет те, куратăп,-
Иртни çывхарать унпалан.

Куратăп: ыр-сывă аннеçĕм,
Унпа юнашар - кукамай.
Тӳлеккĕн тăсать кивĕ çемĕ
Йĕке пĕтĕрсе ларнă май.

Татах тинкеретĕп: илемлĕ!
Сасартăк куратăп: кив лаç.
Унта пĕр ача-мĕн иленнĕ...
Ку хам-çке ара?
Ан калаç!

Кунтах кивĕ аслăк-хуралтă...
Хуралнă çĕрсе... Пултăрах.
Çĕрле унăн витĕр куратăп
Хама чĕнекен çăлтăра.

Шарлать валакран чĕр çăлкуçĕ,
Чулпа калаçать шух çырма.
Ачалăх - çарран, çара пуçăн,
Пĕлмест вулама та çырма.

Çырми унăн - Атăл е тинĕс,
Карапĕ - пĕр татăк турпас.
Тĕнчемĕр хитре те тип-тикĕс,
Хаваслăх чуна шăнăçмасть.

Шарт! сикрĕ сасартăк йыш-халăх,-
Вут хыпнă-мĕн Анăç енче.
Çав кун манăн иртрĕ ачалăх,
Çав кун муртакланчĕ тĕнче.

Ялавăр,
Ялавăр,
Ялавăр...
Пĕлетĕн-и, пур ун пек ял!
Вăркарĕ ман ăшăм вăр та вăр!
Каллех çула чĕнчĕ кăçал.

1963.

Коновалов сачĕ

Чĕмпĕр витĕр тухсан - Синкĕл хули.
Атăл юхса выртать çыран тулли.

Хушка хум пек кунта сăрт-ту çамки.
Элле асне килет-ши тахçанхи?

Пире мĕскер каласшăн шурă чул?
Хăй ĕмринче чылай вăл курнă пуль.

Çилпе каплаççĕ йывăçсем умра.
Мĕнле сăмах хушасшăн ват йăмра?

Пурăнать-çке чăвашах ку енче.
Кур: Анатьял, Ялавăр, Уличе.

Сăрт айккипе, вăрман пек, тулăх сад.
Турачĕ çимĕçне епле чăтать?

Улма çĕре ўкет те, çĕр чĕтрет.

Ларса юлни хĕртет хăй аякне,
Çапла пухать хĕвеллĕ пылакне.

Çулçăпала выляççĕ мальт, анис,
Мичурин хăй куçланă тейĕн-иç.

Килсе курманччĕ эпĕ ку тĕле.
Калать йăмра - чи ватă кўнтеле:

- Ку ен авалтанпах садпа пуян,
Унра эс халăх хăватне туян.

Эп астăватăп урăх вăхăта,-
Унта-кунта ларатчĕ тунката.

Ытла та йывăр килчĕ халăха,
Ача-пăча юлатчĕ тăлăха.

Вирт ячĕ урнă Гитлер тĕнчене,
Шăрши кӳ! çапрĕ Уличе çине.

Чуна витерчĕ шартлама хĕлле -
Улмуççисен мĕнле-ши тӳсмелле?

Фронтри салтак пек касăлчĕç вĕсем -
Улмуççисем, чие йывăççисем.

Тĕнче йăнсан Уличери ватти-
Куç умĕнчех мучи кулли, утти -

Хăй карчăкне ертсе çула тухать,
Çĕн сад чĕртме хунав тавраш пухать.

Ик кăлтăркаллă урапа çине
Тиетчĕ, çул тытатчĕ сăрт енне.

...Паян кунта каллех ем-ешĕл сад.
Ял-йыш хавхаланса улма пухать.

Кунта, садрах, пĕчченçĕ тĕмеске,
Ун айĕнче пахчаçă ӳчĕ-çке...

Ăна ял-йыш çăва çине леçмен,
Садрах канайтăр, тенĕ, çын-ĕçчен.

Ĕçченлĕхне пула сĕм вилĕме
Пултарнă вăл хăй евĕр çĕнтерме.

Ун мавзолейĕ, ак, - хăй чĕртнĕ сад,
Ун ыр ĕçне паян ял-йыш тăсать.

Указ çырма кам тивĕç - чухлайман,
Мучи ятне ял-йыш каплах манман.

«Иван Михалччă Коновалов сачĕ»,-
Хăй председатель ăшшăн паллаштарчĕ.

1972.

Çырлара

Йăрăм-йăрăм хурлăхан тĕми ӳсет,
Çырла пиçнĕ - садра халăх хĕвĕшет.

Çырлисем те, хура халăх пек, нумай, -
Кунтăка хăйсем сикесшĕн татнă май.

Чи тĕпри - шултăрарах та тутăрах,
Татма тăнăччĕ кăна кĕç... ўкрĕ, ах!

Кунтăка вăл лекеймерĕ, питĕ шел!
Пĕр тăкаксăр пухса кĕрт-ха, туп-ха мел!

Чи вакки... Вăл кĕнĕ, кунтăк тĕпĕнче,-
Пăх та кур ăна, телейлĕ! Эй, тĕнче!

Ма сăлтавсăр çухалать хура çырла?
Пиçменни кĕрет хăй тĕллĕн вак çынла.

Çăмăл мар пирте тўр кăм. [illegible] çынна,
Çĕр чăрмав малта кĕтсе тăрать ăна.

Этемкке тени ĕçлет... чавсапалан,
Ăнтарать хăй пурнăçне çавăнпалан.

Каснă-лартнă вак çырла пек-çке ара,-
Акă мĕн курса эп пĕлтĕм çырлара.

1975.

Яковлев шкулĕ

М. М. Бикмендеевăна

Туйăнатчĕ пысăк, аслă, çутă
Ялти хăтлă çурт, пуçламăш шкул.
Эп унта çуралнă, пулнă тутă,
Тепĕр чух выçса та ларнă пуль.

Атте килĕ пулчĕ ĕнтĕ маншăн
Çакă ватă, тараватлă çурт.
Ўкĕнместĕп, çук, эп иртнĕ куншăн,-
Кашни кунăн çутă йĕрĕ пур.

Каярах сахал-и тĕнче касрăм,
Аякра кермен тавраш нумай.
Асăма килмен-ши миçе ăстрăм
Манăн шкул, хам çул çўренĕ май.

Таврăнсан ялан эп асăрхатăп:
Пĕчĕкрех те ансатрах пек халь

Ун стени те йышлă çутă кантăк...
Умĕнчи çеремĕ те сахал.

Ку чухне, çĕн куçпала пăхсассăн,
Шкул çуртне хуçи те тиркĕ, тен.
Анчах ма çаплах сывлатăп ассăн
Аякра чух çак ансат килтен?

Хăтлă хваттерте выртса тăрсан та,
Ма килет ялан ман тĕлĕке
Ватă шкул, крыльца-пусма та кантăк?..
Ма тăрса юлмаççĕ ĕлĕке?

Хăй ĕмĕрĕнче самай вăл курнă,
Яковлев пилленĕ ватă шкул.
Шăнăçать унта ман иртнĕ пурнăç,
Ман пуласлăх - çăмăл мар кун-çул.

1983.

ÇĔР

Пĕр шутласассăн, мĕн вăл Çĕр?
Тĕнчемĕр уçлăхĕнчи пăнчă.
Вĕçет тусан пек... Кун е çĕр...
Е сивĕ айккинче, е пăчă.

Вăл - вĕçсĕр-хĕрсĕр çывăхран,
Вăл инçетрен питех те пĕчĕк...
Ман чунăм çук çухаласран,-
Асту, эс асăрхан, Çĕр-мечĕк!

Эс - уçлăхра вĕçен карап.
Эс, сенкерскер, - питех илемлĕ.
Эпир - пассажирсем ара,
Эпир - ку вăл мĕн пур этемлĕх.

Галактика ытамĕнче
Сенкер-планета, тен, пĕччен эс?
Е пур-ши урăх тĕнчере?
Тен, пур... Ытти - йăлт тĕпсĕр тинĕс.

Мĕскер пĕлетпĕр ун çинчен?
Пĕлсессĕн те вĕçне çитеймĕн.
Епле пулсан та, Çĕр çинчех
Вĕçес пулать ялан этемĕн.

Пĕрре кăна килет кун-çул,
Ытти, чи нумаййи - тусан вăл.
Тумхахлă, йывăр умри çул,
Çухалас мар апла пулсан йăлт.

Пĕртен-пĕр Çĕр-карап хŭтлев,
Этемлĕх ун çинче пĕчченçĕ.
Ăс-хакăл хушнине итле,
Пĕртен-пĕрех хастар кĕсменçĕ!

Сикет пăшăрханса чĕре:
Ан пĕт эс сарăмсăр, Çĕр-паттăр!
Ан тив хитрен вĕçсе çŭре!
Телейлĕ çул сана! Вăй патăр!

Епле мăнаç йăлттам тĕнче!
Калать пек вĕрентсе чĕр Чăнлăх:
Çак çут тĕнче ытамĕнче
Эпир кашни, юлташ пек, танлă.

Эппин, пуласчĕ ăслăрах,
Пĕр-пĕринпе пуласчĕ тимлĕ,
Йăваштарах, чăтăмлăрах,-
Ун чух пире никам та тивмĕ.

1990.

Поэт куççулĕ

Константин Иванова

Çур çĕр иртнĕ тахçанах,
Тăр-пĕччен ларать поэт.
Пуçăннă япалана
Ун паян вĕçлес килет.

Лампа ывăннă çунса,
Хăрăмланнă кĕленчи.
Илнĕ чĕрине çулса
Силпири чăваш тĕнчи.

«Халь те пулин Силпире
Асăнаççĕ мĕскĕне,
Ялан, çумăр çумасан,
Шыв сапаççĕ тăприне».

Пулчĕ. Вĕçĕ. Утăрья!
Питĕ шел сана, Нарспи...
Сетнере те шел, ийя!
Мĕн тăвас? Çапла шăпи.

Пулаймарĕ упрасси
Сетнерпеле Нарспине.
Ку шăпа е курасси?..
Питĕ йывăр чĕрене.

Питĕ йывăр та кичем
Халлĕхе ман халăха...
Анчах пирĕн асапсем
Ан пултăрччĕç кăлăхах.

Кур: шывланчĕç куçĕсем,
Хăй çаплах ларать пĕччен.
Хут çинчи ыр геройсем,
Пичетре тĕл пуличчен!

Пурăнчĕ вĕсемпелен
Ирĕн-каçăн халиччен.
Сыв пуллаш, поэт, эрлен,
Йĕр эс, чуну каниччен!

1990.

Чăваш наци конгресне

Чăнлă çĕрĕ - чăваш çĕрĕ,
Пур «утрав» Чĕмпĕр енче.
Чăваш чунĕ унта чĕрĕ,
Хĕрӳ туйăм чĕринче.

Конгреса пиртен вăл ячĕ
Ыр сĕнӳ, хĕрӳ салам!
Йыш мана шанса кăларчĕ,
Халь ăна сире калам:

- Пул, Чăваш çĕр-шывĕ, сывă,
Хевтӳне хастар упра!
Янăратăр юрă-сăвă
Чăвашла. Ку - хăй тупра.

Чăвашла чăваш калаçтăр,
Çыртăр та, вулатăр та.

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Тӗрлӗ енлӗ чӑн-чӑн маҫтӑр
Ӳстӗр хамӑр патӑрта.

Чӑвашла вылятӑр-ултӑр,
Ирттӗр ун хуйхи-суйхи.
Ёмёр чӗрӗ, сывӑ пултӑр
Вут-чӗлхе - чӑваш чӗлхи!

Ун чухне чӗре кӑварӗ
Ёмёр ҫунӗ шӗл-кӑвар!
Хусанкай поэт каларӗш,
Эпӗр - пулнӑ, пур, пулар!

1992.

Хут мыскари

(Шӳт)

Хутсӑр ҫын - айван ӳпре,
Хут пур чух - ялан тӗпре.
Йӑнӑш ҫапӑнса кайсан?
Инкекӳ иккен ку сан.
Ҫакна кам тӳссе курман -
Ҫав ҫынна сӑмахӑм ман.

...Чӑвашкасси ялӗнче
Вӑтӑр иккӗмӗш ҫулта
Авӑн уйӑх варринче
Эп ҫуралнӑ пулнӑ та.

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Ҫын сахал-и ҫуралать?
Упранман хут ҫӳпҫере,
Ӑнсӑртран вӑл ҫухалать.

Ача чух мана питех
Хут тавраш кирлех пулман.
Хам анне каланипех
Ҫав куна эп пач манман.

Кайран, ят тухсан кӑна,
Пичет пуснӑ ӗҫлӗ хут
Кирлӗ пулчӗ ҫак мана,-
Асӑнман-ши миҫе хут!

Хут-пичетсĕр çын-и эс?
Нăйăлти шăна кăна!
Аннӳне те ĕненмест
Бюрократ, шанмасть хăвна.

Пар ăна çуралнă хут!
Пур саккун, йĕрки çапла.
Е пар справка, пĕрехху́т!
Çук пулсан - çыртар апла!..

Ыр та, кӳршĕсем манман,
Ĕнентерчĕç тиеке.
Справка хатĕр ĕнтĕ ман,
Пур пичет те - ан тирке!

Акă хут та кĕсьере.
Вăтăр çухрăма çуран
Çитрĕм загса, лере,-
Тупрăм шыраса аран.

Ман пекки кунта нумай,
Çерем çинче кăнтăрччен
Кĕтсе выртрăмăр - ай-ай! -
Кирлĕ хута иличчен.

Пĕр хут часах теприне,
Чи тĕплине çуратать.
Илмелле ман теприне -
Чун питех те ыратать.

Акă хатĕр!.. Пĕр майра
Çĕн хута парать алла.
Манран телейли, ара,
Урăх çук та пулмалла.

Алла тытрăм çав хута,
Тĕплĕн хутăм кĕсьене.
Куç пек упрăп, тупата,
Тек çухалмĕ ĕмĕрне.

Ытлашши савăннипе
Вулама та астуман.
Киле çитрĕм йĕркипе,-
Сывăччĕ анне те ман.

Тытса пăхрĕ те анне
Ман элес-мелес хута,
Курчĕ майра йăнăшне,-
Пăсса çырнă вăл унта.

Авăн уйăх вырăнне
Юпа уйăх вуланать.
Çакна курчĕ те анне,
Тĕрĕс маршăн кулянать.

Анчах халь тин мĕн тăвас?
Маншăн пулсан - пурĕ пĕр.
Хучĕ пур, ма кулянас?
Кĕçĕнрех кăшт çÿрĕпĕр.

Тĕрĕс мар ĕнтĕ пăртак,
Чăнлăх хаклăрах, паллах.
Вăтăр çухрăма татах
Уншăн ма танккамалла?

Мĕн вăл уйăх? Мĕн вăл кун?
Йышăн: пысăк мар инкек:
Менельникÿ пур, ан çун,
Пĕр ентеш шар курнă пек.

Вăл çуралнă нарăсăн...
«Вăтăр пĕрремĕшĕнче».
Çапла çырнă, курăсăн,
Çыннăн паспорчĕ çинче.

Çакă пысăк йăнăша
Тек никам та тÿрлетмен.
Кулнă çеç тытса ăша,
Хăйне пач та ĕненмен.

Менельник те тăвайман
Çав этем ĕмĕрĕнче.
Ун пек дата пач пулман
Тĕнче календарĕнче.

Хучĕ пур, пичечĕ пур -
Тата мĕн кирлĕ? Сăна!
Хăй калать пулсассăн - сур!
Тем те калĕ вăл сана!

Халь ентеш çӳрет çаплах
Тӗнчере çук кунпала.
Çавăн евӗр пăтăрмах
Пулса тухрӗ манпала.

Камит мар-и-ха - эй-ей! -
Ирӗксӗр пуçа хыçан.
Килсе çитрӗ юбилей:
Палăртас пулать хăçан?

Хама хам хуçа тесе
Эп шутланăччӗ ансат.
Хут тӗнчи кăнттам хӗсет,
Кивӗ йăлине тăсать.

Илтереймӗн эс ăна
Сăмахпала каласа.
Хутпала пичет кăна
Çаплах тӗрӗс те таса.

Юбилей тума тăхта,
Пулса тухрӗ мыскара.
Хут çӗнтерчӗ вăхăта,-
Вăл пичетлӗ-çке ара.

Ман сăмахăм тӗрӗсех,-
Анчах тек вăл кирлӗ мар.
Хутсăр эп - çаплах ӳпре,
Вăл пур чух - тӗпре тымар.

Сăмаха çил тустарать,
Тусанпа ăна витет.
Тӗнчене тытса тăрать
Хутпала çавра пичет.

1992.

Пӗрремӗш хӗл

Эп астăватăп Аслă вăрçăн
Пӗрремӗш шартлама хӗлне.
Тăшманшăн вăл пулмарӗ тарçă,
Тытмашкăн пӗлчӗ çак хăйне.

Чăн вырăс хӗлӗ... Тарăн юрлă,
Çап-çутă пăрлă çырмара

Эпир, ача-пăча, вут чунлă, -
Ир-каçăн ярăннă ара.

«Тенкел», çуна-и сĕтĕретĕн,
Коньки е йĕлтĕр урунта.
Шăнма та ывăнма пĕлместĕн,
Урам тесен - ăçта унта!

Юлашкинчен килсе кĕретĕн...
Çире-пуçра - шап-шурă юр.
- Ăçта яра куна çÿретĕн?..
Ÿпкев илтме сăлтав та пур.

Анне сăмахĕ хытă, çирĕп,
Çапах та ăшăтать чуна.
Çавăнпала туятăп ирĕк,
Апат çиес килет кăна.

Кăмакара какай шÿрпи те
Çук мар-ха çавă сивĕ хĕл.
Халь уйрăмах вăл тутă питĕ,
Ыраш çăкри те пур пĕр чĕл.

Ĕçрен пушаннă чух аннеçĕм
Çыру, хаçат илсе вулать.
Мĕнле унта, фронтра? Пĕр вĕçĕм
Пĕлес те пулăшас пулать.

Çыру çырать атте юлташĕ,
Мĕтрик тете сив окопран:
«Тăман хĕвет. Юр тарăн. Ашăм.
Тăшман иртеймĕ Мÿскавран.

Хыт аманса та юлтăм чĕрĕ,
Каллех фронта ăсантăм, сис.
Тавах! Çире - çăматă, кĕрĕк,
Алра та пирĕн тир алсиш.

Фриц, ĕнтĕркенĕскер, пĕркеннĕ
Шаль-тутăр... Улăм çăпата
Çыхса урисене чĕркенĕ...
Вилес килмест-çке, тупата...

Çапах, шăна пек, тăкăнаççĕ
Шăнса е вут пĕçернĕрен...

Тинех Анăçалла тараççĕ,
Тăрсан - ўкеççĕ çĕнĕрен.

Мĕн чухлĕ техника хăварчĕ
Хăй тарнă майăн кĕрт ăшне...
«Хĕл-генералăн» пур хăвачĕ,
Кăларчĕ вăл тăшман пăсне...»

Вуланăçемĕн анне пичĕ
Кулăпала йăлл! çуталать.
Кĕç çыруне вăл умне хучĕ,
Пире телейлĕн ыталать.

Шăллăмпала тăнлатпăр тимлĕн
Аннен кашни ăш сăмахне...
Сăмахĕсем, эмел пек, имлĕ.
Чĕнеççĕ, килнĕ ун патне...

Ун каймалла ĕçе - виçмешкĕн
Колхозăн шутлă тыррине...
Çынни çукран пухса кĕртмешкĕн,
Ĕçне хăварнă хĕллене.

Халь çавăнпа çапаççĕ авăн
Хĕлле те пирĕн ял-йышсем.
Мĕскер вăл хĕл сивви? Эс савăн -
Кунта ўкмеççĕ йĕтресем.

Тăван ялта пăшал сасси те
Пушар кĕрлевĕ илтĕнмест.
Вăрçăччěнхи хĕвеллĕ витĕм
Чĕресенче пач иксĕлмест.

Йăлт фронт валли вăл, ылтăн тырă,
Килте чухне этем чăтан.
Кăçаллăха тўссессĕн - пырĕ,
Тăшман чыхса ларать ыран.

Анчах та вăл çав çул чыхмарĕ,
Кайран та урчĕ-ха вăрах.
Ял хăй те ўлĕм выçă ларĕ, -
Çакна пĕлетĕр хăвăрах.

Пĕрремĕш вăрăм вăрçă хĕлĕ
Вăл пулчĕ хурлă та кичем...

Куç умĕнчех - сипетлĕ чĕлĕ,
Шăнса чирленĕ ыр аннем.

1994

Черет

Черет çинчен çырсаччĕ сăвă, -
Çитмерĕ кăларма черет.
Поэт та - çын. Çырать вăл йăвă,
Çапăнмасан чĕрре кĕрет.

Черетсене вăрах сăнарăм
Эп хамăн вăрăм ĕмĕрте.
Час-часах чирлĕ пулчĕ арăм, -
Çаплах чупаттăм черете.

Черечĕ мар-ха тĕлĕнтерчĕ,
Черет пулать те вăл - пĕтет.
Этем кăмăл-сипечĕн терчĕ
Черет пур чух ўкерĕнет.

Этем чунне ларсассĕн кирĕк
Сурать вăл ыттисем çине.
Çакна ĕнентĕм эпĕ çирĕп
Сăнанă май ун йышшине.

Шăп çавăн пек çынсем пĕтерчĕç
Чипер çĕкленнĕ пурнăçа.
Иртмерĕ, шала кайрĕ терчĕ,
Ял-йыш çухатрĕ канăça.

Ялта çеç мар, халь хулара та
Куратăп эпĕ çав чире.
Ана сирме ман çук хăватăм,
Çавăнпала сурать чĕре.

1994

Ыйткалакан

Çынсем çур ăшшине курасшăн
Хĕле ăсатнă самантран.
Касать çаплах çил кассăн-кассăн,
Перет юрпа питрен-куçран.

Кĕрлет-шавлать хула урамĕ,
Ирех вăл тулнă халăхпа.
Çăвар карса тăма юрамĕ, -
Утатăп эп те урампа.

Сасартăк куртăм: юрлă-пăрлă
Çатма пек çул çинче аран
Лара парать шур пир пек сăнлă,
Чипер пике-ыйткалакан.

Умне вăл сарнă хура тутăр,
Унта - пĕр-ик кĕмĕл укçа.
Тухса ларма сăлтавĕ пур-тăр,
Кам парĕ çын чунне уçса?

Пĕрре пăхсах куратăр эсĕр:
Хĕрарăм çĕклеймест пуçне.
Ларать вăл, хытнă евĕр, чĕмсĕр,
Йăлт путнă хăй хуйхи ăшне.

Эс кам пулатăн? Каласамччĕ!
Тăлăх-турат е сусăрскер?
Кун-çул тĕпне çапса хăварчĕ
Сана, Çĕр пикине, мĕскер?

Е ĕçсĕрлĕх? Е ĕçкĕ-çикĕ?
Синкерлĕ пурнăç тамаши?
Ыйтса пĕлесчĕ те ман... Çитĕ!
Пĕлнин усси пулайĕ-ши?

Ларать хĕрарăм... Пысăк куçĕ
Йăлтах ун тулнă хуйхăпа.
Çынсем иртеççĕ вĕçе-вĕçĕн, -
Çĕрте ларать пĕччен шăпа.

Ун куçĕ умĕнче кумаççĕ
Пин-пин çут атă та пушмак.
Хăйсем çеç иртнĕн туйăнаççĕ,
Хуçи, чăнах та, çук-и çак?

Курсассăн та - пулаççĕ курмăш, -
Кашни васкать хăй ĕçĕпе.
Хăçантанпа, тĕнче, эс урмăш,
Чуна касатăн çĕçĕпе?

Чăнах-и çак çынна çын - кашкăр?
Неушлĕ чунăмăр муртак?
Неушлĕ мĕскĕне - хуть кăшкăр! -
Май çук-ши пулăшма пăртак?

Килсе çапман-çке вăрçă терчĕ,
Тин пурăнаттăмăр чипер.
Мĕскер çĕр-шывăма пĕтерчĕ?
Халь кама, мĕншĕн ўпкелер?

Эп турăм утăм хыççăн утăм,
Куçран тинкертĕм мĕскĕне,
Тутри çине кăларса хутăм
Вĕр-çĕнĕ Ельцин укçине.

1994 çулхи пуш уйăхĕ.

ПОЭМĂСЕМ

Тăван ялта

I.

Çула çитсессĕн эп ăсантăм
Çуралнă ялăмран инçе.
Кайран ăçта çитсе тухсан та,
Вăл пулчĕ ман чĕлхе çинче.

Çеремлĕ, пылчăклă ял çулĕ
Паян каллех выртать умра.
Чир евĕр тунсăхран та пулĕ, -
Пулни-иртни йăлт асăмра.

Хум кастарать пуян тыр-пулă
Çеремĕн икĕ енĕпе.
Çĕр-шыв пўлми унпа кĕç тулĕ, -
Ял хавалне чухлатăп эп.

Лĕп çил питрен ачашшăн вĕрчĕ,
Хир вĕлле ҳурчĕ пек сĕрлет.
Пучаххинче миçе-ши пĕрчĕ? -
Шĕкĕлчесе пăхас килет.

Эп ентешсемшĕн хĕпĕртетĕп,
Пĕрчĕсене çил сăвăрать.
Этем чысне те, тивĕçне те
Мухтассăм килчĕ сăвăра.

Халь манăн - ял çынни темерĕн -
Ĕç çи тесен çиçет пит-куç.

Ума тухса тăраççĕ чĕррĕн
Лаша та жнейка... «майра пуç»...

Çарран утса туратпăр хăмăл
Эпир, маттур ача-пăча.
Тӳпе таран çĕкленнĕ кăмăл, -
Телей кӳрет кашни пучах.

Çав саманта мĕскер-ши çитĕ?
Ӳт-пӳ кăтăкланать кăна.
Выртса канма ыраш кĕлти те
Килти минтер пек туйăнать.

Паян тыр пуссинче кураймăн
Сурат та жнейка е лаша.
Кунта пĕччен хуçа - комбайн, -
Çилпе мăнаçлăн тавлашать.

2.

Эп çĕнĕ урампа пыратăп
(Унччен вăл çукчĕ, ку урам),
Ача-пăча чупать, куратăп...
Çук, чим! Аçта кайса хурам?

Унччен çара уран та шуххăн
Чупса çӳренĕ ачасем,
Паян иртсе пыраççĕ юхнăн,
Çыхса çӳреççĕ галстуксем.

Сухалĕсем çăра та шурă
Эп пĕлнĕ сумлă мучисен.
Паллах, вĕсемшĕн - урăх юрă -
Çакна пĕрре пăхсах сисен.

Çуран урапине утланнă,
Хăваласа çитет пĕри.
Ăна курса тахçан çул панă, -
Шăнкăравлать çаплах, юри.

- Юман-çке пулчĕ ку? Сторовă!
Нумай пулатчĕ курманни.
- Çапла, ку - эпĕ, ырă-сывă...
Салам, Чăвашкасси çынни!

Ăна такам та вăтăр парĕ, -
Çынни хăй хĕрĕх ик çулта.

Ку чух парткомăн секретарĕ
Пулса ĕçлет тăван ялта.

Ял хыпарне ыйтса пĕлетĕп,
Ентеш пĕлесшĕн ман хала.
Кĕç ыррине те, усалне те
Парать мана кала-кала.

- Атя, Юман, кĕрсе курсамăр, -
Чĕнет çакскер йĕтем çине.
Каласнă май тăнлатпăр хамăр
Хĕрсен илемлĕ сассине.

Çаплах юрлать хавасла ушкăн...
Касать хамра хевте çукки.
Çухаласран çырса хумашкăн
Кирлехчĕ çав Филипп Лукин.

Кунта талант çук мар, атьсемĕр, -
Кайран эп килĕп-ха ятне.
Ертсе пырать мана Питтимĕр
Капмар автовиçе патне.

Шоферĕсем кумаççĕ йышлăн,
Пĕри - каять, килет тепри, -
Пăтшалăха ăсантăр чыслăн
Тыр-пул - Тăван çĕр-шыв тупри.

Хуçи виçет, çырать квитанци, -
Ун ĕçĕ çăмăл-и элле?
Мĕн чул ĕнер, паян ăсанчĕ -
Шутламалла та пĕлмелле.

Чăрмантарса çеç тăраканĕ,
Тата çакна куратăп эп:
Такам çак куккурус лăсканă
Танлаштармашкăн икĕ тĕп.

Лутрин туни черченкĕ питĕ,
Çулçи те выç ыраш тĕслех.
Тепринчĕн тăвăр çурт маччи те,
Тĕшши те йышлă - тĕрĕсле.

Борисов Митрофан Иванччă -
Хайхи тĕш-тырă виçекен

Куçне чеен хěссе юптарчě,
Пěлтерчě уçăмлăн, кěскен:

- Колхоз шохвěрěсем çул майăн
Хурса килсеччěç кăтартма.
Вăрман пекки вăл - Ярамайăн,
Леш - пирěн, сначчăт, хунайман...

Эп тусăма куçран пăхатăп:
Мěнех халь калăн? Хурав пар!
- Çапла çав, иртнě пленумра та
Çамка çине тухсаччě тар.

Хěллех чěнтерчěç те хěстерчěç, -
Сисетěп: планě ытлашши.
Вара хайхи пуçланчě терчě -
Хěрў кампани тамаши.

Чěне-чěне кěртме пуçларěç
Пěр хутчен мар-ха тип мунча.
Илетчěç вăхăта... Çак мар-и
Инкекě ку чухне, ачам.

Çур акинче кăштах мухтарěç
Планран та ирттерсе аксан.
Кайран пире вутпа çунтар эс -
Пусса сырса илет мăян.

Машшин та, ěç алли те хěсěк,
Ăсталăх та çитмест-и, тен.
Ăлна усса тăратăн эсě -
Ăçтан-ха ыррине кěтен?

Куккуруса, тўрех калас-тăк,
Тиркес те хур тăвас килмест.
Ăна кăшт сахалрах акас та,
Тухăçлăрах туса илес.

Гектарě мар, хăлаç та, шит те
Сая ан кайтăр лайăх çěр.
Ун чух какай та, сěт те çитě -
Шăп кирлě чухлě илěпěр!..

Пит тимлесе тăнлатăп эпě
Аптранă аслă тусăма.

Пулать-ха кун пекки, пĕлетĕп,
Килĕштеретĕп: чăн сăмах!

Пĕр тип çынна асли калана -
Илет вăл санăн тинкӳне.
Шăп ухмаха патак тыттарнăн
Пулса тухать пĕр ирхине.

Инструкци пур - тăнла, тархасшăн,
Инструкци уншăн - тĕп саккун.
Пĕр турапа кăна турасшăн
Шап-шур алли кĕçтет-çке ун.

Аван пулсан татах та лайăх,
Хитрелетсе ăна кăтарт.
Тыр шăтмасан та çук ун айăп,
Хăвнах хăртса сиктерĕ шарт!

Тĕл пулнă пĕрреччен, пĕлетĕп...
Пуçларăм та, калас, эппин.
Хастар хаçат çынниччĕ эпĕ,
Чун хӳтлевçи тыр-пул ăстин.

Тӳпе ялан тăратчĕ ăмăр, -
Хĕвел пăхать пек ирхине,
Тухать те татăк пĕлĕт... Çумăр
Каллех тăкать ана çине.

Паккуссенче шăтать тыр-пулă,
Çĕрет тата пăртак вырт сан.
Тырра çăлма пулать те пулĕ
Тӳрех вырса-çапса пухсан.

Апла тума хушмасть «инструкци»,
Çĕрсен те тырă - йăвантар.
Калатăп-çке, кĕтме те çукчĕ
Капла пулсассăн пархатар.

Пĕр хутчен мар килсе çӳрерĕ
Асли, пĕрремĕш секретарь.
Колхозсенчи ĕçе тиркерĕ,
Пуçлăхсене кăтартрĕ шар.

Çав мăн кукка тустарчĕ хытă
Ун чух пĕр председателе.

- Апла-и-ха, тет, эсё, йытă!..
Вăл хăртрĕ пурте илтмелле.

Леш тунă-мĕн «чи пысăк айăп»,
Пĕтме паман паха мула:
Хире кăларнă та комбайн,
Тӳрех пухтарнă тыр-пула.

Çав çул тыр-пул чылаях çĕрчĕ...
Кам пулнă айăпли? Аюк!
Тырра «кукка» килсе пĕтерчĕ,
Кайран - шăрши-марши те çук.

Халь тин кутран тапсах кăларнă
- Таси паха! - çав пуçлăха.
Унта урăххине кĕç лартнă,
Çĕнни сăпайлă, ăслă-ха.

Аса илетĕп те хушатăп
Тусла кăна Питтимĕре:
- Пуçна усман пулсан вутра та,
Ĕçре çĕнтер пур чир-чĕре.

3.

Çĕткенлĕ çĕр эмелĕ - çумăр
Ӳстерчĕ вĕç-хĕррисĕр мул.
Эхлеткелет çĕр - çын, ан çывăр! -
Тен, çуратмашкăн йывăр пуль.

Çуратасси пулатчĕ çăмăл
Хĕвел сапса тăрсан кăвар.
Шăранмалла кăначчĕ кăмăл -
Анчах та халĕ апла мар.

Нумай çисессĕн пыл та йӳçĕ,
Эмел те кирлĕ чух кăна.
Эрнесерен ăçтан-ха тӳсĕн-
Кăларĕ çумăр та тăна.

- Тек кирлĕ марччĕ. Çунă - ырă.
Халличченхишĕн - пысăк тав!
Этем туртса кăларнă турăн
Хăлхи мăкалнă, теççĕ çав.

«Тăхта!» тесе тархасласассăн
«Тата!» тесе иккен илтет, -

Килет те çумăр кассăн-кассăн,
Хлимун тете манпа шӳтлет.

Тăпра тахçан шывран тăраннă,
Çапах сыпма хистет пĕр май
Чыса та, намăса та маннă
Хайхи-майхи Илле папай.

Хуралт тавра кашлаççĕ майсăр
Хурхух та талпиçен, мăян.
Çулсем хушши выртса шăтмасăр -
Хурах пек ашкăрнă паян.

...Ёçчен хĕр евĕр çил çĕкленчĕ,
Тирпейлĕн шăлчĕ-шăлчĕ те,
Çӳп-çапă шăтăкне вăл печĕ
Кипке пек нӳрлĕ пĕлĕте.

Тӳпе вара çиçсе ялтрарĕ
Шăпах вĕр-çĕнĕ тĕкĕр пек.
Çĕре çилпе хĕвел кăварĕ
Кушăхтараççĕ ерипен.

Хлимун чĕри те хĕпĕртерĕ, -
Тинех майлашăнать-çке кун.
- Юмах ярса çитет пуль, - терĕ,
Хавасланса тăрса Хлимун.

Çава тытса тухать алхапăл,
Çулма, тет, каймалла пăрçа.
Хăвах куратăн: ĕç пулмасть вăл
Уяр куна кĕтсе тăрса.

Эс пăрçине пырса курсанччĕ, -
Шите çитет хутаçĕ ун...
Сыв пуллашса хире ăсанчĕ
Яш каччĕ пек хастар Хлимун.

Машшинсемпе, çуран та тухрĕç
Ёçчен ял çыннисем хире.
Юрра кĕртмешкĕн кăмăл пур-иç,
Мухтавлă ентешсем, сире!

Каллех ахаль ларать кахаллăн
Тесе çынсем каламĕç-ши?

Поэзи хирёнче кал-каллăн
Пуçланчĕ маншăн та ĕç çи.

Çĕнĕ Улхаш ялĕ,
1962 çулхи август - ноябрь уйăхĕсем.

4.

Застой тымар ярса вăй илнĕ
Инкек-синкеклĕ вăхăтра
Тăван яла çапла эп пĕлнĕ,
Пăлханнă унпăн аякра.

Сайра-хутра пырса тухсассăн
Çеремлĕ, хăтлă урамне,
Пĕр хутчен мар сывланă ассăн, -
Асрах-çке аттепе анне.

Ачалăхри туссем тухаççĕ,
Ытти тĕссемпеле сăнсем -
Хуралт тавраш е кивĕ лаçă,
Сап-сар çамкаллă çырансем...

Пăхатăн та паян чиперрĕн
Çĕн куçпала тăван яла,
Куратăн ăрусен кĕперĕ, -
Ват çын йăли, чипер йăла.

Тăван кĕтес, эс ўснĕ вырăн,
Тăвăрланман-ши халь урам?
Кунта эс çĕннине те курăн,
Хускалĕ пĕр-пĕр чĕр суран.

Кермен пек çурт та хăтлă пăлтăр
Курсассăн чунăм хĕпĕртет.
Тепри ларать-мĕн хăлтăр-хăлтăр,
Ыйтатăн - çурчĕ пушă, тет.

Ун хупă кантăкĕ те... Уçă
Хапхи çеç... Шăтнă вĕлтĕрен...
Пăхса тăратăп. Пуçăм усăк, -
Çитмен-çке пурнăçри тĕрен.

Яш-кĕрĕм тымар янă паттăр,
Ватти - ăсаннă масара.
Çулсем иртсессĕн тин куратпăр
Унччен курманнине ара.

Ун чух курсассăн та, туйман-тăр,
Хакла пĕлмен, тен, пуррине.
Кая юлсассăн ăнланатпăр -
Çухатнă пач е çуррине.

Каллех ак çĕкленсе утатăп
Паллана, пĕлнĕ урампа.
Чĕре хумханнине туятăп-
Çарран чупаймăн ... Çавăнпа.

Пĕри, тепри пулать те хирĕç, -
Чун-чĕререн калаçнăран,
Халь маншăн ĕнерхи йăлт чĕрĕ,
Çарран ачалăхăм таран.

Пире пурне те вăхăт çилĕ
Касать питрен, ал - ураран.
Мĕскер кивелнĕ те мĕн юлĕ
Ансат та хаклă урамран?

Ялан çап-çамрăк питлĕ-куçлă
Çӳренĕ ветеран паян
Сăпайлăн уртнă çутă куçлăх,
Чун мулĕпе çаплах пуян.

Ара, ку çавă, председатель,*)
Питтемĕр, манăн аслă тус.
Ун чух вăл колхозра хуçаччĕ,
Услам туса ларман пĕр пус.

Салтак вăл пулнă, çĕнтерӳçĕ,
Вăл çур Европăна çуран
Утса-çке тухнă... Халĕ çӳçĕ
Шуралнă, пичĕ те хуран

Хĕвелпеле ялтрать. Кулли те
Тем сӳннĕ евĕр туйăнать.
Çапах шалта юлайнă витĕм.
- Аван-и, - тет вăл, - камарад!

---

*) Поэмăн малтанхи сыпăкĕсенче Питтимĕре партком секретарĕ, тенĕ. Кунта пăсса кăтартни çук. Манăн прототип унта та, кунта та ĕçленĕ, бригадир та, платник те пулнă. (Автор асăрхаттарни).

Çак сăмаха илсе вăл килнĕ
Салтак миххипеле килне.
Трофей-сăмахпалах ят илнĕ,
Ят килнĕ малтанхи тĕлне.

Салтакăн ку - пĕртен-пĕр мулĕ,
Чăн псевдоним теме пулать.
Илсе çитернĕ вăрçă çулĕ
Ăна хĕвеллĕ ир яла.

Çапла кăна ку чух чĕнеççĕ
Ман пĕлĕше тăван ялта.
Шур шăлĕсем çеç йăлл! илеççĕ
Ват çыннăн. Ун хуйхи - шалта.

Пĕлетĕп, килсе тăнă урлă
Шăпа ăна пĕр хутчен мар.
Инкек çине синкек, кĕç курнă
Пĕртен-пĕр ывăлĕ тип-шар.

Кайран чире кайса ăсаннă
Юратнă хĕрĕ çăвана.
Вĕри чĕре татах аманнă,
Шуратнă хуйхă нар сăна...

Ял çулĕ çÿллĕ те тап-такăр,
Çатма пек çутă, сарлака.
Ĕçетпĕр сĕт, çиетпĕр çăкăр,
Ял-йыш çи-пуçĕ те яка.

Инçе ялта та халăх влаçĕн
Паха йăли-йĕрки пуртан,
Çатма-çулпа килсех тăраççĕ
Ыр тăвансем Шупашкартан.

Çурхи хĕвеллĕ, янкăс кунччĕ,
Хăна-вĕрле питех нумай...
Хура лимузинли кам пулчĕ?
Ентешĕм ас тăвать - Ухсай!

Çавăнтанпа артист, çыравçă
Çуллен килет тăван яла.
Телейлĕ яшăн чунĕ уçă,
Вăл кашнине сăнран паллать.

Хăй Иван Яковлев уçтарнă
Питех те ватă, ăслă шкул
Çапла паха ĕçе пуçарнă, -
Çакна такам та пĕлнĕ пул!

Паян та вăл ларать чиперрĕн,
Ват шкул вĕр-çĕнĕ те маттур.
Паян вăл - ăрусен кĕперĕ,
Унра чăвашлăх вучĕ пур.

Çав кăвара сӳнме памасăр
Упранă çын чи йывăр чух.
Ăна иртместĕр пуç таймасăр,
Вăл - Бикмендеева Мерчук.

Ял шкулĕ - ĕмĕрхи чĕр палăк
Ларать ыр-сывă çĕр çинче.
Килес кунра та асăнмалăх
Вăл калĕ хăй пĕлни çинчен.

Ырьятлă просветитель чунĕ
Тивлетпеле телей çинчен
Аса илмешкĕн Унăн Кунĕ
Пухать хăна мĕн пур енчен.

Эппин, ун ĕçĕ ырă-сывă,
Вăл ман ял-йышăм асĕнче.
Шăрантăр ун çинчен ман сăвă,
Итлетĕр çак сасса тĕнче!

Анчах тĕнчен çук мар амакĕ...
Хуранти пек пăлханнăран,
Таппи çитет кунта та акă, -
Мĕскер кĕтет яла ыран?

«Департизаци», «дикий рынок»,
«Привитизаци» сăмахсем
Пĕр май шыраççĕ шăтăк-çурăк,
Чĕлхе çинче ку чух вĕсем.

Пуç миминче пуш-пушă вырăн
Пулсан тулать унта çӳп-çап.
- Пурнаттăмăр татуллă, ырă, -
Çĕн председатель калаçать. -

Клуб уçрăмăр, чиркӳ-мĕн кирлĕ
Халь тепĕрне, вăл йӳтетет.
Пурнаттăмăр питех те мирлĕ,
Тавай халь «суверенитет»...

Ик кӳршĕ ял пĕрле юп курнă,
Пĕрле пайланă хуйхине.
Такам халь туслăх çине сурнă, -
Пар уйрăм пурнăç хайхине!

Хуçалăха икке пайласшăн
Ăшталанать çакскер, пĕлен.
Çапла «ĕçлет» вăл ирĕн-каçăн
Аллипе мар, чĕлхипелен.

Тиркемелли çук марччĕ пирĕн,
Çакна культ тĕпĕнчен шутла.
Ҫылайăш пĕлнĕ эпĕр. Ҫирĕ
Шала вăл кайнăччĕ, çапла.

Анчах, ас ту, сурмашкăн çылăх
Çăл куçпала аваллăха.
Пĕртен-пĕр тӳсĕмлĕхпе çынлăх
Халь сиплĕ чирлĕ халăха.

Ҫăвашкасси чăвашĕ пулнă
Авал та çирĕп атеист.
Çапла тĕне кĕмесĕр юлнă, -
Яш çын, тăхăмунтан ан пис!

Ĕненессе ĕнен те... Темĕн,
Çăлайĕ-ши тĕн инкекрен?
Хăйне шанас пулать этемĕн, -
Ĕçе çĕклен эс çĕнĕрен!

Малашлăха ĕнен те çирĕп,
Куллен эс ăнтăл малалла.
Таса ӳтне ан лартăр кирĕк,
Пĕр ĕç тытсассăн ик алла.

Килес ăру çынни! Ентешĕм!
Сана мĕнле сăмах калас?
Пуласлăхшăн хастар кĕрешĕн, -
Çакна туять шалти пĕр сас.

Эппин, санра паян ман шанчăк,
Санрах çап-çутă пуласси.
Çак ĕмĕтпех лартатăп пăнчă.
Сыв пул, тăван Чăвашкасси!

1991 çул, август уйăхĕн 6 - 7-мĕшĕсем.
Аслă Нагаткин ялĕ.

Йывăç велосипед

1.

Пĕрре «Огонекра» вуларăм,
Тем те пĕр страницинче...
Ну, шутлăр-ха, кăсăк мар-и,
Пулать те иккен çĕр çинче:

Ăста украинец хайланă
Çăп-çăмăл велосипед.
Унпа вăл яланах çул кайнă -
Пĕр тимĕр таврашĕ çук тет.

Рами те, урапи те йывăç,
Çаплах спицисем йывăçран.
«Пули те пулми ан çыпăç!
Вăт çын!» - тĕлĕнетĕп унран.

Хам çийĕнчех ас илетĕп, -
Пĕлетĕп унашкал çынна.
Ентешĕм, Илпек Имечĕ...
Çапла çав, ку пулнă чăнах.

2.

Ăна эп астунă лайăх,
Мана вăл, тен, пĕлнĕ начар.
Эпир-çке пулнă нумайăн -
Латтисĕр ача-пăча.

Умрах çав тĕреклĕ, çуллĕ,
Яланах хастар этем.
Ĕçре пиçнĕрен-и пулĕ, -
Тасаччĕ Имет тете.*)

Чăн-чăн пăхаттир пек пулин те,
Нихçан мухтанман вăйпа.
Ĕçченччĕ, сăпайччĕ вăл питĕ, -
Çук, кичем марччĕ унпа.

---

*) Кунта вăйлăччĕ, тесе ăнланмалла.

Тӳп-тӳррӗн çиçсе пăхаççĕ
Тарăн та çивĕч куçсем.
Пичĕ тăрăх йĕрсем чупаççĕ
Хуçи кăшт кулса илсен.

Çырмашкăн эп маннă, чимĕр,
Астаччĕ Имет тете.
Хĕрет, лăпчăнать пиçĕ тимĕр -
Тукун е сӳре пулчĕ те!

Вăл та хайланăччĕ пирĕн
Çуран урапа... йывăçран.
Унпа эс чиперех çӳрĕн, -
Тăрать вăл çаплах ман асра.

Иметĕн ачи пур - ывăл, -
Чĕнет ашшĕ ăшшăн: «Мишша».
- Мĕнех, ывăл, лар та - савăн!..
Эпир чупса пиçнĕ ăшша.

Чупатпăр çаплах Мишша хыççăн,
Пит селĕм пырать вăл, маттур!
Эпир кăшкăрататпăр уççăн, -
Çапах та кашнин ĕмĕт пур.

Çуран урапа пӳрмесен те,
Сӳнмест вăл вĕри кăкăрта.
Унпа çӳреме пĕлмесен те,
Курсан та телейлĕ пăртак.

* * *

... Машинсен пульници пек халĕ
Тăп-тăпăл çеç тимĕрç лаççи.
Çур умĕн «пациент» сахал-и -
Янрать кăна тимĕр сасси.

Ташлать мăлатук, чун илнĕн,
Хĕлхем сирпĕтет сунтал.
Плутсем юсанмашкăн килнĕ,
Сӳре шăл лартать кунта.

Хĕрӳ ĕç вĕçленнĕ хыççăн
Имет васкамасть-ха килне.
Çаплах чухлаймарĕ уççăн
Юлташĕ Мультук. Вăл чĕнет:

- Мĕскер тамаши тăватăн?
Ĕç пĕтрĕ - каяр атя.
Хăçан эс, Имет, канатăн?
Санпа аптрамалла, тупата!

- Тăхта-ха, Мультук, лăпланччĕ.
Мĕнне кайран ху куран...
Хăй ывăннине те манчĕ,
Шаккать те тем илсе хурать.

Ирпе ĕçе пычĕ те лешĕ -
Имет тек шаккать, асра çук.
- Хăçан эс канан, мур илеспĕ? -
Йăвашшăн вăрçать Мультук.-

Мĕскер çак хайлатăн каç-ирĕн?
Е лещ, кĕнчеле урапи?
Тимĕр - шăпа вăл пирĕн,
Сунтал умĕнчи çын шăпи...

Ăста аллинче ма йывăç?
Ма эрешлет вăл патака?
Хăй ĕçĕнче - чăн сăвăç,
Сăвăç çунатлă та-ха...

Татса калама кам пултарĕ -
Мĕскер ун шалта, чунĕнче?
Ăста çын асамçă мар-и,
Ун чунĕ те - тĕпсĕр тĕнче.

Текех тусĕнчен пытармарĕ,
Тинех халь калать Имет:
- Мишутка савăнмалăх
Тăватăп велосипед...

- Ну, эс пултаран та, тусăм,
Ну, санăн, патька, пуç ĕçлет.
Вĕреннĕ пулсассăн пĕр хушă
Конструктор та пулăттăн, шет...

...Каç кӳлĕм ватти та, вĕтти те
Çапать тĕлĕнсе пĕççине:
- Çуран урапа!
- Кăсăк питĕ!
- Пăхасчĕ ларса ун çине.

- Йăлтах йывăçран-çке тунă,
Курсамăр: педалĕ, рами...
- Имет ӳркенмен, вăй хунă,
Алли ун ăста, шăл çемми...

Çук мар, тупăнать тиркекенĕ...
Тепри шăл йĕрме те манман,
Ăна çак кĕскен çеç йĕпленĕ:
- Çаплах ача ăсĕ кайман...

3

Эп фронт мĕнлине пĕлместĕп, -
Пулман вăрçăра эпир.
Ман тантăшăм! Эс те, эп те
Ача-çке пулса çав ир.

Анчах та ăçтан манайăн
Килне таврăнман салтака?
Çынсем! Ан тусамăрччĕ айăп! -
Фронтра эп пулман та-ха...

Çапах та çырмашкăн тивĕç
Çав паттăр çынсем çинчен.
Ăс-тăншăн пултăр-и çимĕç
Илтни те пĕлни çынсенчен.

* * *

...Ун чух пит хĕрӳ çав килнĕ
Кашни салтака, чăнах.
Çĕр-шыв чĕрине тĕлленĕ
Тăрлавсăр чĕнмен хăна.

«Неушлĕ фашизм пухнă
Никам çĕнтерейми хăват?»
Çынсем салхуллăн пăхнă,
Хăварнăскерсем йăва.

Шинеллĕ этем, мĕн калăн?
Чуна тăрмалать сăмах.
Пăшал чăмăртать çеç алă,
Ыйтать çын фронта яма.

* * *

Шурă хитре çуртсемлĕ
Велиж - авалхи хула.

Анчах та халь ун илемĕ
Çухалнă вăрçа пула.

Кермен-и пулнă е çурт-и?
Пĕлеймĕн - ан та тавлаш!
Тĕпреннĕ кирпĕч те шур тăм,
Си ларнă хăрăм тавраш.

Хулан урамне мĕн каснă
Тулли юхан шыв икке:
Кунта - хамăр çар вырнаçнă,
Лере - нимĕçсен иккен.

... Имет пĕччен мар-ха. Ентешĕ
Татах ушкăнра ун пур.
Ку вăл - Илентей Эптюшĕ,
Ĕçне тăвать тĕплĕ, сатур.

Малти линие вут айĕн
Апат турттарать тылран.
Курма Имете, çула майăн,
Кĕрет тепĕр чух ăнсăртран.

Кӳршĕ Çĕньял чăвашĕ
Пур юнашар ротăра.
Вăл - Элеççук. Йăваш çын.
Хăюллă - атакăра.

4.

Аннеçĕм - ялти учитель,
Вăл «Правда» хаçат илет.
Фронтри ĕç-пуç йывăр-çке питĕ, -
Анне çак йăлтах пĕлет.

Салтак арăмĕсем килеççĕ
Унпа калаçса ларма.
Сăмах сыпăнать вĕçе-вĕçĕн, -
Кирлех вăл ăша пусарма.

Пĕрин - хыпар çукран ăшĕ хыпнă,
Тепри - хут пĕлмест аппару.
Виç кĕтеслĕ канвертне вăл тытнă:
- Вула, Çăхванишнă, *) çыру...

---

*) Аннене ялти хут пĕлмен çынсем çапла чĕнетчĕç. Ку вăл "Степанида Ильинична" тесе хисеплени пулать. (Автор асăрхаттарни).

Вулать те анне - çиçеççё
Салтак арăмён куçёсем.
Çур сăмахранах пёлеççё
Йёрке тупсăмне вёсем.

Пёлеççё: тухмахлă çулё,
Салтак пач йăпатса çырать.
Халь сывă... Тен, сывă юлё, -
Шанчăк ăшра çуралать.

Пёр ир Аннук аппа та пычё...
Тăсса тыттарать çыруне.
Çуталнă ун тунсăхлă пичё,
Тенкел анне сёнчё умне.

"... Хаяр çапăçусем кёрлеççё.
Арканчё «Максим» пулемет.
Хам сывă... Хăçан пулё вёçё?
Пёлмест вăна Турă та, шет.

Анчах эп аптрамастăп... Юрё...
Хайларăм виççёрен пёрре...
Ан хуйхăрăр... Ыр-сывă, чёрё...
Ыран - çапăçăва кёреп.

Аннукăм, сăмахăм çакă:
Асту çеç, ачасене упра...
Çитет-и, çитмест-и çăкăр?
Çыру пач илмен ку хутра...»

Вулать те анне - шывланаççё
Аннукăн черкке-куçёсем...
Ку чух та асран тухаймаççё
Тахçан иртсе кайнă сăнсем.

V.

Тўпе çётёк пёлётлё. Ăмăр.
Вёрет кăра çил кас-кас.
Тăшман пырса çапнă чăмăр*)
Çуратнă чакмашкăн приказ.

Каллех чакмалла... Мён тăвăн?
Приказ вăл салтакшăн - саккун.

---

*) Чăмăр - чышкă тени пулать (вырăнти сăмах).

Шавлать ăшĕнче çил-тăвăл
Çакна илтсе пĕлнĕ кун.

...Чиркӳ тăрринче ун «вучĕ»,
Чиркӳ тăрринче - арьергард.
Патрон лентисене кĕç хучĕ
Имет юнашар вăрт-варт!

Такам çывхарчĕ акă...
Пăхать те Имет хыçа -
Ентеш Элеççук.
- Чакăр! -
Хушать çеç Имет чăн хуçан.

Ăна хăй чĕри çеç хушнă
Çара хӳтĕлесе юлма.
Çапла ентешсем сыв пуллашнă,
Тек пĕр-пĕрне курман.

VI.

Фашист вăл пуçтах-çке питĕ,
Ну, калăн кĕрхи шăна.
Пĕтет, касăлать пулин те,
Çапах та хăй тăрăнать.

Чула та ватать-çке тимĕр,
Çĕре те силлет йĕтре.
Анчах та çын сывă, атьсемĕр,
Хăй вилĕме тĕтĕрет.

Миçемĕш атака сирчĕ?
Имет халь ăна суман.
Тăшманăн, пăван пек, вирчĕ
Ăна пĕр суран туман.

Çамки ун таçта хăрăмланнă,
Капланнă, пăрçа пек, тар.
Ăна та, кăна та вăл маннă,
Шăлмашкăн халь вăхăт мар.

«Максим» тăшмана хиретчĕ,-
Тăхта-ха, мĕн пулчĕ, чим?..
Ленте!.. Юлашки-çке юлчĕ...
Юта чараймастпăр-шим?

Тинкерчĕ Имет ун-кунăн,
Юхать çамки тăрăх тар.
Халь мĕн тумалла-ха унăн?
«Пĕтетĕн... Хăвăна хăтар...»

Ку шухăш унран çухалтăр.
Салтак вăл - пĕччен те салтак.
Вăл, пĕччен марччĕ, туятăр,
Юлташĕ вилсе выртрĕ ак.

Çурта пек çÿллĕ те йăрăс,
Сухалĕ шăтман иçмасса.
Ырă, хăюллă вырăс...
Кам пĕлнĕ капла пуласса?

Каларĕ çеç шăппăн: «Тавăр!..»
Имет ыталаса илсен.
Иметĕн чунне халь тăвăр,
Çапах та сыв чух тÿсен.

...Хĕлхем пĕрĕхме пăрахнă
Самант вăл «немуйшăн» - рай.
Куратăн: пуçне тăратнă,
Васкавлăн чупать пĕрмай.

«Суятăр, ан васкăр, чимĕр,
Таптаймăр тек пирĕн çĕре!
Тусăм, "Максимка", нимĕр
Тапаçланакан ирсĕре!»

Самант!.. Кĕç каллех ак тăсрĕ
Вут-хĕм чĕлхине «Максим».
Ăçтан-ха, чăнах, вăй тупрĕ
Чăлăм куç хупман çак çын?

Мунча чулĕ мар шартлатрĕ
Çĕре кисрентерсе илсе,-
Сулмаклă йĕтре-мĕн ватрĕ
Чиркÿ тăррине, тилçе!

«Ан тив урнă йытă астăр,-
Вăл вилĕм кунта тупать.
Пĕр утăм каялла чакмастăп»,-
Имет халь тăвать тупа.

Умра - шутласа çитерĕр -
Миçе-ши выртать виле?
Шăртланнă фашист эшкерĕ
Татах хăпăнса килет.

Пусать гашеткăна çиллĕн...
Миçемĕш-ши ку черет?
Аннемĕр - çĕр-шывăмăр пилĕ
Каллех чĕрене кĕрет:

«Ялав çĕнтерӳллĕн çакĕç
Туссем ют Берлин çине...»
...Çĕр-шывăн ахаль салтакĕ
Вилсе вилĕме çĕнет.

VII.

Каллех эп урампа утатăп,
Ачалăхăм иртнĕ ялта.
Сасартăк тĕл пултăр пĕр ватă -
Каять калаçса халтан.

- Яла курас килчĕ тетĕн?
Аван. Эппин, пурăн пăртак.
Çуралнă кăтес вăл, пĕлетĕн,
Сана та, мана та туртать.

Килеççĕ аса, утнă майăн,
Йывăç велосипед таран.
Хăшне эп пĕлетĕп те лайăх -
Хăшне астăватăп аран.

Иметĕн Мишши те шуралнă -
Иметĕн мăнукĕ нумай.
Мишша кĕçĕнне илсе панă
Çуран урапа, савăнма.

Куратăп: кашни ачарах та
Вĕр-çĕнĕ çуран урапа.
Ҫаль пурнăçĕ урăх, чухлатăн -
Ăна хайламан алăпа.

Лавккан хитререх те - мĕн çитĕ!
Эх, йывăç велосипед!
Санран лайăххи те , хакли те
Çавах урăх пĕртте çук пек.

Чăвашкасси - Аслă Нагаткин,
1958-67-73-93çç.

УЛТАВ

Умён калани

Çĕр-шывра уйрăм çынна пысăка хунă вăхăтра ку е вăл событие идеологие май пăсса кăтартасси тарăн тымар янă пулнă. Çакна хăнăхса çитнĕ «куçпăвансем» ку меслетпе «кирлĕ» е «кирлĕ мар чух» та усă курнă. Перестройка тĕллевĕсенчен пĕри çак чиртен хăтăласси те пулнă. Шел, вăл çĕр-шыври халăхсен шанăçне тӳрре кăлараймарĕ. Çапах та, ултав кирек епле чеен тĕпленсен те тăрă шыв çине тухатех.

Нумаях пулмасть эпĕ «Семья» хаçатра 90 çулхи совет художникĕн Николай Александрович Соколовăн аса илĕвне вуларăм. «Семерка - цифра счастья» ятлă вăл. Н. А. Соколов - «Кукрыниксы» псевдонимпаĕçленĕ виçĕ паллă совет карикатурисчĕсенчен пĕри.

Вăрçă çулĕсенче «Правда» хаçатăн кашни номерĕнче тенĕ пекех çав талантлă ушкăн ӳкернĕ политикăлла çивĕч карикатурăсем çапăнса пыратчĕç. Ахальтен мар «Мускава тытса илсен» Гитлер чи малтан çакса вĕлерме картса хунă искусство ĕçченĕсем шутланнă вĕсем. Кукрыниксы художниксем тĕрлĕ жанрпа ĕçленĕ. Хăйĕн аса илĕвĕнче Н. А. Соколов «Таня» картинăна епле ӳкерни çинчен каласа кăтартать.

41-мĕш çулхи декабрьте «Правда» хаçатра Таня ятлă хĕр-партизанка паттăрлăхĕ çинчен очерк çапăнса тухать. 42-мĕш çул пуçламăшĕнче Кукрыниксы художниксем Петрищево ялне пырса çитнĕ, трагеди епле пулса иртнине курнă ял çыннисемпе тĕл пулса каласнă, пулас картина валли этюдсем йышлă ӳкернĕ. Çулсем иртнĕ хыççăн çакă палăрать: фашистсем асаплантарса вĕлернĕ хĕр-партизанка Зоя Космодемьянская пулман. Унăн чăн амăшĕ трагеди хыççăнах яла пырса кайнă-мĕн. Ана хĕр ӳтне тӳрех кăтартман, малтан тĕрĕсленĕ. Амăшĕ хĕрĕ çинчен ӳтĕнчи паллăсем тăрăх тĕрĕс каласа кăтартнă. Анчах паттăр хĕр амăшĕн биографийĕ Мускавран пынă пысăк пуçлăхсене килĕшмен.

Мемуарист партипе комсомол функционерĕсен ячĕсене те асăнать. Вĕсем - Михайловпа Шелепин. Çав пысăк пуçлăхсене, темшĕн ĕнтĕ, паллă мар хĕр - комсомолка, унăн амăшĕ учительница пулни çеç çырлахтарнă. Ун пек çынна часах хăйсемех тупса пынă. Куннехинче «амăшĕнчен» вилнĕ хĕр ӳтĕнчи паллăсене те ыйтса тăман. Вăл ăна хăй «палласа илниех» çителĕклĕ тесе шутланă. Çапла вара икĕ тӳре айăпне пула чăнлăх пылчăкпа таптаннă. Мĕн пур тӳр кăмăллă тĕнчен çур ĕмĕр хушши çак ултава ĕненсе пурăнма тивнĕ. Мĕн тери кӳренмелле! Мĕн тери намăс! Мĕн тери тарăху çуратать паян çав «ĕмĕр ултавĕ» тӳр кăмăллă çынсен чĕринче! «Хăçан тӳр кăмăлпа пурăнма вĕренсе çитĕпĕр эпир?» - тес килет. Вуласа пĕлни мана калама çук хумхантарса ячĕ. Тӳрех çак сăвă йĕркисем çуралчĕç. Кая юлса пулин те, иртнĕ çылăхран тасални паха. Тĕрĕслĕхпе Чăнлăх умĕнчи тивĕç çакна тума хушать.

АВТОР.

I.

Ултав пулать пĕчĕк е пысăк,
Ун тупсăмĕ çеç-мĕн пĕрре:
Апла та, капла та вăл - пăсăк,
Ăна йышăнмасть вут-чĕре.

Пĕлетĕн: пулать ултав тĕрлĕ...
Апрелĕн пĕрі емĕш чухне
Вăл - шýт, ун пек чух, тен, вăл кирлĕ,
Этемĕн пăлхавăн чунне.

Çавах ку - вăхăтлăх чирĕ,
Ку - кăмăл сипленнĕ самант.
Эп урăх ултавçăна хирĕç,
Каласшăн: çынна ан аманăп!

Ытти чух ултав вăл - сиенлĕ,
Е пысăк, е пĕчĕк - çавах.
Ултавçă çын чунĕ - ик енлĕ,
Унпа эс шар курăн, паллах.

Хýри ун кĕске-мĕн, ултавăн.
Ку - халăх сăмахĕ. Шанар.
Ултавçă çын - мĕскĕн, ан савăн,
Ултавçă - усал та хаяр.

Ултавçă ялан вăл хăрушă,
Ултавçă чее те кăнттам.
Сăвап та çук, чыс та çук уншăн,
Тесе çав çынна тустарам!

Тăшман вăл - тăшман, тĕлĕнместĕн
Ун сăхă, кавар ĕçĕнчен.
Ултавçăна пач эс пĕлместĕн.
Вăл, тус пек, чипер сăнĕнчен.

Шалтан - хăрушрах тăшманран та,
Çакна тин чухлатăн кайран.
Ултавçă çынна çывăх ан тăр,
Çĕлен пек, пăвать вăл майран.

Ултав инçете çитереймĕ,
Ултав аркатать - çав кăна!
Ку чир шалалла кайнăçемĕн
Хавшатĕ сана е мана.

Манпа çырлахсассăн тарамччĕ -
Çĕр-шывăмăр йăшрĕ, куран.
Ултавçă çынсем нумайланчĕç -
Çулти пысăк пуçлăх таран.

Эп мĕншĕн çаплах тарăхатăп?
Çырмастăп эп çăвă-çăхав.
Ун пек суйланмашкăн эп - ватă,-
Арканчĕ пĕр пысăк ултав.

Чуна вăл ача чухнех кĕнĕ.
Сăваплă питпе те куçпа.
Унта йăва çавăрнă, чĕннĕ
Мана кăнтăрла та каçпа.

Хăюллă та тӳрĕ пулмашкăн
Вĕрентнĕ яш чух чĕрене.
Тĕпре - кам шутланă - сулмаклăн
Мăкланнă ултав-пĕрене.

II.

Каллех йĕркипе аса килчĕç
Вут-вăрçă кĕрленĕ кунсем...
Анне аллине хаçат илчĕ,
Кĕç куçĕ шывланчĕ, пĕлсен.

Тăшман хурри пулнă-мĕн Таня.
Тытсан партизанка-хĕре
Фашист вĕренпе майкăчланă,
Хĕненĕ, урса, витере.

Çарран, кĕпе вĕççĕн çӳретнĕ
Юри сивĕре юр çинче.
Чĕнмен, сутăнман хĕр... Вĕлернĕ
Ăна кĕç ял-йыш умĕнче.

Хăйне тытнă çивĕч те чăрсăр,
Пике вилĕмрен хăраман...
Йăлт паллă ытти каламасăр,
Çакна тек никам та манман.

Çырни «Правдăра» пичетленнĕ.
Кам пулнă хĕр-паттăр? Пĕлмен.
Пулсан та пĕри пĕлекенĕ,
Çакна халăха пĕлтермен.

Ку пулнă чăн амăшĕ унăн,
Ыйтсассăн ўт-пў паллине
Калана тĕп-тĕрĕс, мăнтарăн,
Паллана курсассăн хĕрне.

Хўхленĕ вăл, татăлнă: «Таня!
Мĕскер сана турĕç мурсем?!.»
Çапла сăмахсем калаканĕ
Чăн амăшĕ пулнă, пĕлсем!

Анчах хуçа мар тек хĕрне вăл,
Пур вилĕмсĕр, паттăр пике...
Ик чун хушшине çапнă савăл
Ултав, уйăрмашкăн икке.

Пĕр паттăр хĕр - икĕ хĕрарăм
Илесшĕн ун амĕш ятне.
Ултав алли кукăр та вăрăм,
Çул хĕсĕк пĕр чăнлăх патне.

Çĕн «амăшне» тупнă... Вăл хатĕр,
Кала çеç... Çитет çак яла.
Ют çын чап илет çулсем витĕр,
Чакмашкăн çул çук каялла.

Ултав пысăк чух - кун синкерлĕ,
Ун чух юрамасть каласма.
Хĕссен çитерсессĕн те эрлĕк,
Сараймăн чун урлă каçма.

Çапла поэтсем улталаннă
Суя амăшне чысласа.
Калана иккен - эпир шаннă,
Пире шантармашкăн ансат.

Ку - халăх историйĕ, терчĕ,
Мăнаçлăхĕ унăн, пулни.
Ултав, кур, ăна та сўнтерчĕ,-
Шăнтать чуна уççăн пĕлни.

Кама кирлĕ пулнă киревсĕр,
Чуна çуракан çак ултав?
Хĕр-паттăр-и унсăр илемсĕр?
Чапне çухатать-и Мускав?

Унпа аслăрах-и ман халăх?
Унпа хитререх-и çĕр-шыв?
Хурав шырани те, тен, кăлăх?
Ултавçă тахçан та вăл сыв.

Пăртак тимлĕхе çухатсассăн -
Чике тăршшĕнех эс ларан.
Чĕрӳ ыратать, асăнсассăн,
Йăшатăн, сывлатăн аран.

Кам курнă? Ас илнĕ? Каланă?
Хăрушă калавĕ ай-ай!
Çынни тăхăр вуннăран каçнă
Ӳнер Соколов Николай.

Ёçленĕ ялан вĕсем виççĕн,
Ятра псевдоним сисĕнет.
Йыша «Кукрыниксы» тесессĕн
Паян та такам та пĕлет.

Пĕл: фюрер çакна ĕмĕтленнĕ,
Мускав парăнсан, çав йыша.
«Епле-ха ăна эс ĕненмĕн?» -
Хĕртет шухăш манăн ăша.

Пĕри туссенчен халь те сывă,
Вĕсен ĕçĕ - йĕплĕ сăмах.
Ку туслăх - хăй юрă, хăй сăвă,-
Паян манăн - урăх сăмах.

Чул пек, кӳнтеле аргуменчĕ
Касать тымартан ултава.
Тин Чăнлăх тĕреклĕн тĕпленчĕ,
Сурать чун-чĕре çав-çавах.

Ӳте касайса-çке-ха тухрĕ
Мăкланнă ултав-пĕрене.
Суран майĕпен ăшра хухрĕ,-
Сиплет чăн сăмах чĕрене

Тӳр чунлă çынна эп шанатăп,
Ултав çулсем урлă тухать.
Тӳссе ирттеретĕн ăна та,
Пур шанчăк - ăна ан çухат.

Килет çĕр çине çын хăналăх,
Халь хĕрĕн ик амăш те çук.
Анчах пулмалла-çке-ха Чăнлăх
Этемлĕх хăй ыр-сывă чух?

Халь ман çавăнпа пуçăм усăк,
Халь чун çавăнпа ман салху.
Ултав пĕчĕкçи те вăл пăсăк,
Ку акă... Хак пар ăна ху.

Каçарăр, ман тăсăлчĕ сăвă,
Кĕскен çеç каласшăнччĕ хам.
Пур Чăнлăх - çӳрет вăл ыр-сывă,
Ăна чи малтан тăнласам!

1994 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ.

ПУРНĂÇ АВĂРЕ

Сăвăлла роман

Умён калани

Политик мар поэт, вăл - çутă тĕкĕр,
Çырать хăй курнине те пулнине.
Çаплах илтни те рифмăна кĕрет-тĕр,-
Вăл кăтартать çырса мĕн пуррине.

Политик мар поэт, анчах пултарĕ
Çынсен чĕрисенче кăвар чĕртме.
Кĕнекери пĕр-пĕр герой сăнарĕ
Пĕр пек алхапăл култарма-йĕртме.

Вулакана вăл шухăша та ярĕ,
Ăна пĕрре илсессĕн тыткăна.
Ку чух поэт сăмахĕ кирлĕ мар-и?
Вăл килĕнче-и лартăр шăп кăна?

Апла ларни те пурĕ пĕр - позици,
Çакна та йышăнас пулать паян.
Эппин, поэт, эс читлĕхре ан ларччĕ,
Сассу сан кайтăр аякка ян-ян!

Эп романта аваннине мухтарăм,
Усаллине ылхантăм - кур, вула!
Çапах та парăм чакнине туймарăм,
Çăмхи çаплах пысăккине пула.

Суймасăр çыртăм пĕлнине каç-ирĕн,
Телеевсен шăпи - çĕр-шыв шăпи.
Телей патне выртмасть-çке-ха çул тӳррĕн,
Ăна сар куçлăх витĕр курăп-и?

Этем кун-çулĕ - тинĕсри мăн авăр,
Тĕпне туртса илет, астумасан.
Эппин, хум çийĕн ишнĕ май ан çывăр,
Йăлт хăвăнта çут шанчăку та сан.

Телей утравĕ пуррине ĕненнĕ
Çавах этемлĕх мĕн сĕм-авалтан.
Малта вăл пур, кĕтет пире вăл, тенĕ,
Ише-ише кайсассăн та халтан.

Этемлĕхĕн чи аслă ывăл-хĕрĕ
Çывăхлатасшăн çавă саманта
Пуçне те хунă пĕри мар... Чĕп-чĕрĕ
Çаплах ыр шухăшĕ çиçет малта.

Тумхахлă пулчĕ пирĕн вăрăм çул та,
Телей патне кар çĕкленсе тухсан.
Чĕресенчи вут куçĕ евĕр çутă
Паратчĕ вăй ман халăха, ырсан.

Пĕр сулăнка çапсан, тепри кĕтетчĕ,
Анчах умри тĕллевĕ паллăран,
Çăмăлтарах пек туйăнатчĕ терчĕ,
Йăшатчĕ, ўт илетчĕ чĕр суран.

Тĕрли пулать-çке ишевре, пĕлетĕн,
Хум хыççăн хум... Малта - килет çĕнни.
Ăна тĕл пулнă, тўснĕ эс те, эп те,-
Кирек такам та - самана çынни.

Телеевсен тавраш̆ĕ ырă-сывă,
Чăваш тымарĕн шанчăкĕ пуртан.
Вĕсем çинчен роман - ман вĕçсĕр сăвă,-
Утать ăру саманапа пĕр тан.

Çавăнпала - аван-и ку, начар-и -
Йăлт хаклăр хăвăр тĕпĕ-йĕрĕпе.
Эп, автор, аваннишĕн тăтăм мар-и,
Ыйха çухатрăм уншăн çĕрĕпе.

Телей çаплах инçе... Ăçта вăл тарнă?
Каллех çăраланать умра тĕтре.
Чĕре кăна çаплах çунать кăварлă
Яваплӑ çак кунра та сехетре.

Паян эп телевизорпа куратăп
Çап-çаврака сăн-питлĕ каччăна.
Сăнран - çисе кўпченĕскер ытла та,
Чунĕпеле - хăмла çулçи кăна.

Корреспондент ыйту парать - ан хирĕн! -
- Укçашăн пуç касатăн-и? Кала!..
Куçне хупмасăр хуравлать яш тўррĕн:
- Касатăп, доллар тыттарсан алла.

Вăл сăлтавлать хăй сăмахне тўлеккĕн:
- Çемье, ача-пăча пулсан килте,
Ăçта каяс? Эп - ĕçсĕр çын, пĕлетĕн,
Хальччен хирте çыхса курман кĕлте.

Эп - çар çынни, професси мар-и манăн
Çапăçура çынна вĕлересси?..
...Çапла, çынна, тăшмана мар... Мĕн калăн?
Çаплах ман хăлхара яш çын сасси.

Чăнах та çын-ши вăл? Епле ўсеççĕ
Çум курăксем этемĕн чĕринче?
Эппин, çын вĕлерсе пурнаспăн эсĕ?
Çаплах-ши хĕсĕк çак мăнаç тĕнче?

Айван чунтан килмест-ши ку тискерлĕх,
Ютра çеç мар, вăл хамăрта пулсан?
Ман чунăмра ларать паян çак эрлĕк,
Суранăмçăм сипленĕ-ши хăçан?

Яш çын! Пăшал аслаçусем те тытнă,
Ун чух вĕсен кĕçтенĕ аллисем
Çапăçури çарта сасартăк тутлăн
Ялти суха пуçне аса илсен.

Ма вĕрентмест сана, пымасть усса та,
Çав аслисен асапĕпе нуши?..
Шухăшăма эп малалла тăсатăп,
Хуравĕсен вĕçне çитейĕп-ши?

Çапах эп - оптимист. Пĕлетĕп уççăн:
Телей утравĕ пур! Унта ишсем!
Хум çапнă тăвăла та тўснĕ хыççăн
Сыхланăр авăртан, Телеевсем!

1993, кăрлач.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Мур хут татки! Ылхан сана!..
Мана кăтартрăн шар кăна.
(Р. Бернс. «Банк хучĕ çине çырса хуни» сăвăран).

1.

Йĕпеннипе хуралнă пўрт маччи,
Тумла тумланипе урай йĕпеннĕ.
Ёçчен те пултарулла Хĕл мучи
Кантăксене мĕлкепеле тĕрленĕ.

Анчах та Хĕл мучи тĕрри çынна
Савăнтармасть, питех хитре пулсан та.

Тумтир хывса ларасчĕ пĕр кана -
Ашша тытмасть шăнса пăрланнă кантăк.

Пӳртре çăп-çăмăл ярăнать сăпка.
Ача йĕрет. Ун амăшĕ салхуллă.
Çапах та вăл хăй ывăлне лăпкать.
Ĕ калаçать унпа:
- Хăçан çын пулăн?

Ӳссем, пепкеçĕм, пысăк, пысăк пул,
Ун чух вара пире те пулĕ çăмăл.
Сана хавхалантартăр аслă çул,
Унпа утайнă май шăрантăр кăмăл...

Эс кур-ха: амăшне ăнланнă пек,
Ачи тăнлать ăна. Халь вăл шăпланнă.
Ун йăлтăрр! икĕ куçĕ çеç йĕпе,
Таса тумлам - куççулĕ шăрçаланнă.

Кĕç амăшĕ пуçларĕ калаçма,
Телейлĕ, тутлă ыйхăран вăраннăн:
- Ыран - пасар... Илтетĕн-и, Куçма?
Пур-çук вăй-халпала ĕне усраймăн.

Чăнах та, кирлĕччĕ пире ĕни:
Алри ача. Ăçтан илес сĕт-турăх?
Çапла çав хĕсĕк пурăнăç тени,-
Пĕр шăтăкна саплан - каять çĕн çурăк.

Ути те, улăмĕ те кайттăрах,
Пĕр пуленкке юлмарĕ вутă-шанкă.
Кантурĕнчен те тур çырлахтăрах,
Унтан килсен, тире сĕвеççĕ акă.

Халех илме пуçларăмăр кивçен.
Мĕнле кăна кун-кунланса пурнар-ши?
Çĕн тырăччен кĕтмешкĕн пит инçе...
Ĕне сутса йӳнĕçтерсе пăхар-ши?..

Ача тапаланса сирĕлесрен
Праски Эпти кипкисене юсарĕ.
Чарлать тем шăрчăк тĕплĕ кĕтесре,
Сасси çаплах, çаплах ун чарăнмарĕ.

Çич пушăтлă хитре çăпатине
Тирсе ларан Куçма мăшăх çĕкленчĕ.

Пăртак ларсан каларĕ вăл тинех:
- Шăтăксене кăшт питĕрме çитсенччĕ...

Эпти валли илес халь качака,
Ун сĕчĕ усăллă, сахал та - пырĕ.
Ку - пирĕн выльăх, йӳнĕ пулакан.
Пăхма ансат. Çĕр улмипе те тăрĕ.

Унтан вăл пăхăр пуçлă чĕлĕмне
Енчĕкĕнчен хаяр табак тултарчĕ,
Хăнăхнăран, чĕри выртман енне,
Кĕç чĕлĕм çавăрса мăкăрлантарчĕ.

2.

Автан çунат çапсассăнах, Праски
Хăй мăшăрне те ыйхăран вăратрĕ.
Васкавлăн тăчĕ унăн упăшки,
Инçе çула хатĕрленме тапратрĕ.

Тăла чăлха... Вĕр-çĕнĕ çăпата
Çатăртатать, тумассерен çĕн утăм.
Эй, çăпата! Çăлатăн, тупата!
Сана кăна парса илместпĕр сутăн.

Кĕç чикрĕ татăк çăкăр хутаçне,
Чĕркерĕ чăкăт, çу... Йăлт пулчĕ, юрĕ...
Праски пăрахрĕ тытăннă ĕçне,
Каларĕ çеç хыçран:
- Сыхлатăр турă!..

Укçа илме тăрсан, аван шутла...
Сасартăк унăн куçĕсем шывланчĕç.
Упăшкине ăс вĕрентсе çапла,
Çула вăл ăсатмашкăн хыпаланчĕ.

* * *

Ирех кĕрлет, ирех шавлать пасар,
Ватти-вĕтти те хĕвĕшет хавассăн.
Туяннă чух калать: «Йӳне, - тет, - пар»,
Ыйтать вăл хаклă, хăй сутас пулсассăн.

Туянмалли çук мар вара ай-ай!
Кĕсйӳ кăна ан пултăр санăн пушă.
Кĕрлет пасар, япалисем нумай,-
Тĕрки-тĕрки çĕн çăпата та пушăт.

Шуç пăтавкка, чӳлмек тавраш, витре -
Хуçалăхра вĕсем питех те кирлĕ.
Пасар - пуян, япалисем - хитре,
Çăт-çат тăваççĕ алăсем çеç вирлĕн.

Лавккисене, лавккисене пăх-ха:
Кĕпе те йĕм, сăхман тавраш куратăн.
- Укçа парсассăн пурте-çке ахаль,-
Шӳтлет лавккаç, сĕнет пушмак та атă.

Укçа пулсан - канфет, пĕремĕк çи.
Вут-шанкă та укçа пулсассăн хатĕр.
Анчах та çук-çке, çук-çке вăл, укçи,
Чипер сăн-питшĕн кам-ха, кам мĕн патăр!

Хĕн пурăнăç тесе йĕрес-и-ха,
Яш ĕмĕр хăй сӳнми телей пулсассăн? -
Сар хĕрсемпе яшсем кумаççĕ халь,-
Пĕрне-пĕри савасшăн, куç хывасшăн.

Яра куна шавлать кунта хупах -
Укçа пулсассăн кам кĕмесĕр тӳсĕ?
Хăйне йăлт çитнĕ, ав, кĕрет çапах,
Тайкаланса татах кĕрет пĕр ӳсĕр.

Ун мăшăрĕ çулне пӳлсе хурать,
Алкумĕнче тăрать çак мĕскĕн арăм.
- Кӳртместĕп, çук! - тесе вăл кăшкăрать.
Çав сĕмсĕре епле тытса эс чарăн!

Ларать хыт çĕр çинче ыйткалакан,
Пăхмашкăн йывăр: ик ури те татăк.
Кăкри çинче хĕрес. Хăй пит хыткан.
Çи-пуçĕ те старикĕн çĕтĕк-çатăк.

Яш чух вăл пулнă-тăр хастар, патвар.
Патшашăн, тен, тăшмансене хыт ирнĕ -
Ахальтен мар кăкри тăкать кăвар! -
Паян çапла шăпа курмашкăн тивнĕ.

Çынсен шăв-шавĕнчен аяккарах
Хĕрсех пырать ĕне-лаша пасарĕ.
Куçма кунта тăрать-мĕн паçăрах,
Ун Хушкине чылайăшĕ куçларĕ.

Туянакан тупăнаймарĕ тем?
Кайрантарах сутмашкăн пур пĕр тивĕç:
Малтан пасар халне пĕлет этем,
Ун хыççăн тин ална çапса эс килĕш.

- Йысна, мĕн хак ыйтатăн ĕнӳне?
- Вун тăххăра - каларăм-çке, чакмастăп.
- Çук, апла мар, пăртак кăна йӳнет.
- Ĕни аван. Вăл йӳн... сĕтне шутлас-тăк.

- Апла пулсан, тавай вун саккăра,
Халех илетĕп, ална пар, юлташăм!
- Вун саккăр-тăк вун саккăр - мĕн вара?
Ак аллисем пĕрлешрĕç ик чăвашăн.

Шухăшлани йăлт пулчĕ: ĕнине
Сутса Куçма ĕçне-пуçне пĕтерчĕ.
Сутмашкăн питĕ çăмăл пуррине,
Илме тăрсассăн çеç ун пысăк терчĕ.

3.

Черечĕпе, ак, çитрĕ çуркунне.
Малтан сăрт-ту çамки юртан тасалчĕ,
Унтан хресчен хирне те çаранне
Хĕвеллĕ кун хитре чĕр витĕм пачĕ.

Каç кӳлĕм килчĕ кӳршĕ Митрахван.
Вăл Куçмапа пит туслă та пĕр шутлă.
- Мĕнле халсем?..
- Тавтапуçах, аван...
Ыр пускилсен апачĕ пултăр тутлă!

- Ларсам пирĕнпеле апатланма...
Праски пĕçернĕ яшкине пит селĕм...
Килсе çӳрет мучи юмахлама,
Сăмах вĕçне çитсен туртаççĕ чĕлĕм.

- Çĕр уйăрма тухаççĕ, тет хире
Ыран ирех.. Чăнах-и çакă? Чимĕр,
Мана каларĕ теçетник Ахтимĕр,
Виç ят тивмешкĕн тивĕç-ха пире...

Майракари хăватлă пăрăça
Чара çине тытса силленĕ майăн,
Итлет Куçма пăртак пуçне пăрса.
- Стражникĕсем те килнĕ, тет, нумайăн.

Начар хыпар. Имет ик-виç ятак
Турикасран илсеччĕ йӳнĕ хакăн.
Ят уйăрсан - шĕшлĕ аври...
- Так, так...
- Чĕрре вăл кĕрĕ...
- Çук пуль...
- Курăн акă!

Çынни кӳреннĕ имĕш çав тери...
- Çĕр уйăрма пире Имет чараймĕ,-
Калать Куçма. Яш çын чĕри вĕри.
- Куштансенне çулне пӳлсе хураймăн...

- Турри парсан ят хушăнĕ-ха теп,
Вăталăххи те ӳссе çитрĕ акă.
Ёçлет хастар, вырать-çыхать кĕлте...
Сĕтел çинче тек татăк тăмĕ çăкăр...

Çапах шута каять шур çӳçлĕ пуç,-
Ана шăпа сахал-и улталанă.
Туман тиханăн пилĕкне ан хуç,-
Тесе авал пĕлмесĕр-и каланă.

* * *

Ят уйăрмашкăн мелĕ пит ансат:
Витре ăшне тултар ятарлă шакă,
Пĕрне пăхмасăр ил те, кĕл туса,-
Шăпа пӳрсен телей те лекĕ акă.

Начар ана лексен те эс шăплан.
Шăпи çапла, ăна пыраймăн хирĕç...
Хирти хресчен шутларĕ те çапла,-
Ана пуçне кашни хутларĕ, виçрĕ.

Куçман сасси янравлине кура,
Ял-йыш хушать ăна шăпа тытмашкăн.
- Ял-йыш шансан, - тет леш, - тытма юрать...
Ăна шанать çĕр уйăракан çак ушкăн.

Карттус хывса кĕл турĕ те Куçма
Хуллен-хуллен витре патне çывхарчĕ.
Вара шакмаксене арпаштарма
Алне витре ăшне вăл чиксе ячĕ.

Халь шакă çыншăн - шĕвĕр йывăç мар,
Вăл - çăкăр та кулачă, тулăх çĕр те.
Вăл - çăпата, кĕпе валли пусма,
Вăл мĕскĕне те çын шутне час кĕртĕ.

Куçма ăста вĕренчĕ йĕркине...
Хыпар тăвать ял халăхне мăнаçлăн.
Телей вăл кӳчĕ... хăйĕн кӳршине,
Кур: Митрахван та лайăх çĕрлĕ, ятлă!

- Çапли çапла... Ан тивĕр ку çĕре!
Ăна укçа парса туяннă,пĕлĕр!..
Кăна Имет иккен кĕрет чĕрре,
Çĕрме пуянăн сăнĕ - хура пĕлĕт.

- Анчах, Имет... Хуçи тек çук ялта,
Тӳлев вăйне çухатнă халь апла-тăк.
Старикĕ айăпсăр, шăпа тытать,-
Кӳршин хутне кĕрет Куçма сасартăк.

- Мана-и вĕрентме, çара çерçи!
Тасал умран!.. - пӳлет Имет çиллессĕн.
Кунтах тăрать иккен пуян тарçи,
Куçма ӳкет вăл чышкăпа илсессĕн.

Капланнă эрлĕке епле тӳсес?
Куçма сиксе тăрать те васкамасăр,
Сулса ярать, ак, вирлĕн эхлетсе,
Кушгансенчен пĕрре те хăрамасăр.

Кĕçех вара пуçланчĕ шăй та çу...
Вĕçет карттус та, çĕлĕк те йĕнерчĕк...
Ик ен хаяррăн тӳпелешнĕ чух
Сасартăк çухăрать такам:
- Вĕлерчĕç!..

Тĕркĕшӳре, чăнах та, ял çыннин -
Лява Эрхипĕн - татăлнă кун-çулĕ.
Кам айăплă?.. Хуравĕн çук чăнни.
Вĕриленсе, хушша, тен, кĕнĕ пулĕ...

Пĕр айăпсăр кам çинĕ ун пуçне?
Куçма çине тиеннĕ çакă çылăх.
Укçаллă кам - пĕлет вăл хăй ĕçне,
Тӳрре тухмашкăн хăтланни те кăлăх.

Шăв-шав çине чупса çитет Праски;
Ал-урине çыхса кама тăллăнă?
Тинкеререх пăхать - ун упăшки.
Пит-куçĕ те Куçман йăлтах юнланнă.

- Камсем мĕн турĕçĕ сана, Куçма! -
Хŭхлет Праски, хăй ун патне иртесшĕн.
Анчах стражник памасть ăна утма,
Тĕксе ŭкерчĕ акă, мур илесшĕ.

Çакна курса Куçма шăлне çыртать,
Тапаçланать - вăй-хал пĕтмен-ха унăн.
Хăй арăмне çапах та йăпатать:
- Ан йĕр, эп таврăнăп, лăпланччĕ, чунăм!

Хресчен кăкăрĕнче çунать кăвар.
Кашни Куçма хутне кĕмешкĕн хатĕр.
Анчах шутлать: «Стражник тени шŭт мар,
Яла-йыша серепене çаклатĕ».

Пĕр си чĕн саламат вылять малтан,
Кăщкăрашаççĕ хыттăн, çуйăхаççĕ -
Стражникĕсем иртмешкĕн çул тăваççĕ,
Кур: тăранттас хускалчĕ вырăнтан.

Малта каçăрăлса ларать юпа.
Кăвак вăрман кати унтах пĕр йăрăм.
Мăн çулпала ŭке-ŭке чупать,
Çаплах чупать Праски - пĕччен хĕрарăм...

Пĕр кун иртет çапла, иртет эрне,
Праски пĕччен лара-тăра пĕлмерĕ.
Куçма çаплах-ха таврăнмасть килне.
Элле турри усал шăпа пиллерĕ?

Нумай сăмах-юмах çŭрет ялта:
Пĕри калать - ăна тŭрех кăнтарнă.
Кашни сăмахĕ витĕрех шăнтать,
Пĕр айăпсăр тŭсет асап, мăнтарăн.

Çапла калакансем те пур тата:
Куçма чĕрех, тĕрĕс-тĕкел те сывă.
Анчах та, янăскер хăямата,
Асап та терт курмашкăн пŭрнĕ çын вăл.

4.

Пĕчĕкçĕллех тăлăх-турат ятне
Ача-пăча тени нихçан ан илттĕр,

Вăл пĕлтĕр-туйтăр ашшĕ çунатне,
Вăл амăш чĕрçинче вылятăр-сиктĕр.

Хăш чух шăпа калама çук хаяр...
Пĕччен юлсан Праски нумай хŭхлерĕ.
Шăпи çапла-ши пулчĕ? Мĕн тăвар?
Вĕри куççулĕ тутăрне йĕпетрĕ.

Арçынсăр чух кам сутăр-ха сума?
Пĕчченçĕ пурнăç эрĕмрен те йŭçĕ,
Кил картинче пĕр выльăх та юлман...
Хуйха пула Праскин шуралнă çŭçĕ.

Ĕнсе çине тиеннĕ-çке нуша,
Пĕччен чăтмашкăн тŭсĕмлĕхĕ кирлĕ.
Халь çурт та туйăнать ăна пушах...
Пĕр хал та çук, çын - каснă-лартнă чирлĕ.

Тĕнче хĕрри - тăватă еннелле.
Анне чĕри тертне епле-ха тŭстĕр?
Тŭсме те ун, кĕтме те пĕлмелле -
Чĕппи кăна тĕрĕс-тĕкел ун ŭстĕр.

Ăçта чикес, ăçта хурас пуçа?
Кайран шутлать ялтан тухса каймашкăн.
Çуртне хупать те кĕрĕшет тарçа
Улпут патне кĕпе çуса тăмашкăн.

5.

Сар тусанлă çулпала
Кунĕпе утса ыратăн -
Тин вара эс пĕр яла
Умăнта курах каятăн.

... Пеляккух улпут ятне
Пурте таврара пĕлеççĕ.
Ютрисем те ун патне
Çулсерен килсе ĕçлеççĕ.

Кĕтŭпех тытать лаша,
Кĕтŭпех ĕне те сурăх.
Унпа кам-ха тупăшать?
Ун пекки тупаймăн урăх.

Çурт-хуралтă таврашне
Шăтăрнак хитрен тыттарнă.

Тарçă-хресченсен тарне
Вăл мĕн чухлĕ-ши юхтарнă?

Симĕс пурçăн чатăр пек,
Йывăçсем çурта пĕркеççĕ.
Ярăнмашкăн кимĕпе
Кӳлĕ те чавтарнă, теççĕ.

Хĕр чухне Праски кунта
Тыр вырма та килкеленĕ.
Курнă çавă улпута,
Вырăсла та перкелешнĕ.

* * *

Ылмашăнаççĕ кун та çĕр, эрне...
Ёçре иртет-çке вăхăт сисĕнмесĕр.
Тăвать Праски улпут мĕн хушине,
Ёçлет куллен, лаша пек, ӳркенмесĕр.

Кун иртнĕçем самайланать Праски,
Хĕр тейĕн çĕнĕрен - хитре те хӳхĕм.
Пӳртре текех сикмест ача сăпки, -
Эпти ӳссен чуна та кĕрĕ техĕм.

Ёнтĕ ача урамалла чупать,
Лара-тăра пĕлмест вăл кутăруçăн.
Амăшĕпе пакăльтетсе супать.
Ашшĕнни пек, ун чух хапийĕ уçă.

Тепрев чухне ярать кантра хыпса:
Пуçне ухать, ут пек, чупма та хатĕр.
Пăхса тăмашкăн кăмăлу пулсан,
Çилтен те хăвăртрах чупса кăтартĕ.

... Пĕррехинче, ĕçрен ырса кĕрсен,
Праски канма шутланă, вырăн сарнă.
Ун хыççăн кĕç, каçхи апат çисе,
Хăй Эптине ачашшăн çывăрттарнă.

Сасартăк алăк уçăлнă яри
Праски чун-чĕрине шартах сиктернĕ.
Курнать хуçан çут атăллă ури...
Хул хушшине чеен хăй тем хĕстернĕ.

Кӳрет, тен, кучченеç. Туять Праски.
Пĕр кун çапла... Кил картине тухсассăн,

Тӗл пулчӗ ӑнсӑртран вӑл... Аш татки
Курсан, купак ҫӳрет-ҫке тутанасшӑн...

Ҫав кунтанпа вӑл явӑнать ялан,
Ана юри, тен, хӑварасшӑн чыссӑр?
Йыт ҫулӑхать - хӑмсар патакпалан,
Ҭепри пулать-мӗн йытӑран та ӑссӑр.

- Тӑнла, тархасшӑн, турӑ пул, хуҫа!
Кайран мӗнле ҫӳрес ял умӗнче?
Хӗрхен мана, ан ҫиччӗ ман пуҫа...
Леш пур, ҫаплах хӗрарӑм ҫумӗнче.

Кам хӳтӗлӗ пӗччен хӗрарӑма?
Хӑй хыççӑнах ҫӳрет иккен ун терчӗ.
Ҫитмерӗ вӑй вӑя тытса чарма,
Кӑнттам хӑват этем чысне ӳкерчӗ...

Праски пӗччен юлсассӑн ӗсӗклет,
Куççуль ҫӑвать питне кун иртнӗ майӑн.
«Куҫма та кӗҫ ак тавраннӗ киле...
Ун умӗнче мӗнле ман пысӑк айӑп!

Ҫак намӑса мӗнле, мӗнле ҫӑтас?
Неушлӗ пӳлӗхҫӗ телей пӳрмен-ши?
Умра мӗнле хӗн-хур кӗтет тата?
Мӗскер эп тунӑ?
Мӗншӗн? Мӗншӗн? Мӗншӗн?..»

Пин-пин ыйту кӑшлать чун-чӗрине,
Тупсӑмсене ӑҫтан тупма пултарӑн?
Хӳхлет Праски, чӗри тӳсмен енне,
Куллен ҫапла тӑкать куççуль, мӑнтарӑн.

...Ҫӑва тухсан, ача пӑрахнӑ чух,
Праски вилни ҫинчен шавларӗ халӑх:
«Унпа ҫыхланнӑ пулнӑ Пеляккух...»
Уй - куҫлӑ, теччӗ те, вӑрман - хӑлхаллӑ.

6.

Тарҫипеле пӗрле ларать Имет.
Тулта - тин килсе ҫитнӗ илӗм-тилӗм.
Лӗрккет те черккерен - куҫне хӗссе илет, -
Мӗскершӗн ярӑннӑ ӗҫке ҫак тилӗ?

Сар маййăхне илет те пĕтĕрсе,
Чăпăркалла авса хурать пĕр хушă.
Çын тупсăмне тӳп-тӳррĕн пĕлтерсе
Ахальтен мар ял-йыш ят панă «Пушă».

«Сакай тулли вĕшлетĕр ачапча», -
Туйра пехиллени, пĕлсе каланăн,
Тӳрре пит килнĕ. Хăй кайран час-час
Лешсен ячĕсене те арпаштарнă.

Мăшри вилсен авланнă çĕнĕрен,
Ача туман хĕрарăма шыранă.
Çĕн арăм иртнĕ пулнă хĕрĕхрен -
Кĕтмен çĕртен ача çуратнă панă.

Шăп çӳпçине кура-мĕн хупăлчи -
Яш пулмасассăн та пĕррех туллашнă.
Çитĕннĕçем Имет ачи-пăчи
Килтен тарса тĕнче хутланă, каснă.

Юлашкинчен çапах юлать пĕри,
Ама çурри ачи, шатраллă Петĕр.
Халь амăшĕ ăна - сисетĕр-и? -
Авлантарать. Хуçа тума шутлать-тĕр.

Анчах киле мĕнле-ха хĕр килет?
Пуçтах, лӳппер, услап ӳсет çак каччă...
Çавăнпала, тарçи кĕрсен, Имет
Пӳрт алăкне хупса çаклатрĕ тачă.

ИМЕТ

Ялта, паллах, тупаймăн хĕр тавраш -
Пĕлеççĕ пурте... Калама çеç янтă.

ТРАХВИН

Кӳрше, эппин, кӳрше вăлта ярас?

ИМЕТ

Сăнран пăхсах килĕшес çук унта та.

Çамка тирне пĕрсе илет хуçа,
Чăпăк вĕçне кăшлать, туртать те чĕлĕм.
Ĕçĕ ăнсан пама пулать укçа,
Туй пултăр, тет, пĕр асăнмалăх селĕм.

- Пастай, пастай, - канаш парать тарçи, -
Ман пуçăмра çуралчĕ ырă шухăш.
Ун вырăнне яратпăр урăх çын;
Паллах, тăккаланас пулать те... Ну, кăшт...

Хĕве хупса хурсан кайран унта,
Усал хĕртен те пулĕ селĕм арăм.
Малтан кăраччĕ хамăн арăм та,
Вĕçелиса эп вăйăран вăрларăм.

Йăли çапла вĕсен, хĕрарăмсен,
Турти кĕске, пуçĕсенче - пуш-пушă.
Çăвархлăхне хытах туртса илсен
Тинех уссийĕ пулĕ уншăн, хушăн.

Халь савăнса кулса ярать Имет:
- Вăт санăн пуç, Трахвин, эп шутламанччĕ!
Анчах та кам-ха кайĕ хĕр илме?
- Татах шутлас пулать, Имет Йăванччă!

7.

Авал пĕлсе каланă ваттисем:
«Сывви - ўсет, вилни çĕрет вăл», тенĕ.
Чун пултăр çеç, чул хушшинче тўсен,
Яш чух вăй-хал та сывлăх пур этемĕн.

Кунран-кун çирĕп пў илет Эпти.
Хăй амăшне аран кăна астунă.
Асламăшĕ патне куçсассăн тин
Ăс-тăн çирĕпленме пуçланă унăн.

Çичче çитсессĕн хуçнă çăпата, -
Вăл ачаллах ĕçре пиçсе туптаннă.
Тыр-пул пиçсессĕн пусăра тата
Асламăшне каçалăк та пуçланă.

Анчах алри ывăçпала пĕрле
Çурла шăлне кĕрет кача пўрне те.
- Ан йĕр, ачам, - асламăшĕ шеллет, -
Ăна курмашкăн пўрнĕ-çке пурне те.

Чăтсам, пепке, ўг илĕ-ха йăлтах...
Пир аркине пăртак тытса çурать те,
Пырса çыхать асламăш. Хăй татах
Еккипеле ĕçлет. Пар, пўлĕх, витĕм!..

Пăртак ўссен çўренĕ выртмана,
Лашасене тантăшсемпе иленнĕ.
Вучах умне ларса вăл пĕр кана
Юмах-халап итле-итле киленнĕ.

Ёçре хул-çурăм тĕрекленнĕ ун,
Сайра-хутра аптăрасан та выçă.
Яш ўт-пўре вĕренĕ харсăр юн,
Йĕркеллĕ аталаннă ун ăс-пуçĕ.

Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул...
Рашпав çитсен Эпти тултарнă çирĕм.
Ун урине пусман-ха йывăр чул.
Ёмĕтпеле туслашнă каçăн-ирĕн.

Паян Эпти хиртен ырса килсен,
Апатланса пăртак канмашкăн выртрĕ.
Тулта такам кил картине кĕрсе
Çенĕкелле васкавлăн, сассăр иртрĕ.

Ют çын пулас - пĕр хушă хăлăпа
Аллипеле кăштăртатса шырарĕ.
- Аван-и! - чĕнчĕ ырă йăлапа.
Эпти вара хай Трахвине палларĕ.

Сăмахăн енчĕкне салтма тăрса,
Трахвин йăлишĕн ўсĕрчĕ, йăлл! кулчĕ,
Калаçăва ай-çийĕн кукăртса,
Хирти ĕçсем çинчен ыйтса çак пĕлчĕ.

Чи кирлине пуçларĕ тин Трахвин:
- Иметĕн Петĕрĕ хĕре куçларĕ.
Хуçа килне кĕртме шутланă кин,
Леш тăмсайне ыр çын мĕнле хĕр парĕ?

- Вара? Мана мĕн? - пўлчĕ çеç Эпти.
Трахвин татах палкарĕ та палкарĕ.
Эпти вара ăна ăнланчĕ тин,
Пĕр хушă вăл та, ку та шарламарĕç.

Эпти ахăлтатса ярать:
- Ха-ха!
Эсир хĕре сĕрекепе тытаспăн.
Мана хуратăр пулĕ ухмаха,
Хĕр çураçма ярасшăн, йыт туртасшĕ!

- Ăнланаймарăн, ахăр, эс мана,
Ма ухмаха хурас? Хĕр вăрламастпăр.
Пурте йĕркеллĕ пулĕ, шăн, чăнах.
Ку - кулăш çеç. Сана ахаль тумастпăр.

Хăй кĕсйинчен кăларнă сăмакун.
«Чĕлхи пăртак çемçелтĕр», - текеленĕ.
Кайран укçа та сĕннĕ.
Ак - саккун
Вăрăмтуна пек сăхă пуянсенĕн.

8.

Сенкер тӳпе... Пăхсан киленмелле.
Хĕвел çиçет. Вылять хум шăпăл-шăпăл.
Çурхи тĕнче хăй илемне элле
Этемшĕн шеллĕ-и? Çынна вăл хапăл.

Пăхатăн та умри тĕме çине -
Кур: кăткă-çке чупать, хăй темĕн йăтнă.
Кăпшанкă та хавас çуркуннене,
Тавралăх ешерет ытла та хăтлăн.

Пӳрне çинче кăпшанкă - «кукамай»...
(Пирте темме ăна çапла калаççĕ).
- Вĕç, кукамай! - тесе калана май
Чăпар çунаттисем ун сарăлаççĕ.

Йăмра çине йăва тума курак
Суйлать хăйне кура пит меллĕ вырăн.
Çуртне хайлать çакскер хăйне кура -
Чĕпсем валли хуралтă пултăр ырă.

Ахăлтатать шап-шурă улмуççи -
Кĕркуннепе улми пит тулăх пулĕ;
Ун чух килсессĕн эсĕ тат та çи, -
Чие-çырла та йышлă пулĕ ӳлĕм.

Ирпе кăвак тĕтре йăсăрланать.
Тавралăха карса илет те акă
Çӳхе чаршавĕ витĕр курăнать
Хĕвел шевли те, йывăç кăвакăн.

Çырла пек уйăх тӳпене тухсан
Çурхи тĕнче те, сывлăш та йăлт урăх.

Ахальтен мар карталанса тăрса
Хĕрсем юрлаççĕ чи илемлĕ юрă.

Тыр-пул ăстишĕн çуркунне - ĕççи.
Кал-кал сывлать питне тин çунă пусă.
Чуна хăпартлататъ çерем кĕççи, -
Пĕр кун çулталăка кӳрейтĕр усă!

Хĕвел ун чух та пăхнă çакнашкал,
Çурхи тĕнче çиçсе вылянă, кулнă.
Тавралăха вăл панă çĕнĕ хал,
Ем-ешĕл тум та хатĕр пулнă унăн.

Хăва та, курăк та, мăнаç çаран
Сип-симĕс тутăр-шупăрлă - илемлĕ!
Ача-пăча хавасланса çарран
Екки ярса йăлттам вăйăа иленнĕ.

Çунат çапса юрланă кайăксем;
Сĕм авалхи юррисене ĕнернĕ.
Анчах та пурнăç çитнĕ хĕсĕнсе,
Шăп эрĕм тутине аса илтернĕ.

Савăнтармасть çурхи илем çынна
Шăпа кăштах телей пӳрмен пулсассăн...
Саратайри сăртран каçсассăнах
Ума тухса ларать пĕр пĕчĕк касă.

Çук, касă мар. Вăл кӳршĕ ял çапла
Сăртран кăна курнать кĕске те ансăр.
Ун çуррине ытла вăрман хуплать,
Ял курăнмасть патне пырса тăмасăр.

Вăрман ял хĕрринчех пулсассăн та,
Çуртсем кунта лараççĕ тăйлăк-тайлăк.
Çаралнă мăк ăшша начар тытать.
Ял сăн-сăпачĕ унăн халĕ шайлă.

Ял варринче кăна кантур пек çурт...
Каллех пуян çинчен тесе ан калăр.
Пуçласшăнччĕ те... Юрĕ, сăрă хурт
Çинчен çырса хут варалас мар халĕ.

Ку тăрăхри Нарспи çинчен хĕрсе
Çыратăп. Ун çинчен сăмахăм манăн.

Вăл сан çине чун витĕр тинкерсен
Тавралăха йăлтах, йăлтах эс манăн.

Хĕре пула ятне çырса хума
Ăк, эп те мантăм халь. Эппин, каçарăр!
Вăл - Синерпи (ман вăхăт калама).
«Кама-ши пӳрнĕ? Пулĕччĕ шеп арăм», -

Çапла ăна ырланă ваттисем,
Ача-пăча хăйне кура юратнă;
Ăшĕсенче вут хыпнă каччăсен,
Хăш-пĕрисен, тен, чĕрисем ыратнă.

Вăл пурăннă амăшĕпе кăна...
Алла çурла тытса тыр-пулă вырнă,
Тантăшсемпе çӳренĕ вăрмана,
Час-час серте татма çӳренĕ, ырнă.

Каçпа вăйăа та тухнă Синерпи -
Яш чух этем лара-тăра пĕлет-и?
Пули-пулми пырса ан çыпăç пит,
Пăхса илет те - ун вăйне сисетĕн.

Кама телей парнелĕ сарпике?
Ял калашле, телей кама-ши пӳрнĕ?
Çакна вăл хăй те пĕлеймест иккен,
Анчах шанать, унпа вăл лайăх пурнĕ.

Хĕрсем тухаççĕ акă вăрмантан,
Хĕрсех такмак та юрă шăратаççĕ.
Паян яра куна вĕсем унта
Пыл евĕр тутлă çĕр çырли татаççĕ.

Çырли нумай. Суйла çеç. Шултăра.
Тавралăха манса татма хистеççĕ.
Çырли питех сĕткенлĕ те вара! -
Чĕлхе çине хуран та - ирĕлеççĕ.

- Хĕрсем, пăхсамăр! Туй-и ку килет? -
Мăн çул çине халь Синерпи тинкернĕ. -
Саратайран хăна килет-тĕр шет?
Такам, курсамăр, пар лаша кӳлтернĕ.

- Хут купăсне тăсса пырать пĕри.
- Пĕкки çинчи шăнкравĕ янăравлă.

- Мăн урампа иртеççĕ, ав, юри.
- Яла сăхлантарасшăн, ку вăл - паллă.

- Эй, атьăр-ха, хĕрсем, курма çитес!
- Синерписем патне-çке чарăнаççĕ!..
Хĕрсем кунтăксене йăтаççĕ те
Ял еннелле хыпаланса чупаççĕ.

9.

Хĕр амăшĕ тĕпелĕн кукринче
Çӳрерĕ пăрчăкан пек унăн-кунăн.
Пикен куççуль тумлать куçĕсенчен,
Пĕлмен-илтмен çынна каяс-и унăн?

- Лăплан-ха, хĕрĕм, лăплансам, лăплан.
Каччи сăпай, хитре - мĕнех-ши кирлĕ?
Ху телейне эс тупăн унпалан,
Пурăнасса та пурăнаççĕ вирлĕ.

Авалтанпах пырать йĕрки çапла -
Çунат сарса çич юталла вĕçет хĕр.
Ана мĕнле-ха хирĕç пымалла?
Пиртен тухман, эпир мĕскер пĕлетпĕр?

Аçу çапла мана илме пырсан
Каясшăн мар хӳхлерĕм хам та, йĕтĕм.
Шăкăлтатса çеç пурăннă кайран...
Пурăннăçем юратупа ăс илтĕм.

Анчах туйна курма пӳрмен ăна...
Мĕн тăвăн, атьсемри, телейĕ çук-тăр.
Япун вăрçи пуçланнăччĕ кăна -
Çухалчĕ вăл. Тăпри ун çăмăл пултăр...

Чуна хĕссе тухан сăмахсене
Ют çын тавраш пĕри те илтеймерĕ.
Татах сăйларĕç те хăнасене,
Пӳрт çеç, вĕлле пек, пăлханса сĕрлерĕ.

Укçа ыйтса юрлаççĕ, япала,
Пĕр шухăш патнелле пырса тухаççĕ:
«Сăмахĕ пултăр шанчăклă апла -
Шеп мăшăр пулĕ...»
Кĕт туя, сухаçă!

Каллех янрать тăрлавсăр шăнкăрав -
Пар ут каллех юртать, юртать вăл йăрă.

Ача-пăча шавлать çеç урамра,
Лав хыçĕнчен çил пек чупать çул тăрăх.

10.

Сулмаклă пĕлĕтсем карса илсен
Çĕре ислетнĕ пархатарлă çумăр.
Куçа шартса ялтранă тумламсем -
Улма та витĕр курăнать-мĕн, чăмăр.

Тӳпе чаршавĕ сирĕлнĕ каça,
Тĕнче вара çуталнă та тасалнă.
Лĕп çил кăна çӳренĕ лăпкаса,
Ăна, атте пек, ăшшăн ачашланă.

Çырла татмашкăн тухнă Синерпи,
Аш çумăртан турат айне пытаннă.
Ĕнтĕ кукли те селĕм пулĕ пит,
Урпа сăри те чашкăрма пуçланă.

Хисеплĕ кун çывхарнă майĕпен.
Синерпие пăртак хăратнă туйĕ.
«Ялан килте пурнаймăн аннепе, -
Шутланă та - çуралнă ырă туйăм. -

Çĕрме пуян ачи пулсассăн та,
Ĕçчен пулас хăй, ик алли тĕреклĕ.
Куçĕсенче вут-хĕм йăлтăртатать.
Сăпай... Чĕлхи-çăварĕ те ĕретлĕ».

Çапла шутланă хăй каччи çинчен,
Ĕмĕтпелен хаваслăн çунатланнă.
Юлташĕсем е амăш сисиччен
Çырма хĕрне вăл аннă, тунсăхланă.

Ачалăха аса илсе çарран
Сукмакпала утма хаваслă, ырă.
Чĕре хĕлĕхĕсем вăраннăран
Юр юрласа е шăхăрса çеç пырăн.

...Хыça юлса пырать хура вăрман.
Сукмак лаша çулĕпеле пĕрлешрĕ.
Кунтах юхса выртать сĕвек çырма,
Хăва шыва кĕç чуп туса илеспĕн.

Курман-сисмен шута кайса пырса -
Хыça пырса тухать такам этемĕ.

Ак, Синерпи пăхать те çаврăнса...
Эпти! Эпти тăра парать, атьсемĕр!

Кунта сасартăках тĕл пулнăран,
Шыв сыпнă пек пĕри те шарламарĕç.
Çырла чут тăкăнатчĕ кунтăкран,
Эпти те, темшĕн, тĕлсĕр мăкăртатрĕ.

Вĕри чĕри шаккарĕ Синерпин,
Хумханчĕ те вăл, савăнăç та туйрĕ.
Илтме пултарĕ йĕкĕт, тен... Эппин,
Ан тив тăнлатăр халь, итлетĕр, юрĕ.

- Салам сана, асамлă сарпике! -
Именчĕкне сирсе Эпти каларĕ. -
Кунта хитре çырла нумай иккен,
Санран та хитрине чун тупаймарĕ...

Кĕрен сăн кĕчĕ Синерпи питне,
Именнĕрен пуçне пăртакçă усрĕ.
Эпти çывхарчĕ, пычĕ хĕр патнех,
Халь Синерпи ун ăшшине те сисрĕ.

ЭПТИ

Пĕлесчĕ санăн, хаклă Синерпи,
Эппин, йĕркипеле итле пурне те...
Ахаль пулсассăн, акă, килĕп-и,
Мана сума сăватăн, ĕненетĕн.

СИНЕРПИ

Тата кама-ши манăн ĕненес?
Мĕскершĕн эс мана çапла калатăн?

ЭПТИ

Каçар та, чăннине пĕлсессĕн эс
Мана питрен пĕр шелсĕрех суратăн.

Çапах та тивĕç эпĕ калама,
Кĕтет пире инкек - тăшман хăрушă.
Сан умăнта халь айăп пысăк ман,
Ачи валли сана çураçнă... Пушă...

Сана çураçнă каччă-эпĕ мар,
Эп - чухăн çын... Атте-аннесĕр эпĕ!

Алса пек çĕрĕм пур тар кăларма,
Тыр-пул аксан ӳсет мăян - темтепĕр.

Картишĕнче мăн выльăх-чĕрлĕх çук.
Лаша тытатăп-ха, пĕччен сухаçă.
Кантуртисем килсессĕн -хып та çун,-
Ăçтан укçа тупас?.. Кил, пĕчĕк лаçă...

Укçа чышса та шуххăн сăйласа
Имет мана, тăрлавсăр, улталарĕ.
Ачи валли тесе, тумлантарса,
Хĕр çавăрмашкăн, лутсĕр, тархасларĕ.

Кашни пике сурать лешне курсан.
Пымаççĕ яхăна ялта - пĕлеççĕ.
Ак, халь вĕсем çынна улталаса
Илемлĕ-юрăк сарă хĕр илесшĕн...

Юпа пек хытрĕ Синерпи илтсен,
Çырлаллă кунтăкне алран ӳкерчĕ.
Эпти инкекĕн пурттине сирсе
Юратăва çăлмашкăн вăй çитерчĕ.

ЭПТИ

Сана курсан хускалчĕ ман чĕрем,
Вăл хыттăн та пăчăртанса ыратрĕ.
Сана, сăпайлă та чипер хĕре,
Пĕрремĕш хут вăл пăлханса юратрĕ.

Халь, ак, ятла мана, кирек мĕн ту,
Намăслантар - çакна йăлтах эп тивĕç.
Анчах нихçан сипленмĕ юрату,
Чĕре çине хăварнă хыççăн çĕвĕ.

СИНЕРПИ

Эй, турăçăм, ху чуруна сыхла,
Çав курăнми серепене татсамччĕ!
Инкек-синкек ман чĕрене кăплать,
Ăçта каяс, мĕскер тăвас, калаччĕ!

Çук, хапсăнмастăп эпĕ пурлăха,
Укçа тавраш пухас тесе çунмастăп.
Епле тӳсес çак эрлĕк-хурлăха?
Юратура телей, ăспа шутлас-тăк.

Çапла сăмах каларĕ Синерпи,
Эпти кăкри çине пуçне вăл хучĕ.

Каллех тавралăх хитреленчĕ пит,
Хĕвел те тӳпере хаваслăн кулчĕ.

11.

Туй, туй тесессĕнех çынсем умне
Тухса тăрать мăнаçлă ĕçкĕ-çикĕ.
Эрех-сăра çаврать этем пуçне,
Вăл ял-йыша йăлт ӳсĕртмешкĕн çитĕ.

Тата ума тухса тăрать хăна, -
Çĕн мăшăрăн тăванĕ-хурăнташĕ.
Хаваслă юрă та юхать кăна,
Шăпăртатать кăна çăп-çăмăл ташă.

Хĕр çуммисем юрлаççĕ юрăсем,
Шур инкесем те ал çупса юрлаççĕ,
Туй çыннисем пар лашасем кӳлсе
Урампалан унта-кунта кумаççĕ...

Синерпипе Эпти пĕрлешнĕ чух
Эрех-сăра тавраш̆ĕ тăкăнмарĕ.
Пӳрте кĕрсессĕн икĕ çамрăк чун
Никам хаваслă юрă юрламарĕ.

Кĕрекере лармарĕç хăнасем,
Шăпăр сасси-чĕвви те илтĕнмерĕ,
Çĕн мăшăра алкумĕнче кĕтсе
Никам, телей сунса, пехиллемерĕ.

Вĕсем ир кӳлĕм кĕчĕç вăйăран,
Кӳрше-арша пачах та систермесĕр.
Килте Эпти асламăш çеç çыврать,
«Хуп турттарать» ват карчăк, выртнă мелсĕр.

Пӳрт ăш-чикки кичеммĕн курăнать:
Хăюсăр хăй чикки... Пĕр çыхă улăм...
Кăвар ӳкет те чашлатать кăна,
Йĕпе çатма çинче сӳнет салхуллăн.

Эпти лартать сĕтел çине чӳлмек...
Эппин, пуçланчĕ ун хăюллă ĕçĕ...
Тип çăкăра çыртса пыр йĕпетме
Туссем пĕр куркаран кăвас ĕçеççĕ.

12.

Ирхи хĕвел ахах-хĕлхемсене
Сапаласа пурне те савăнтарчĕ,
Вăрман тăррисенчен вĕçĕсене
Çыхса пин хĕлĕх евĕр карăнтарчĕ.

Пир тĕртнĕ чух çапла çыхса хурать
Çип карăмне ырма пĕлмен хĕрарăм.
Хĕвеллĕ кун пулассине кура
Хресчен хирте ирех ĕçне пуçларĕ.

Сар кайăксем çапаççĕ халь çунат,
Вĕсем хĕвеллĕ иршĕн хĕпĕртенĕ.
Ĕç патнелле хаваслăн туртăнать
Ире пула ĕçчен алли этемĕн.

Имет паçăртаннах ура çинче,
Вăл яш чухнехи евĕр хĕпĕртенĕ.
Хаяр матки сасартăк сисиччен
Уç сывлăшша пăртак сывлам-ха, тенĕ.

Туя хатĕрленет кил-çурт, туя! -
Питех те чаплă пулĕ унăн кинĕ.
Хăйне кăтартĕ-ха çĕрме пуян,
Унтан ахаль-и хулăм укçи илнĕ?

Кĕтни çитнипеле Имет хавас,
Пĕр тапхăр вăл сада кĕрсе çÿрерĕ.
Тата ăçта каяс та мĕн тăвас?
Сăлтавсăр-мĕнсĕр татса илчĕ эрĕм.

Сукмак ертсе каять çăл куç патне.
Пакăлтатать унта ик-виç хĕрарăм.
Тăхта-ха, асăнаççĕ ун ятне!
Эп ма чакак-чĕлхесенчен хăрарăм?

ПĔРРЕМĔШ САСĂ
Илтмен-и эс, кума? Сăмах çÿрет...
Çĕркаç Куçма Эптийĕ-мĕн авланнă.
Хĕрне пĕр туйсăр илсе килнĕ, тет.

ИККĔМĔШ САСĂ
Эп кÿршĕре - пĕлмен... Эй-кей, ăнманнă!

ВИÇÇĔМĔШ САСĂ
Ăна пĕркун çураçнă Иметсем,
Ачи валли кайса çураçнă пулнă.

Укçа парса та шуххăн илĕртсе
Эпти çине-мĕн пысăк шанчăк хунă.

Кайран лепсем чăнах пĕрне-пĕри
Юратнă тет...

МАЛТАНХИ САСĂ

Апла пулсассăн пырĕ.
Ахаллĕн ывăлĕ чĕрне хурри
Тĕшне тăмасть.

ИККĔМĔШ САСĂ

Чĕлхи пулсанччĕ ырă!

«Мĕскер тăвас хапха-çăварсене?!.» -
Имет инкесене питех çилленчĕ.
Самант - çил пек вĕçсе пырса килне:
«Трахвин!» - тесе çине-çинех вăл чĕнчĕ.

- Мĕнле амак ыйха татать тата?
Ăçта, ăçта пушар, Имет Йăванччă?!
Каçар та, кăтăш пулнă, тупата, -
Лупас çинчен ансан, Трахвин шăпланчĕ.

- Эп парăп, ак, сана мĕнле амак!
Çынсем кулаççĕ! Панккавсем! Ну, тӳсĕр!
Эс кӳпчеме кăна пĕлен, ухмах!
Тăна кĕмест пуçу, ялан вăл ӳсĕр!

- Каçарччĕ, айăплă, Имет Йăванч,
Лаша кĕтсе ĕшеннĕ... Ырă турă!
Ирпе ыйха хĕртмешкĕн пит аван,
Ĕçме - ĕçмен! Тумлам та, пуçăм - урă...

- Çăвар карса тăрас-и-ха тата!..
Чике тăршшех вĕт лартрĕç, пур-и сан ăс?
Эпти, Эпти тени, пиртен малтан
Синерпине илсе-çке килнĕ... Намăс!

- Синерпине? Пиртен малтан? Пастай!
Эпти питне кĕççе çĕленĕ ахăр.
Малтан укçа та сăптăрчĕ самай,
Халь хĕр иккен... Эс кур-ха: лăкăр-лакăр!

- Атя, Трахвин, васкас: кӳл лашуна,
Кайса тăмписмене тăна кĕртетпĕр...

Ак, пăртакран куштан «чĕнман хăна»
Урампала вĕçтерчĕ тĕппĕр-теппĕр!

* * *

- Эпти, такам çĕр çĕмĕрсе килет,
Тусан кăна тусать. Пăхсам, кунта-тăр, -
Тет Синерпи. Хăй чĕтресе илет,
Эпти хулне ярса тытать вăл çатăр!

Чӳречерен тинкерчĕ те Эпти
Кам килнине пĕрре пăхсах чухларĕ.
- Çук, Синерпи, эс ан хăра халь тин,
Хăрушă мар мана тăшман кăварĕ.

Лаша çитсе чарнать те çурт умне,
Трахвинпеле Имет сиксе анаççĕ.
Пăртак шаккаççĕ ларнă тусанне,
Хур açилле пуç каçăртса пыраççĕ.

Çитсе тăраççĕ акă самантран.
- Тавси, - чĕнет Трахвин, сăмах тумалăх.
Çилли пытаннă çак йăвашлăхра,
Çакна Эпти туять халь питĕ лайăх.

- Шутларăн-мĕн алхапăл авланма,
Çĕн арăмпа мĕнле çĕр каçрăн, сурăх?
Эппин, мана шутларăн хур тума?
Анчах асту! Пăхса тăмастăп урăх!

Укçа илсе те сăмакун кӳпсе
Мана кăтартрăн сăтăр, улталарăн.
Тăкаксене суд шыраса илсен
Мĕн калăн-ши ун чух? Итле, мăнтарăн!

Сана эп халĕ каçарма хавас,
Ху айăпна шăв-шавсăр тӳрлетсессĕн.
Хĕре илсе каяс та - туй тăвас.
Шутла, Эпти... Айван, ача-ха эсĕ...

Хăрушă та чее сăмахсене
Эпти аран çеç итлесе пĕтерчĕ.
- Шăпланăр, эй! - каларĕ вĕсене, -
Ман хăлхана сăмахăр йĕрĕнтерчĕ!

Вăл темĕн хыпаларĕ кĕсйинче,
Унтан... укçа, укçа туртса кăларчĕ.
Лӳчĕркесе, йăваласа тинех
Хуçа ури айне пĕр вăркăнтарчĕ.

...Тата мĕнле инкек килет киле,-
Кушпан алли мĕскер хăтланĕ ўлĕм?
Çĕн кин Эпти çине пăхса илет,
Леш ытамне илет ăна хĕрўллĕн.

- Лăплан, чĕкеçĕм, çирĕп чунлă пул.
Халь тин сана эп ют алла-и парăп!
Çук, кирлĕ мар мана ултавлă мул,
Лăпланччĕ, Синерпи, йĕмешкĕн чарăн!

13.

Урапа шăлтăртатать те,
Çĕкленет тусан.
Çăвара, куçа тулать тек,
Лаш пуçна усăн.

Шалт халтан ярать-çке шăрăх,
Кăкшăм шыв илмен,
Туйăнать çул вĕçсĕр вăрăм-
Çеçен хирлĕ ен.

Тўпе янкăр та çап-çутă,
Йăсланать тусан.
Лав çинче - лармашкăн утă,
Михĕсем пур сан.

Лашасем пыраççĕ ретĕн,
Ўсĕнмест утти.
Хулара хальччен пĕрре те,
Çук, пулман Эпти.

Каçпала пырсаччĕ çакă
Кўршĕ Лариван.
Вăл пĕлтерчĕ: "Тырă хакĕ
Хулара аван".

Тырă-пулă кăйттăрах та
Эптисен. Анчах
Питĕ кирлĕ-çке укçа та,
Кĕсъесем пушах.

Хулана мĕнле-ха кайăн,
Пит начар лаша?
Кўршине тăнланă майăн
Путрĕ шухăша.

- Ак, пĕрле каятпăр, - терĕ
Ырă Лариван, -
Михĕсем эп хатĕрлерĕм,
Нумай мар вĕт ман.

Иккĕн çул кĕскелĕ, юрĕ, -
Килĕп ирхине.
Чĕререн Эпти тав турĕ
Хăйĕн кӳршине.

Ёмĕте сасартăк килчĕ
Инçетри хула...
Ирхине ирех тапранчĕç
Кӳршĕсем çула.

Çула майăн йыш та ӳсрĕ -
Тухрĕ виçĕ лав.
Йыш вăйне лаша та сисрĕ,
Кĕçенет вăл, ав.

Каça хирĕç йăлт ĕшеннĕ
Пирĕн лавçăсем
Çĕр каçмашкăн ĕмĕтленнĕ
Лайăпа çитсе.

Ак, умра çав вырăс ялĕ,
Ялтăрать Сĕве.
Лашасем те ырнă халĕ,
Йĕп-йĕпе йĕвен.

Курăк вăрăм та сип-симĕс
Анлă улăхра.
Сĕве шывĕ тулăх шыв-мĕн,
Калăн ыйăхра.

Лариван пичче тăварчĕ
Ырнă кĕсрине.
Тăлласа ăна вăл ячĕ
Ешĕл ĕшнене.

Ак, Эпти те килсе çитрĕ,
Салтăнчĕ те... Эх!
Çӳçенмесĕрех ялт! сикрĕ
Карлăк çинченех.

Кунёпе ёшеннё хыççăн
Çăвăнма аван.
Шывё тăрă та пит уçă,
Ырнине манан.

Лариван та питне çурё,
Халь ларать, канать.
Ёнёрлет хавасла юрă,
Кулкалать кăна.

Йăлăмра çёр каçнă хыççăн,
Ирхине ирех,
Çула тăсрёç умлăн-хыçлăн
Ёнтешсем каллех.

Аякра шур тётём акă -
Чёмпёр-и элле?
Умрине йăлтах курмашкăн
Кансёрлет шевле.

Малтанхи çуртсем курнаççё
Пăртакран умра.
Кантăксем куçа шартаççё,
Речёпе-йăмра.

Лариван калать:
- Шăп çавă,
Чёмпёр инçетре.
Ав, мёнле хула иккен вăл,
Питё те хитре!

Лариван унччен те пулнă
Çакă хулара.
Пёлёш вырăс пур-мён унăн,
Лайăх çын вара!

- Эс вăрах пулманччё, - терё, -
Тусăм, Лариван.
Сывлăхне ыйтса тёпчерё.
- Ерипен, аван...

Кётсе илчё питё ырă
Икё чăваша.
Картара кавлет чёр курăк
Ывăннă лаша.

- Юлташу тата кам пулчĕ?
- Хамăр кӳршĕсем.
Кăмăлĕ Егорăн тулчĕ
«Кӳршĕсем» тесен.

Сăмавар та вĕреттерчĕ
Çул çинчен ятне.
Хистесех вăл чей ĕçтерчĕ
Ик чăваш-тусне.

... Пасарта питех те йӳнĕ
Сĕлĕ-ырашсем.
Каялла леçме-и кӳнĕ
Йывăр михĕсем?

Çур хака сĕнсен те парăн,
Тăмăн туртăнса, -
Ĕнсене касать-çке парăм,
Ĕç пымасть ăнса.

Кил хуçи Егор тĕпчерĕ
Хваттере пырсан.
- Ĕç начар, юлташăм, - терĕ
Ырнă Лариван. -

Ăнмасса эп шутламанччĕ,
Сутрăм, апăрша!
Ĕç начар, Егор Романччă,
Хресчене нуша.

Туссемпе ансат та мирлĕн
Пуплешме аван.
Шухăш пĕрлĕхĕ çеç кирлĕ -
Сăмахне тупан.

Акă халĕ те хускалчĕ
Гĕрлĕрен юмах.
- Пурнăç питĕ йывăрланчĕ, -
Тет Егор, - чăнах.

Астăватăр-и хусамăр,
Тусăм, Лариван,
Юрлăра *) пурнатчĕ самăр
Кулаков пуян.

---

*) Ял ячĕ.

Пусмăрланă, чĕрре кĕнĕ,
Сывлама паман.
Ахаль мар ял-йыш та чĕннĕ
Ятпа мар: «Пăван».

Хирĕçсен лăплантармашкăн
Тытнă саламат.
Кантура та юрамашкăн
Пĕлнĕ, хăямат!

Хĕрсене ирĕксĕрленĕ,
Кăмăлне кайсан,
Çавăнпа ял-йыш эрленнĕ,
Çитнĕ тарăхса.

Лайăх лекнĕ уншăн-куншăн,-
Ютри хурах мар,
Йăтса пынă харсăр ушкăн
Сенĕк те чукмар.

Пуяна чăл-пар! тустарнă,
Çуртне тĕртнĕ вут.
Хăй аран-мĕн тухса тарнă,-
Тулăксăр улпут.

Пурте, тен, вĕсем пĕр евĕр,
Кушăнсем. Çапла...
Эпĕ те çамрăк темĕр,
Вăл та тем шутлать.

14.

Чăрсăр çилĕ тăхлан пĕлĕте хăвалать,
Шăхăрать çӳрен ут çилхи витĕр.
Шурă Чĕмпĕр юлать, шав юлать хыçала,
Хула - лайăх, анчах, тăван килĕм, сана мĕскер çитĕ!

Лариван лашине хистесе те илет:
- Пушăлла чуп кăна - çулĕ такăр,
Юрт, çӳренĕм, ан ыр, час çитерччĕ киле...
Сăмах çитнĕ пине, шăп пыраççĕ пĕр тапхăр.

Калаçас пеккине йăлт калаçнă тахçан.
Пĕçертмест - халь тӳпе салхулланнă.
Çил кăна çӳпĕпе перкелет пит-куçа,
Урапа шăлĕсем типĕпе шултăркана.

Инкеке-и сиссе - чун выртмасть, ăш вăркать.
Кăмăла, тен, хуçать сутнă тырă.
«Хăçанччен-ши нуша хресчене лутăркать?
Пурнăçа пурăнасчĕ телейлĕ те ырă».

Шăплăха хускатать чĕмсĕр пынă Эпти:
- Тек кун евĕр ăçтан-ха чăтайăн?!
Пиртен лайăх пурнать пуян çыннăн йытти,
Чухăнсем тĕнчере терт кураççĕ нумайăн.

Юрлăри маттурсем пек, хастарлăн тăрсан,
Чухăнсем çĕкленсессĕн пиншерĕн,
Пуянсем, кушăнсем хăратаймĕç урса,
Лариван, эс асту-ха, Егор мĕн пуплерĕ...

Ак, каллех лавçăсем шарламаççĕ пĕр çи.
Çил юртать, çил кумать уй-хир тăрăх.
Хăлхара шăхăрать ун илĕмсĕр сасси.
Киле майăн лаша та таптарчĕ-çке йăрă.

* * *

Тĕттĕм каç. Умра васан.
Уйăх каçăхнă, куран.
Кунĕпе ларса пырсан
Шăмă-шăкă - чĕр суран.

Кăтăш пулнăччĕ Эпти
Урапа çине выртса.
Темиçе чĕнсессĕн тин
Сиксе тăчĕ васкаса.

Вăратать-мĕн Лариван:
- Инçе мар ял, çитрĕмĕр.
Мала пăх-ха, пăх аван,
Пушар мар-и? Пĕтрĕмĕр!

Ял çинче çĕкленчĕ вут,
Çути ўкрĕ пĕлĕте.
Юрт, лаша, çил евĕр юрт...
Ял тата мĕскер кĕтет?

Хĕрсе кайнă Лариван,
Хăвалать çеç лашине:
Вăрăран - çуртпа юлан,
Вут шăлать - мĕн пуррине.

Шăлтăр-шăлтăр пыниппе
Лариван пĕртте сисмен,
Куç курмасăр тенĕ пек
Çынна кĕç лăçĕркемен.

Ăнсăртран леш пăрăнса
Юлчĕ çулăн хĕррине.
Çулăм çутинче курса
Юлчĕ унăн карттусне.

Мĕн туса çăрет Трахвин?
Калăн темĕн хăвалать.
Пăхкалать пăлттин-пăлттин,
Пит хăравçăн пăхкалать.

- Мĕн туса çăрет, шуйттан,
Мĕн шырать тĕттĕм çĕрле?
Мăкăртатрĕ Лариван,-
Йытă пек çăрет, йĕрлет.

Тăкăрлăкран пăрăнсан
Эпти ăкрĕ хыпăнса.
- Пĕтрĕмĕр пуç, Лариван,
Кайрăмăр эпир çунса!

... Çулăм тăснă чĕлхине
Хăратса каçхи яла.
Ас илет те Трахвине,
Тин Эпти йăлтах уйлать.

Пуç çине нуша ăксен,
Асра тыт туссен ятне,-
Çуртсăр юлсан, Эптисем
Куçрĕç Лариван патне.

Чĕр суран та сипленет
Вăхăт иртсе пынă май.
Эпти аврĕ пилĕкне
Çĕнĕ çурт тума нумай.

Тупма йывăр пĕрене,
Çук укçа? Пуçна ан урт!
Ăссе ларчĕ кĕр енне
Тăмран тунă пĕчĕк çурт.

15.

Кил-йыш ларать ирхи апат тума,
Сăмах-юмах пырать çеç шăкăл-шăкăл.
Кивçен тупаççĕ кӳршĕрен юрма,
Касса хураççĕ чул пек хытă çăкăр.

Эпти асламăш те ларать кунта.
Ун ват чĕри паян ахаль-и сикнĕ:
Пĕртен-пĕрех мăнукĕ тăлăх та,-
Тавах турра, ӳссе çынна-çке çитнĕ.

Кил картинче каллех ура сасси.
Такам пĕр хушă çенĕхре шыранчĕ.
Хăна-мĕн курăнмасть-ха килесси...
Иртен-çӳрен?
Кил-йыш кĕтсе шăпланчĕ.

Анчах та кам ку? Хĕсĕк алăкран
Пӳрте кĕрет старик. Çăра сухалĕ
Кăтраланать. Хăй пит ывăннăран,
Тăрать аран. Кил-йыш кĕтет - мĕн калĕ?

- Мухтав сана, мухтав, тăван кĕтес!
Юратнă ват аннем! Чипер-и!-
Калать старик сăпайлăн. - Ман килес!..
Каçарăрччĕ, çитменнине çитерĕр!

Эпти асламăшĕ тăрать аран.
- Куçма! Ачам... ачам, эсех-и çакă?!
Те чĕрипе паллать вăл, те сăнран.
Йĕрет. Эпти калать:
- Ан макăр!

- Аçу, аçу-çке таврăнчĕ, Эпти! -
Чĕнет асламăш, сывлăшçавраймасăр.
Эпти, ак, вырăнтан хускалчĕ тин,
- Анчах та, эпĕ паллаймарăм, ахăр...

- Эпти, ку эс-и?! - тĕлĕнет Куçма,-
Пăхсам: ман ывăлăм кĕреш пек пулнă!..
Пултараймарĕ, мĕскĕн, калаçма,
Сăмахĕ те, сасси те çĕтрĕ унăн.

Куçма кутамккине çĕре хурать,-
Тĕлĕнмелли пĕтмен иккен тĕнчен.

Кайран хĕрӳллĕн каласа парать
Хăй çухалса çӳренисем çинчен.

- Халь хама-хам та ĕненес килмест,-
Ку тĕлĕкре-ши, чăн-ши - тĕлĕнетĕп.
Аннеçĕм, ĕнтĕ чарăн хӳхлеме,
Йӳçĕнчĕк эрлĕк капланса килсен те.

Мана ялтан ăсатрĕç Çĕпĕре.
Ал-урана сăнчăрсемпе тăлларĕç.
Аса илсен халь ыратать чĕре;
Ман пек шăпаллисем эп кăна мар-иç!

«Пăлхавçăсем» тесе пире юри
Элеклесе ăстрĕç ял-хир урлă.
Çак тĕнчере касать патша пурри,
Ĕçри этем шăпи таçта та хурлă.

Кун хыççăн иртрĕ кун, çул хыççăн çул,
Кашни сехет туйнатчĕ тамăк евĕр.
Тертне те тумхахне курман мĕн чуль
Туятăп пурăннăн хама ик ĕмĕр.

Киле эп килтĕм. Пытăм Тукаса.
Унта кил-çуртăмăн юлман-мĕн йĕрĕ.
Анкартинче мăян çеç сулланса
Ларать. Вăл халь такамăн çĕрĕ.

Сахал-и куртăмăр эпир хуйха...
Аса килет... Ялта курак нумайччĕ.
Турат çине йăва тăвать, çуйхать...
Эпир ун чух - ача, кашни айванччĕ.

Пĕррехинче Имет çарранланса,
Çатăрланса йăмра тăрне хăпарчĕ.
Карттус çине çăмартасем хурса
Куракăн йăвине чăл-пар! тустарчĕ.

Ун тĕлĕнчех вĕçет, вĕçет курак,
Вăй-хал пулсан - çапса, тĕксе антарĕ.
Хăй чĕлхипе йĕрет, пыма хăрать...
Каллех канмасăр вăл турать пуçтарĕ.

Тăратăп эп пӳрт ларнă вырăнта.
Чĕре çине юлайнă çак ӳкерчĕк
Аса килет. Йĕрес килет чунтан,
Ура çаплах ярса пусма çӳçенчĕ...

Куçма кунта шăпланчĕ те пăртак,
Хăй чĕлĕмне каллех табак тултарчĕ.
Йăçенчĕк тĕтĕме çăтса пăк-пак!
Суранлă чĕрине кăшт лăплантарчĕ.

...Куçма киле килсен ял çыннисем
Сума суса курмашкăн пычĕç йышлăн.
Пĕççисене çапаççĕ тĕлĕнсе,
Кĕрсен - аллисене тăсаççĕ чыслăн.

- Ăçта çухалтăн?
- Сывлăху мĕнле?
- Эпир сана вилнех тесе шутланă.
- Леш, Çĕпĕрех ăсатрĕç-и элле?
Пĕр сас-хура пулмарĕ те-иç санăн!

- Каласа пар пире, инçет енче
Тĕнче мĕнле халпа сывлать халь-хаççăн?
Унта епле шавлаççĕ çĕр çинчен?
Ялта пĕр кушшансем хуçаланаççĕ.

- Çапла, этемшĕн ырлăх пулмаллах,
Çакна большевиксем шанса тăраççĕ.
Ана вара йăлт хамăр тумалла,
Кĕрешӳре килет вăл, халăх влаçĕ...

Ларать Эпти те, тимлесе тăнлать:
«Большевиксем» те «Халăх влаçĕ», «Ленин»...
Ял-йыш пек мар ун ашшĕ, урăхла,
Никам илтмен çĕн сăмахсем вĕреннĕ.

Лутра çурта килет ватти-вĕтти.
Куçма хавас - ун куçĕсем хĕмленнĕ.
Пĕрре хăй ашшĕне пӳлсех Эпти,
Кăсăкланса тĕпчерĕ:
- Кам вăл Ленин?

Куçма пăртакçă тăчĕ шутласа,
Сăмах чĕнмерĕ чĕлĕм паккамасăр.
Унтан, юлташĕ пек, пăхса тăрса
Ана çапла каларĕ васкамасăр:

- Ачам, итле, эппин, ларсах калам.
Анчах сана мĕнле-ха ăнлантарăн?
Эс çак ята асра тытсан ялан,
Ана, тен, ху та тĕл пулма пултарăн.

Ăна эп хам курман та курасса,
Çаплах асра пĕр тусăн сăн-сăпачĕ.
«Вăт çын!.. Вăт кĕрешӳçĕ, иçмасса!..» -
Тесе манпа юлташлăн сăмахлатчĕ.

Танмарлăхпа чĕр пусмăр тымарне
Епле кăкламалла? Ăçта вăл Чăнлăх?
Çаплах кунланă çын хăй ĕмĕрне,
Пĕлесшĕн çуннă вăл, анчах та - кăлăх!

Пĕлет иккен ку чух Телей çулне
Пĕри. Çав çын пулать те Ленин.
Курать, тет, витĕрех этем чунне,
Чăваш хутне те пулĕ кĕрекенĕ.

Ун майлисем пыраççĕ çĕнтерсе,-
Пĕрре килет, килет-ха, теççĕ, тăвăл.
Кив тымара тăпăлтарса илсен
Тинех эпир те сывлăттăмăр çăмăл.

16.

Трахвин пӳрте çил пек вĕçсе кĕрет.
Чĕлхи - яппăр, анчах та куçĕ - сăхă.
Вăл хуçине васкавлăн пĕлтерет:
- Имет Йăванч, ристан сывах... Пул сыхă!

- Мĕнле ристан çинчен ваклан сăмах? -
Чăл-чăл! пăхса илет Имет пĕр ăстрăм.
- Леш, хай, мĕнле чĕнетчĕç-ха?.. Куçма!
- Куçма?
- Куçма!
- Э-э-э, тинех астурăм.

Ыр-сывă килнĕ, тетĕн, Çĕпĕртен...
Паян мана-и иртнине мантарăн?
Тĕнче кассан ăна ăс кĕнĕ, тен?
- Йытта эс шăмă кăшлама-и чарăн?

Эп илтрĕм-ха Куçма çинчен хыпар:
Хурлать, тет, патшана, эккей, тăрлавсăр!
- Апла пулсан, Трахвин, мĕскер тăвар?
- Тĕнче касса, чăн, ăслăланнă майсăр.

«Çĕре чухăнсене кăна парас!
Эпир вăйпах илмешкĕн тивĕç ирĕк!»

Куçма сарать, тет, çакăн евĕр сас,
«Пĕрле чухне эпир те, тенĕ, çирĕп».

Телей çулне пĕлет-мĕн пĕр этем...
- Телей! Телей!.. Ара, ку - çĕнĕ юрă...
Çара Куçма - Телей Куçма! Пĕтен!
Çук, хăтăлаймăн ĕнтĕ эсĕ урăх!

Пăсасшăн ăнтăлатăн халăха...
Пăлхавçăсен шăпи - тĕрме те тамăк!
Эппин, влаça та хирĕç çуйăхать?
Çук-çук! Ăна эп иртĕхмешкĕн памăп!

* * *

Кушпан Имет тăрăхласа
«Телей Куçми» тесе каланă.
Ялта ят сарăлнă ансат -
ТЕЛЕЙ сасартăк çунатланнă.

Кив ят час тухĕ манăça,
Çĕнни - ĕмĕрлĕхе ку пырĕ!
Куçма йăлл! кулнă: пурнăça
Çĕн ят эрешлени те юрĕ.

Пĕри каланă - тарăхса,
Тепри - хисеплесе йăлл! кулĕ.
Кĕç пурте çитнĕ хăнăхса,-
Çапах та ячĕ çеç ун мулĕ.

Пулин!
Ĕрче, ТЕЛЕЙ ТАВРАШ!
Куçма ĕненнĕ: вăхăт юхĕ,-
Çавах пирте вăл, çут малаш,
Пăчланĕ ХАРАМПЫРЛĂХ ЙĂХĔ!

17.

Сенкер тӳпе кĕленче пек таса...
Ялта - ĕççи. Çынсем выраççĕ тырă.
Хăруш хыпар сасартăк сарăлса
Чĕресене çунтарчĕ урăм-сурăм.

- Вут-вăрçă тухнă! Акă тамаша!..
Хĕрарăмсем хӳхлеççĕ урăм-сурăм.
Кашни яла çитмешкĕн тăрăшать,
Хĕвел çинче пиçмест тек пилĕк-çурăм.

Вырма пикеннĕччĕ кăна чăваш...
Курсамăр: пичĕ-куçĕ ун салхуллă.
Çанталăкĕ - ĕçле кăна! - йăваш,
Çил хумĕпе сĕрлет сап-сар тыр-пулă.

...Хура хĕреслĕ канвертсем ютран
Илсе килеççĕ-çке инкек те хурлăх.
Этем суранланать, çунат вутра...
Ялта та пурнăçĕ хресченĕн юрлă.

Салтак юрри çаплах янрать ялта,
Куллен хŭхлет ача-пăча, хĕрарăм...
Чарăнасси те паллă мар малта,
Вăрçи хăрушă тĕлĕк евĕр вăрăм.

Черечĕпе ят тухрĕ Эптие...
Хĕрарăмсем куççуль тăкма пуçларĕç.
Куçма лăплантарать:
- Инкек тиет
Пире çеç мар, пурне те вăрçă шарĕ.

Эпти, сана калатăп: асăрхан...
Яш вăй-хална ахаль сая ан яр эс;
Пире вăл малашне те кирлĕ-ха,
Этем çилли çавах йŭçсе хăпарĕ...

Тантăшĕсем кĕреççĕ те пŭрте,
Эпти сĕнет кĕрекере ыр вырăн.
Тĕрленĕ тутăрсем уртса пурте
Кĕç-вĕç юрлаççĕ чи салхуллă юрă:

"Анатран тăвалла хăпарнă чух
Чĕн хăмăт пăявĕ татăлчĕ.
Чĕн хăмăт пăявне сыпа-сыпа
Вунă пŭрне вĕçне тăм илчĕ.

Вĕçтерсе яр шурă тутăрна,-
Ирттерсе яр çамрăк ĕмĕрне.

Вунă пŭрне вĕçне вĕре-вĕре
Хĕп-хĕрлĕ чĕреме шуратрăм.
Хĕп-хĕрлĕ чĕремшĕн йĕре-йĕре
Ик черкке пек куç (ă) ма пĕтертĕм.

Шур кăвакал чĕпĕ, ай, кăларать
Шур Атăлта ишсе çŭреме.

Пире атте-анне, ай, çуратать
Тĕнче тăрăх йĕрсе çӳреме.

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет,
Турăн турă лаши кĕçенет.
Эпĕр кунтан тухса, ай, кайсассăн
Пире атте-анне çиленет.

Çуранлă та тăман, ай, çул шăлать,-
Çултан аташасран хăратăп.
Кунтан эпĕр тухса, ай, кайсассăн
Пуçăм çухаласран хăратăп.

Кăвак кăвакарчăн вĕçнĕ чухне
Кунĕсем те пулчĕç тĕтреллĕ.
Самай эпĕр ӳссе çитнĕ чухне
Саманисем пулчĕç синкерлĕ.

Вĕçтерсе яр шурă тутăрна,-
Ирттерсе яр çамрăк ĕмĕрне".

18.

Çĕр йышăнать, çĕр эхлетет - тӳсет,
Йĕтре кĕлти хура ӳтне ĕнтсен.
Хаярлăх кунран-кун чуна хĕсет,
Чикки çук мар чи тӳсĕмлĕ çынсен.

Хĕлле е кĕрлĕ-çурлă - окопра.
Çу кунĕ те унтах салтак хӳшши.
Ылмашăнаççĕ сĕлкĕш юр, лапра,
Хăлаç та çук - сĕм вилĕмĕн ташши.

Йĕтре ӳлет, шрапнель шырать çынна,
Тупать те - леш ӳкет тăпра çине.
Раççей вăл аслă - калама кăна! -
Мĕн чуль çухатрĕ паттăр ывăлне.

Çине-çинех касать çавипелен
Вут вăрçă-харçă курăк пек рете.
Шинеллĕ халăх сайралаť куллен,
Кунран-кун иксĕлет çарти хевте.

Хура окоп е таната-пралук
Кичеммĕн карса илнĕ те çĕре,
Ака-суха тумашкăн вăхăт çук,-
Ахальтен мар туртса сурать чĕре.

Салтак вăл тупă ашĕ-и? Этем!
Çакна туйса мăнаçлăн калаçать
Фронтри сухаçă та, рабочи те,-
Вуланă май большевикла хаçат.

«- Пăчлантăр вăрçă! Уç, салтак, куçна,
Тăшман камне халь уйăрса эс ил.
Умри çап-çут малашлăха куçма
Кайран çĕклентĕр çĕр-шыв çийĕн çил!..»

- Вула, Иван, вула! Маттур, аван! -
Хушать тусне Эпти, çумне сиксе.
Тăнлаççĕ Ивана ушкăнпалан
Пĕр окопри ĕшеннĕ салтаксем.

Иван тени - Ефремов большевик.
Эпти янташĕ. Вырăс. Синкĕлтен. *)
Вăл йăлт пĕлет.
- Земляк, пуçна ан чик,-
Тесе шŭтлет. - Пуçна уссан - пĕтен!

Эпти унпа паллашрĕ вулăсра.
Пĕрлех вута та кĕчĕç. «Ик тăван»,-
Пуплеççĕ салтаксем. Çаплах ара.
Фронтри юлташ вăл - тăванран аван.

Пĕр татăк çăкăрне пайлать икке,
Хавасĕ те, хуйхи те - çурмаран.
Тăшман сана çыра тĕртет иккен,
Юлташ кăларĕ çавă çырмаран.

- Вула, Иван, вула! - хистет юлташ.
- Вула, вула! - пĕлесшĕн тепĕри.
Кĕрет поручик ăнсăртран... Шабаш!
Пĕр хушă шăпланса тăрать юри.

- Мĕскер кавар тăватăр эсĕр? Бунт?!
Чĕрре кĕрсе касса татать хайхи.
Салтак пите хыпать сасартăк вут,
Çĕтет хаçат вулаканнин чĕлхи.

- Пĕлетĕр-и мĕскер кĕтет сире,
Бунтовщиксем?! Пĕртен-пĕр трибунал!..
Поручик чăркăшсах кĕрет чĕрре,
Кобура патнелле тăсать вăл ал.

---

*) Хула ячĕ.

- Ефремов! Лекрĕн-и мана хайхи?!
Сана тахçан шыратăп, усала!..
Ытти...
Пит хăвăрт сӳтĕлчĕ çăмхи
Кĕтмен çĕртен, инкеклĕ япалан.

Пăшал сасси шаплатрĕ окопра,
Поручик ӳкрĕ хаплатса çĕре.
("Çав кирлĕ шаккала! Тин ĕç хутра,-
Таса çынна пăвасшăн ан çӳре!").

Кăнн! пăхса илчĕ йыш Эпти енне.
Пăшал кĕпçи тăрать йăсăрланса.
Пуçне таять Иван чăваш-тусне,
Инкек çинчен самантлăха манса.

Хурав тытас пулать, паллах, кусен,-
Патша йытти пулсан та, çын-çке-ха...
- Поручика лектерчĕç тăшмансем,-
Тени йăлтах каçарчĕ çылăха.

* * *

Çак самантран хăватлă юхăм
Туртма пуçларĕ авăра.
Эпти ишет хум çийĕн чуххăм,
Çил акăш-макăш çавăрать.

Çĕкленнĕ ĕнтĕ Аслă Тăвăл,
Эс, Çын, - турпас ун юххинче!
Йĕрки пырать иккен çапла вăл -
Асаплăн çĕнелет тĕнче.

Ёмĕрсене те кисретмелĕх
Ăçтан-ши пухăннă хăват?
Халь килсе çитнĕ те мехелĕ
Çĕнни хум хыççăн хум хăвать.

Пит мелсĕр авăрта ишмешкĕн,-
Мĕскер кĕтет иккен малта?
Вăрантăр паянтан - кам мĕскĕн!
Кам чухăн - телейне тупта!

19.

Мĕн халăх хĕвĕшет шур Чĕмпĕрте?..
Ăста кайма васкать пичче, аппа?
Ку - революци шăпăрĕ вистет
Çие кăларнă пур çӳппе-çаппа.

Унта-кунта илтетĕн шăй та çуй,-
Мещен ларать чӳречине хупса;
Шăлне хăйрать кĕтессенче буржуй,
Кив ырлăх килессе кĕтет купца.

Шаплаттарса пушмакĕпе чула
Утаççĕ хĕрлĕ салтаксем стройпа.
Сисет синкерлĕ саманта хула,
Паян кашни çакна туять чунпа.

Анчах та вăй сахалтарах çĕннин,
Халне суран хавшатнă унăнне.
Ахаль-и сурăх тирĕ витĕнни
Пуçне çĕклет, сирет тин маскине.

Йĕтре пек çурăлать хыпар пĕррех:
«Пăлхав çĕкленĕ шурă, сăхă чех.
Ак-ак килсе çитеççĕ Чĕмпĕре,
Мĕн пур Раççей тăшманĕ йăхĕпех».

Шарт сиктерет татах та çĕн хыпар:
«Полковник Муравьев-авантюрист».
Çар пуçĕ сутăнчăк? Ĕçсем начар.
Епле чарас сана, шуйттан чури!

«Варейкис калаçать Муравьевпа...»
«Вăт Муравьев те эсĕ - чĕмере!»
Сутăнчăка кĕтет пĕррех шăпа...
Çара алпах илеймĕн Чĕмпĕре».

«Пуласшăн çакă çĕнĕ Бонопарт.
«Наполеон» тесе сикет шавкка.
Ятна мăнаçлăн чул çине ан карт -
Картас килсен çынпа пĕрле танкка!»

«Пуçтах эсер шăпи тулайнă? Тав!
Çав кирлĕ вăрттăн çыртакан йытта!»
Кĕрлет-кĕрлет ват хулара шăв-шав,
Ас илтерет вăл хуранти пăтта.

Йĕри-тавра кумса çӳрет хавха:
«Капель - Киндякухра... Хĕсет, ара...»
Чухлать Эпти: Вăйсем тан мар çав-ха
Асар-писер пуçланнă хулара.

Е ирĕклĕх, е вилĕм - ак, епле!
Суйла, хĕрлĕ армеец, ил пĕрне!
Отряд çитсе çывхарчĕ ирпеле
Тăшман хуйхатнă станци хĕррине.

Çак саманта кĕтсе çав каç, чăнах,
Салтак мĕн хушă чăлăм куç хупман.
Алри винтовка пуçарать сăмах,
Вут чĕлхине кăна пĕлет тăшман.

Кĕç тупă та пуçларĕ калаçма,
Ўксе хаплатрĕ пĕр йĕтре, тепре...
Тăшман та тĕлĕрмест, çук куç уçма -
Тусан та тĕтĕм пирĕн тўпере.

Вакун хыçне чĕркуçленсе ларса
Эпти мăнаç офицера тĕллет.
Сасартăк леш ярать те кăшкăрса,
Кайса ўкет, кĕлте пек, месерле.

Тепре куçне хĕссе илет те яш,
Фельтфебель кўплетсе çĕре ўкет.
- Давай, давай! Эс пултаран, чăваш! -
Эпти юлташĕн сассине илтет.

Ку, паллă - Синкĕл вырăсĕ Иван.
Эпир пĕлни, Ефремов тенĕскер.
Пĕр татăка та çурмалла пайлан,-
Ефремов - тăванран та çывăх-çке.

Пирĕннисен те речĕсем сайра,
Чылайĕш хучĕç яш пуçĕсене.
Сасартăк... Чим? Мĕскер унта кайра?
Иван... пуçне усайнă та, чĕнет.

Кĕç ун патне шуса çитет Эпти.
- Иван! Сана та сăхрĕç-и элле?..
- Лектерчĕç, йытăсем! Каçар, эп тин
Кўпкеймĕп мурсене!.. Пĕлтер киле...

Ланк! кайрĕ тусĕн пуçĕ çавăнтах.
Эпти хуллен илсе хурать ăна.
- Каçар, Иван!.. Тăшман хирет татах,
Эп саншăн тавăратăп тăшмана...

Выртать Эпти. Винтовка аллинче.
Авăрласа хурать те çĕнĕрен

Пусать çеç курока... Тăпман енче
Асса çӳрет кĕç вилĕм-çĕмĕрен.

Перет Эпти, пăшал кĕпçи хĕрет.
Ун чунĕ кӳтнĕ... Йывăр ĕненме
Анчах вăй тан марри те куç кĕрет.
Тара та вăхăт çук шăлса илме.

- Чакас пулать! - çапла хушать приказ.-
Пере-пере куçас хула енне!..
Анчах чакма пĕри те васкамасть,
Пĕрин те ĕненес килмест чăнне.

...Çула тухать ĕшеннĕ пĕр отряд.
Лашаллисем те, çуранни те пур.
Пуçне усса пырса, кашни шутлать:
«Пăва еннех чакма тивет-çке, мур».

Хăшин куçне-пуçне катан пирпе
Туртса çыхайнă, хăшинне - алне.
Утмашкăн çăмăлрахчĕ пек ирпе,-
Хĕртен хĕвел ярать салтак халне.

Сыв чух та çăмăл мар та çуран çул,
Суранлисен тӳсес пулать ик хут.
Ыратнине ан пăх, çынран ан юл,
Атту çитсе таптать сана çич ют.

Паян-ыран пулса çитет ыраш,
Ăна чĕр вăй парса тăрать сĕткен.
Пиçет тыр-пул... Хăçан тухса вырас?
Алла çурла тытма инçе иккен.

Лĕп çил килет те - чӳхенет пучах,-
Ал сулнăн курăнать салтак куçне.
Туять: хир юлнă тăлăха пачах,
Хĕрарăмпа ача-пăча вĕçне.

Хурхух тавраш куран, кăвак чечек,
Кĕрен пиçен тăрри сапать кăвар.
«Хуçисĕр ашкăрар-ха!, - тенĕ пек
Туса лараççĕ ирĕкре кавар.

Каçса кайса юрлать çӳлте тăри,-
Çын юнĕ тăкăнни ăна мĕскер?

Йăви тĕрĕс-тĕкел ун пултăр-и,
Чĕп кăларса юрла-юрла ўстер.

Йĕри-тавра пăхса пыра-пыра
Хăй пĕлнĕ пек кашни пуплет хăйпе.
Тусан йăсăрланать, кĕрет пыра,
Тарпа ура та, хул та йĕп-йĕпе.

Ёмĕтсемпе çунатланма аван...
Сасартăк ыйхăран вăраннă пек
Каллех çĕкленнĕ тусана куран,
Вăрçса илетĕн атă хĕснипе.

Хăй саккунне тытса пырать хĕвел.
Ăна та çын хуйхи-суйхи тарам.
Шутлать хĕвел: «Хирте кирлех çĕмел,
Эппин, пĕрчĕсене халь хытарам».

Çавăнпала ĕçлет вăл пикенсе.
Анчах епле юраттарас çынна?
Вучахĕ вĕрирех - пиçет ĕнсе,
Сулхăнтарах - тĕнсе ларать ăна.

Çавăнпала тăвать вăл хăйĕннех,
Миллионшар çулсем ĕçлен ĕçне:
Çынсем хăйсем куç хывччăр ун енне,
Вăл йышăнмасть этемĕн кĕвĕçне.

Тăвать ут-çи хĕвелĕ хăй ĕçне,
Ун айĕнче утмашкăн çăмăл мар.
Вăл хыптарать çуран çынсен ăшне,
Тăкса тăрса кăвар çине кăвар.

Çăвар типет, вĕриленет тута,
Ăшри кăвар çиет вăя-хала.
Вăл мăкатать ăса та, тупата,-
Кĕрсе тухасчĕ çывăхри яла.

«Анчах унта пулсассăн шуррисем?..
Тен, ĕлкĕрнĕ çитме, ăçтан пĕлес?»
Шăнать чĕре, çакна аса илсен -
Эппин, çитес çĕре часрах çитес!

Ял хыççăн ял ларса юлать хыça,
Пĕри кăна тухмасть асран, ай-ай!..

Çывхарнă май памарĕ канăça
Эпти çуралса ўснĕ Саратай.

- Ывăнтарать! Аванччĕ те кансан,-
Тесе мăкăртатни те илтĕнет.
Çул хĕрринех тухса ларать васан,
Çеремлĕскер, ларса канма чĕнет.

- Привал! - пулать команда.
Çавăнтах
Ўкет салтак çĕре. Тăпра - вĕри.
Кĕççе пек курăк çийĕнче ун...
Ах!..
Хавасланса тапса илет чĕри.

Эпти пырса калать командира:
- Çуралнă ялăм манăн юнашар...
Кĕрсе тухсан мĕнле-ши? Мĕн, ара...
Самантлăха кăна киле... Каçар...

- Эс çапăçрăн пĕр шиксĕр... Начар мар...
Тав çакăншăн! Яратăп пĕр куна.
Анчах, асту! Пул сыхă та вăр-вар,
Ыран ирех çитетĕн Пăвана!..

20.

Чăлханнă курăка ура лăскать.
Ăрша вылять... Килет çил кассăн-кассăн.
Хир çулĕпе утать салтак, васкать,-
Çил евĕр вĕçĕччĕ çунат пулсассăн.

Тен, пăт таять пăшал та сăр шинель.
Анчах çынна халь çĕнĕрен вăй кĕчĕ.
Хавасланса пăхать вăл ял енне,
Ăна ман ен асамлăн туртрĕ кăчăк.

Тăван кĕтес çатанĕ те - тупра,-
Ача чухнех кунта çарран эс чупнă.
Çав кунсене чĕре манман, упрать,
Чун çўпçине ăна яланлăх хунăн.

Ак, курăнса каять малта арман...
Кунта ватти астăвасссах вăл ларнă.
Мĕн чуль хăлаçланман - çĕртен хăпман,
Хăрах çунаттине кăна хуçтарнă.

Сасартăк тайлăк пӳрт ума тухать,
Тăм пӳрт çумне сĕвеннĕ тăлăх сакă.
Шăнкăрч йăви те юлнă тăлăха...
Салтак тăван кĕтесĕ ĕнтĕ çакă.

Кивелнĕ алăка туртса уçса
Салтак кĕрет. Пăхать. Курать: хĕрарăм.
- Ах, турăçăм! - ярать леш кăшкăрса,-
Эпти, Эпти, сана аран палларăм!..

* * *

Хавхалану, куççулĕ хыçалта...
(Телейлĕ тĕл пулу килсе тухсассăн
Епле куççуль тăкмасăр эс чăтан?
Ăçтан тӳсетĕн сывламасăр ассăн?)

Сăмахсене йĕркеллĕ çыхиччен
Иртет самант, чылай çулталăк майлă.
- Эс, Синерпи, паян килте пĕччен.
Атте ăçта? - ыйтать Эпти васкавлăн.

- Ати ирех кайсаччĕ вăрмана,
Каç кӳлĕм, тен, калла килсе те çитĕç.
Лариванпа кайсаччĕç... Тав ăна,
Тăван пек çывăха хурать вăл питĕ.

Ати сывлăхĕпе кăшт аплах мар,
Хăй палăртасшăн мар мана, чухлатăп.
Çапах - арçын. Тупать çăкăр-тăвар,
Алли - ĕçчен... Шуралчĕ çӳçĕ - ватă.

Çӳçне шуратрĕ вăхăтсăр унне
Имет. Вăл уншăн пулчĕ кашкăр.
Çаплах илеспĕн açунне чунне,-
Сăмах та хирĕç эс ан чĕн, ан кăшкăр!

Çитерчĕ кантура хура çăхав,
Чĕнтерчĕç те унта, тĕпченĕ çирĕп.
Çапах турри ун майлă пулнă, ав,-
Сăлтав çуккипеле кĕç илчĕ ирĕк.

Ыр-сывă таврăнчĕ ати киле.
Леш, кашкăрĕ, шăлне шаккать те... Пирĕн
Кĕç чухăнсем çĕкленчĕç ку тĕле.
Халь хăй çине вăл витнĕ сурăх тирĕ.

Анчах та тикĕс мар çаплах тĕнчи,
Паян - капла, ыран мĕнле вăл пулĕ?
Мĕскер кĕтет иккен çав мал енче?
Äçта илсе çитерĕ Чĕмпĕр çулĕ?

Шел, асаннӳ те çуккă... Эс кайсан
Чирлерĕ те, нумай та выртаймарĕ...
Епле кĕтетчĕ вăл, пĕлесчĕ сан! -
Яту ялан чĕлхи çинчен каймарĕ.

- Эппин, апла-ха сирĕн пурнăçсем...
Ялта мĕн хыпарсем? Мĕнле сывлатăр?
- Мĕскер курас, килсессĕн шуррисем?
Хавха çӳрет...
- Вăхăтлăха чакатпăр...

Чăтмаллисем нумаях мар тата...
Пĕлсенччĕ эс! Раççей çилли çĕкленчĕ.
Çĕн самана патне çул кăтартать,
Пĕр ăслă Чĕмпĕр вырăсĕ, вăл - ЛЕНИН...

- Каллех каятăн-и вăрçа, Эпти? -
Пӳлет ун арăмĕ, вăл кăшт шикленнĕ.
- Каятăп! Кĕрешӳ çĕкленнĕ тин,
Ăнланччĕ, Синерпи, пĕлсен - çиленмĕн.

Телей выртать-ха пирĕн сăпкара.
Юнать пире тăшман, итле, тăванăм.
Çӳлтен çумасть вăл, çумăр пек, ара,
Çын аллипе çĕн пурăнăç тăваймăн.

- Эппин, каях... Чармастăп эп тытса...-
Каларĕ Синерпи хуллен, сăпайлăн.
Кĕç чуп тăвать Эпти, ыталаса,-
Ун аллисем ачаш та пысăк, вăйлă.

21.

Мачча кашни çинче - юман пăта,
Сикет сăпка - сăвапла унăн ĕçĕ.
Ку - Синерпи. Ача вăл йăпатать
(Телей тавраш хунатăр вĕçе-вĕçĕн!)

- Аçу сан кайрĕ вилĕмлĕ вăрçа,
Совет влаçне хастаррăн сыхламашкăн.

Ёнен: каллех килет вăл çаврăнса,
Тăшмансене туртса пăвать те акă.

Унччен... Унччен йăлтах тӳсес пулать...
Çăпка юрри юрлать çап-çамрăк арăм.
Ана ăнланнă пек, ача кулать.
Уй амăшĕ хайлать çунатлă çаврăм:

Ача каять пит лăпкăн тĕлĕрсе,
Ун ыйхине ачашшăн хӳтĕленĕн,
Пăхать ыр вырăс ăшшăн тинкерсе -
Хаçат çинчен касса кăларнă ЛЕНИН.

22.

Çĕрле. Кукăр мăйлă шур уйăх ишет,
Ана илĕртет вĕç-хĕррисĕр инçет.

Чăмать те сирет умĕнчи хумсене;
Пăхма вăхăт çук ун каçхи ял çине.

Шур уйăх чăмсассăн - реххет йăх-яха,
Вăл тĕксĕм тĕнчешĕн ларса сăх сăхать.

Сасартăк сас кайрĕ çурса Уйкаса,
Усал йытăсем те пытанчĕç тарса.

Тапаççĕ, çапаççĕ... Пуçларĕç вăрçма.
Янрать урмăш сасă:
- Уç, сволăч, Куçма!

- Ак, çитрĕç! Пĕтерчĕç! - туять Синерпи. -
Тинех ярса илчĕ тăшман серепи.

Тăрсамччĕ, атиçĕм! Кĕрет вăр-хурах!..
Сехри хăпнă кинĕ васкарĕ: часрах!

Шарт! сикрĕ Куçма, ыйхăран вăранса,
Чĕтрет алăк кĕç-вĕç каяссăн ванса.

Çăпка та чĕтренчĕ - вăранчĕ ача,
Йĕмешкĕн пуçларĕ - пĕтерчĕç пачах!

Илсе пăчăртать Синерпи пепкине, -
Ан тив, вĕлерсен те, вĕлерччĕр хăйне.

Куçма кинне хушрĕ:
- Лăплан, Синерпи!
Çук пирĕн пĕр айăп... Пуçланчĕ, эппин...

Чухларĕ Куçма сасăранах пĕрне -
Ĕçсе тискерленнĕ Имет Петĕрне.

Илтет вырăсла та пĕр-икĕ сăмах, -
Элле шуррисем те çитнех-ши, чăнах?

Сисет: ял кушганĕ пăтраннă тĕлли,
Май кĕтнĕ кулакăн çĕкленнĕ çилли.

- Уçмастăп! Тасалăр! - сас пачĕ Куçма, -
Епле намăс мар ват çынпа вăрçăшма!

- Ăçта ывăлу сан, ват супнă наян!
- Эпти килте çук-çке... Пĕлетĕр...
- Суян!..

- Уç тенĕ! - хушаççĕ. -
Çитет палкаса!
Атту, ак, тăкатпăр пĕррех тăлпаса!

Чĕтрет юман алăк, хыт чыпрĕç тултан -
Эшкер ярса илнĕ е лум, е пукан.

Пĕррех шатăртатрĕ хăма çурмаран,
Тискер хураха алăкпа-и чаран!..

- Тинех шалчу тулĕ, ват супнă мучи! -
Çиллессĕн каларĕ Иметĕн ачи. -

Яла пăтратмашкăн вĕрентĕп, хăта!..
Кăна тĕп тăвар та, каяр Совета...

... Касать çурла-уйăх тискер пĕлĕте,
Çыхать пĕлĕтрен кĕлте хыççăн кĕлте.

Ун хыççăн юлать сурат хыççăн сурат -
Тӳпе, пусă пек, çаралсах-мĕн пырать.

Халь уйăх чухларĕ, курса çĕртине,
Туять вăл этемĕн хуйхи-суйхине.

Час, çитĕ самант! Чĕтĕре вăр-хурах!
Тавралăх тек пулмĕ, тăпра пек, хура.

Е уйăх çитмест-и? Çуталĕ тӳпе,
Тасалĕ кăварлă хĕвел çутипе.

Ун чух хăтăлаймăр пĕри те тарса,
Çав çутă сире тĕп тăвать çунтарса.

ИККЁМЁШ ПАЙЁ

Аça çапса кисренчё тёнче,
Тасалчё çёр çав вут ăшёнче:
Тивёçсёре çунтарчё пушар,
Тивёçлине кӳрет пархатар.

П. Хусанкай.

1.

Тумхахлă Вăхăт çулё. Ун лаши
Юртать хăй еккипе. Тёнче - илемлё.
Ырма пёлмест ут ёмёрсем хушши,
Вырнаçнă кӳмине... мёнпур этемлёх.

Кукши, яшши те ларнă юнашар,
Кӳме шăвать ырми-канми пёр вёçём.
Асли калать:
- Пит хăвăрт ан юрттар!..
Яшши кăларттарасшăн çил те çиçём.

Шап-шур сухаллă Вăхăт шарт! сёвет
Утне чăпăрккапа, хистенё майăн.
Леш хӳрине çеç пăтратса илет, -
Пăсне вара хушмасть - ан тăвăр айăп!

Чарни е хистени - пурё пёрех,
Лав çинчисем пăшăрханаççё кăлăх.
Калаççё ваттисем: «Хуллентерех...»
Яка янахлисем - чараксăр халăх.

Ватма ватать те Вăхăт тимёре,
Çынна юраттармашкăн çăмăл мар çав.
Çул. Вăхăт çулё. Пысăк кӳмере
Ларса пырать Этемлёх. Вăхăт- лавçă.

* * *

Ак, Синерпи те, ватă мар çулпа, -
Ларать кӳме çинче хӳтлевсёр, тимсёр.
Питех хуллен шăвать пек çавăнпа.
Мёскер кётет малта? Лавçи-çке чёмсёр.

Çапать кётмен çёртен сулăнкăна,
Астумасан, кёç сирпёнсе те юлăн.
Хăналăх çамрăклăх - пёрре кăна,
Ана хыпса илейнё вут та çулăм.

Кушпан тăшман асать те ихёрет,
Вăл Вăхăт лашипе хуçаланасшăн:

Пĕр айăпсăр çынна юнать, перет,
Çаплах урать пĕтмешкĕн пӳрнĕ влаçшăн.

Куçман чунне те илчĕç йĕксĕксем,
Ял-йыш пĕрле хӳхлерĕ:
- Лăпкă çывăр!..
Куççуль тухать куллен, аса илсен,
Пĕччен чуна чăн тĕнĕри пек тăвăр.

Пĕртен-пĕр савнăçĕ ун - сăпкари ачи.
Çитменнине йăлт ашшĕ сăнлă Йăкăш.
Ун халлĕхе тӳпи те - пӳрт маччи;
Кил шанчăкĕ - Эпти асра пĕр тăтăш.

- Эй, Ырă Турă, парччĕ сывлăхне,
Эпти çартан киле ыр-сывă килтĕр... -
Тет Синерпи Йăкăшпала чухне...
Вĕçет çӳле шăналăк вĕлтĕр-вĕлтĕр.

Кĕр иртрĕ те. Тулта шаккать хĕлле;
Пĕр каçĕ те çулталăк евĕр вăрăм.
- Кун-кунлама мĕнле-ши пĕлмелле? -
Хăйпе-хăй пуплешет пĕччен хĕрарăм.

Мĕн тамаши? Неушлĕ тăмана?
Кĕрет пӳрте... ача уланă сасă.
Е хăлхана çак туйăнать кăна?..
Тăнларĕ Синерпи пĕр сывлăмасăр.

- Çук, çук, улталамасть, ара, хăлха...
Тухса пăхас - унта мĕскер амакĕ?
Каларĕ пĕчĕк Йăкăша:
- Чим-ха...
Ан йĕр те ан хăра... Эп йăпăрт, акă...

Тухать - пусма çинче... алри ача.
Такам таса кипкепеле чĕркенĕ...
Шăннипеле çухăрашать анчах...
- Ара, вилет вĕт!
Кам-ши «ăс çитернĕ»?

Пулаççĕ тĕнчере этемккесем!
Ури - çарах!.. Тапса та сирнĕ шĕвĕр!
Çак мĕскĕне хăй аллине илсе
Çĕклерĕ Синерпи, чăн амăш евĕр.

Ача шăпи хускатрĕ чĕрине,
Юпа пек хытрĕ: камăн чунĕ хăрăк?!.
Питех асăрханса хайхи тинех
Пĕлеспĕн пулчĕ çав çынна сăн тăрăх.

Äçта унта?!. Шăнать ача алли...
Çапах йăшăлтатать хĕп-хĕрлĕ чăмăр.
Кур: мăйĕнче пĕртен-пĕр тур палли,
Куççульпеле йĕпеннĕ пичĕ ăмăр.

Кутник сакки çине хурсах вара
Äна тип-типĕ кипкепе чĕркерĕ.
Ача йĕме пăрахрĕ алăра, -
Эппин, пĕтме пŭрмен-ха, сывă, чĕрĕ!

Кама кайса калас? Мĕскер тăвас?
Тен, амăш тупăнĕ? Тупăнмасассăн?..
«Ŭстер... ŭстер...» - хушать шалти пĕр сас,
Эпти, Эпти мĕн калĕ таврăнсассăн?

Калаçрĕ Синерпи тупăлчапа:
- Пăртакçă пур-ха телейŭ те - пурăн!
Мĕскер тăвас пулать иккен санпа?
Пăлханнипе сăрăлтатать çан-çурăм!

Халь чăпă-чăп! тăвас пулать сана...
Эй, сăмсуна мĕскер тытатăн каçăр?..
Çын сассине ача тăнлать - сăна!
Ак, Синерпи шыв çакрĕ тăхтамасăр.

Шыва кĕртсе тасатрĕ.
- Çи, айван!..
Хăй кăкрине шĕвĕрккене вăл пачĕ.
- Курак тесе чĕнес, эппин... Аван...
Эй, Йăкăш, тăнласам, çапла ун ячĕ.

Ёмсен-ёмсен лăш! кайрĕ çывăрса -
Асапăн вĕçĕ пулса тухрĕ ырă.
Пĕр сăпкана пепки çумне хурса
Вырттарчĕ Синерпи. Пуçларĕ юрă:

«Йăкăшшала Курак... Мĕнешкел...
Çыврăр, ыйхăр тутлă пултăр-çке.
Этем чĕппи нихçан та курмĕ хур,
Ик çын чĕри тапсассăн пĕрешкел.

Ай-хай, нумай-пĕтет, сахал - çитет,
Пĕрле пурăннине мĕн çитет.
Çын сăмахĕ хыççăн хăваласан
Этем ăсне-пуçне тутăх витет.

Çак тĕнчере, патька, тĕрли пулать,
Ун пĕр хĕрри - йĕрет, тепри - кулать.
Шăла çыртса хамăр тăрăшмасан,
Чи çутă ĕмĕт те ĕмĕтпех юлать.

Хĕн-хур курать этем чĕппи ютра,
Атте-анне çĕрĕ - паха тупра.
Унран хакли мĕскер пур, этьсемри, -
Куç пек ăна эс сыхласа упра.

Атте-анне пулать-мĕн тĕрлĕрен,
Пĕччен хирсен, чӳлмек пек, çĕмрĕлен.
Ята-чыса сутмаççĕ пасарта,
Калаçтарса илеймĕн çĕнĕрен.

Аттесĕр тăлăх вăл - çурри кăна,
Аннесĕр тăлăх вăл - пусать чуна.
Тепри ют çын та - тăванран тăван, -
Этем тени, упрас пулать чысна».

2.

Ура сасси... Ку кам-ши? Шак хытан
Пĕрре сехре хăпса шар курнă хыççăн.
- Эй, уç-ха, уç! Ку - эпĕ, Лариван...
Илтейрĕ Синерпи питех те уççăн.

- Ăçтан эс, кӳршĕ?.. - терĕ Синерпи.
- Ан тăр ыйтса, йăлтах кĕрсессĕн калăп...
Ыр çын сасси-çке... Савăнчĕ кин пит,
Хуллен çеç уçăлчĕ юсавлă алăк.

- Иртех, иртех тĕпелелле, шала...
Калаçрĕ вăл хуллен, пăшăрхануллăн.
- Мĕн çăмăлпа? Мĕнле хыпарпала?..
Ку чух епле тӳлек те лăпкă пулăн?

Аран-аран палларĕ Синерпи
Хăй кӳршине: чĕр куçĕнчен палларĕ.
Хура сăхманĕ те çири кĕпи
Шалпартарах, сухал та пуснă мар-и.

- Çапла çав, синкерленчĕ самана...
Пире Имет кăтартнипе йĕрленĕ.
Киле пырса тустарнă. Ну, мана
Вăл хĕрлисен хутне кĕрет çак тенĕ.

Вара тармашкăн тиврĕ вăрмана,
Çавăнтанпа çапкаланса çўретĕп.
Тараççĕ, тет, кăшт кĕчĕ хăлхана,
Тин çеç çитейрĕм-ха паян киле те.

- Ати пуçне-çке çирĕç, эсрелсем...
- Çапла, илтсеччĕ!.. Эй, мĕнле тўсетĕр!..
Эй, мăшкăл, мăшкăл! Хĕрлисем килсен
Йăлтах явап эс тытăн, аскăн Петĕр!

- Мана тепле хăварчĕçĕ - пĕлмеп.
Алри ача... Пулсаччĕ питĕ йывăр...
... Ача пуçларĕ вăранса йĕме,
Хускатрĕ Синерпи ун сăпкине:
- Е, çывăр...

Пĕр сасăпа хускалчĕ тепĕри.
- Кунта элле йĕкĕрешсем-и санăн?
Çĕн йĕрпеле куçать сăмах тĕрри.
- Çапла пулать пуль... Иккĕшĕ те хамăн...

Вара йăлтах каларĕ пулнине.
Ларивана ку тĕлĕнтерчĕ мар-и.
- Пĕлместĕн, Синерпи, эс ху камне...
Эс - паттăр çын, - тесе ăна мухтарĕ.

- Мĕн паттăрĕ унта? Ача пĕтет...
Çакна курсассăн кам чĕри тўсейĕ?
Тен, амăш тупăнĕ... Пулать кĕтрет...
Тупăнмасан вара... çапла телейĕ...

Кĕтетпĕр кунĕн-çĕрĕн ыр куна,
Эпти тĕрĕс-тĕкел çитинччĕ, тетпĕр.
Хăçан майлашăнать-ши самана?
Элле çаплах хĕн-хур курса пĕтетпĕр?..

- Ытла ан çун-ха эс, ан пăшăрхан,
Пăкки кĕç шанĕ шуррисен, ак, курăн;
Эп илтрĕм, ĕнтĕ ирĕкре Хусан,
Эсрелсене тустарнă урăм-сурăм.

Сĕве çинче те панă вĕсене
Хăлха чикки - пĕлекенсем каларĕç.
Космовский халь пухать, тет, çынсене...
Улатăра-мĕн çитнĕ унăн çарĕ.

Кĕç Чĕмпĕре килсе çитет, тет, Гай...
Эппин, вĕсемпеле пĕрлех Эпти те...
Калать çеç Синерпи тĕлĕннипе:
- Кай-кай!..
Шантарчĕ Лариван:
- Çапла, пĕлетĕп...

- Космовский кам çав? - ыйтрĕ Синерпи.
- Çар пуçĕ вăл пулать... Пур ун кăварĕ...
Сăпайлăскер... Анчах хăюллă пит, -
Курман та хам, пĕр пĕлĕш çын каларĕ.

Микишинсем*) пулать. Учитель, тет.
Вĕреннĕ Чĕмпĕрте. Патвар вăй-халлă.
Çукра-мĕн ўснĕ... Чăвашла пĕлет.
Çук çын хутне кĕрет-тĕк - пирĕн майлă.

- Леш «Кай» тени кам пулчĕ-ха тата?
- «Кай» мар-ха, Гай... Эрмен, ара, çарпуçĕ.
Хыт тустарать, тет, вăл та çич юта,
Чухăнсемпе асаприсен чăн тусĕ.

Вăрах пит пычĕ ку сăмах-юмах,
Синерпинне куçне вăл уçрĕ лайăх.
- Тĕп сакайри пек-çке эпир, чăнах, -
Калать тĕлĕннипе. - Чи тĕттĕм халăх.

Пĕлни-илтни пусарчĕ ун чунне, -
Умра выртать пек çул яка та тўрĕ.
- Ăçтан пĕлес эпир ялта чăнне, -
Ларивана вăл чĕререн тав турĕ.

- Эп кайрăм-ха, эппин... Ну, юл чипер...
Курман-илтмен мана, асту... Чухлатăн...
Ачусене тĕрĕс-тĕкел ўстер...
Пехиллесе ăсанчĕ ырă ватă.

3.

Тумхахлă салтакăн кун-çулĕ, -
Утти хавшалать-и-ха ун?

---

*) И. С. Космовский çуралнă ял ячĕ.

Мĕн чуль хура тар юхман пулĕ!
Мĕн чухлĕ тăкман пулĕ юн!

Пăртак çеç пуласчĕ те кăтăш, -
Ырсан та ан çывăр. Ан ман:
Хăрушлăх çумрах çӳрет тăтăш,
Ăш ыйăх та саншăн - тăшман.

Туса çухатни те, суран та,
Чакни те хĕсет кăкăра.
Чăна çулăм витĕр куран-тăк, -
Йăлтах эс тӳсетĕн вара.

Çĕклет сана шанчăклăн, шуххăн
Асамлă сăмах: çĕнтерӳ.
Умри йăх-яха хурçă юхăм.
Пырать çĕмĕрсе пит хĕрӳн.

Мăн çул та, вăрман та хăвалăх,
Тӳремлĕх, уй-хир е васан -
Выртаççĕ кичеммĕн те тăлăх
Салтакăн чĕри çунмасан.

Çав вут Эптие те çитерчĕ
Каллех Саратай еннелле.
Шалта унăн пысăк-ха терчĕ, -
Тултан - чĕри чул темелле.

Пĕлмест вăл: мĕскер ăна кĕтĕ?
Çуралă ялта - шуррисем.
Çунать те - тухмасть ăшран тĕтĕм,
Хальччен курнине ас илсен.

Ку чух ашкăнать пулĕ Петĕр, -
Çынна каçарать-и Имет?
Эпти ăçтине те пĕлет-тĕр -
Ял кам ăçтине йăлт пĕлет.

Мала талпăнать ĕнтĕ акă
Кăварлă чĕри. Шалти сас
Хушать тек: «Хăçан-ши атака?
Часрах ял-йыша хăтарас!»

Нумай кĕттермерĕ. Пуçланчĕ!
Шур çар тарса кĕчĕ яла.

Вăй пачĕ пурне те пĕр шанчăк,
Асамлă, йăлттам япала.

Ку - ирĕклĕх. Унăн кăварĕ
Хĕрсе ăшăтать чĕрене.
Мĕн мăшкăл хальччен вăл курмарĕ!
Мĕн чуль амантман пĕр-пĕрне!

Анчах та çĕкленчĕ çил-тăвăл,
Çĕре вистерет вăл кăран.
Кам юн ĕмсе ларнă, кам - хăвăл, -
Шăлса сирпĕтет вăл, хăра!

Сасартăк атака пуçланчĕ:
Сапать пăрçине пулемент.
Мĕн чухлĕ яш-кĕрĕм йăванчĕ -
Вут-çумăр хĕвет те хĕвет.

Чакать хĕрлисен çуран çарĕ
Калла, çывăхри васана.
Эпти чунĕ кӳтрĕ, вăркарĕ,
Вăл темĕн шутланă - сăна!

- Сукмак та, çатан та хуралтă -
Йăлт пĕлнĕ-паллана тавраш.
Тăван килĕме те куратăп,
Ярсамăр, Космовский юлташ!

Тăшман йăвине тустармасăр
Килместĕп, ĕнен, командир!..
Çĕкленчĕ Эпти. Тăчĕ каçăр.
- Кам эсĕ?
- Çак ялăн ачи!

Тинкерчĕ те полк командирĕ
Хăюллă çара янаха,
Каларĕ çеç çирĕппĕн:
- Юрĕ!
Анчах та, асту, асăрхан!

Йĕп утă ăшне ӳкнĕ евĕр
Çухалчĕ Эпти куç кĕрет.
Тăван çĕр ăна хĕрхенет-тĕр,
Хăйпе, çулçăпа та витет.

Эпти шăвăнса яла кĕчĕ;
Сукмак ертсе пычĕ мала.

Тăшманăн пăрça евĕр вучĕ
Арман тăрринче пулмалла.

Çаплах вăл питех те хаярччĕ,
Вĕретчĕ-ха вут чĕлхипе.
Кушак пек, Эпти çывăхарчĕ
Шуса анкарти хыçĕпе.

Сасартăк иртет вутлă çумăр...
Мĕн пулчĕ иккен кусене?
Пĕри кăтартать çуле чăмăр...
Шаккать-çке, ара... хăйсене.

Хăватлăн «Урра!» янăрарĕ,
Пуçларĕ шур ушкăн тарма.
Ял пирĕн алла куçрĕ мар-и -
Халь çук çак вăя пусарма.

Эпти, тем, пачах ăнланмарĕ, -
Васкарĕ арман тăррине.
Чутах такăнса таптамарĕ
Пĕр шур вилене, тепĕрне...

Çуле пусмапа çĕкленсессĕн
Пăхать те... (Малтан палламан).
- Эпти, ку эсех-çке! - тесессĕн
Тин пĕлчĕ камне: Лариван!

- Ара, эс герой-çке, тăванăм,
Епле сиксе тухрăн капла?..
- Нумай курманни... Ну, аван-и!
Эпти, эс мана ан ятла!

4.

Лăпкăх ял сывларĕ, хăрушă
Тăшманăн хăвачĕ йăнсан.
Тулта йăсăрланчĕ пĕр хушă
Çаплах тĕтĕмпе сăр тусан.

Кунта Эптие курчĕ мар-и
Космовский, патвар командир.
Ăна вăл хĕрÿллĕн ырларĕ:
- Маттур, пултаратăр Эсир!

Ярт! пулчĕ Эпти. Вăл чысларĕ
Çарти йĕркепе аслине.

Кушак чĕрине тăрмаларĕ -
Пĕлтерчĕ чăнне, ак, тинех:

- Эп... мĕн... Тăнласамăр... Каçарăр...
Эп мар-ха геройĕ, эп мар...
Янташ Лариван вăл... Паллашăр...
Ăна эртелпе чыс тăвар!

Эпти аслине тĕлĕнтерчĕ,
Калать такăна-такăна.
Тинех халь вĕçленчĕ ун терчĕ -
Пит тимлĕн итлерĕç ăна.

- Апла Лариван иккен паттăр,
Мĕнех? Чĕререн тав ăна!..
Мучи хăй кунтах-ха - туятăр -
Сăпайлăн йăлл! кулчĕ кăна.

Тухать те мала ырă ватă
Калать:
- Хăвăра тавтапуç!
Вăй-хал аллăмра эп туятăп,
Паллах, кăвакарнă та пуç.

Чĕре хушнипе эп тăватăп,
Шалта тарăху хĕрнĕрен...
Каларĕ ансат сумлă ватă, -
Сăмахĕ тухать чĕререн.

Итлерĕ ватти те, вĕтти те
(Ял-йыш ĕнтĕ илнĕ сырса),
Хĕн тӳснĕ çын савăннă питĕ,
Кашни кĕтсе çитнĕ ырса.

Пĕр вăй тепĕрне хупласассăн
Хăйпе-хăй унанчĕ пуху.
Сăмах хускатать кассăн-кассăн
Хастарлăх, ылхан, тарăху.

- Çапса пăрахас! - тарăхаççĕ
Курса тыткăнри йăх-яха. -
Шар курчĕ сиртен Совет влаçĕ,
Кивви акă - пулнă паха!

Лешсем шарламаççĕ... Пуç уснă,
Аманнă пит-куçлă, тискер.

Малта - çилĕ сĕрĕмĕ пуснă
Йыш пуçлăхĕ - вырăс-эсер.

Пĕри лекеймен иккен - Петĕр,
Хурах, тухса тарнă ялтан.
Ун çылăхне пурте пĕлетĕр,
Çырса кăтартсаччĕ малтан.

Паллах, вăл та, ку та - пĕр çӳпĕ,
Тăвас пулать суд саккунпа.
Кам мĕн шыраканĕ - йăлт тупĕ, -
Кашни килĕшет çакăнпа.

- Пĕр çын пек, телейшĕн кар тăрăр!
Пăваймĕ тăшманăн алли!
Хăюллăн çĕкленĕр! Ан хăрăр!
Çапла... Нумай мар кĕтмелли!

Чан пек янăрарĕ Космовскин
Чуна витерен уç сасси.
Чăваш чунĕпе ăнланать тин,
Килет ун çаплах итлесси.

Кунтах Синерпи те тăнларĕ
Çак çирĕп, патвар этеме.
Пĕр май куçĕпе тем шырарĕ.
Ак, тупрĕ!..
Хăймарĕ чĕнме.

- Эпти!
Эс кунтах-мĕн... Эй, пӳлĕх!
Чăнах-и куратăп сана?
Хăй тек шарламарĕ: «Çын кулĕ...»
Куçне сиктермесĕр сăнать.

Тăрать леш курмасăр, пĕлмесĕр...
Çапла... Лариванăн та кунтах.
Шаккать Синерпин тӳсеймесĕр
Чĕри çеç...
Шăвать маларах.

Патнех çывăхарчĕ.
Кăлт! чыпрĕ
Хыçран Эптие аллипе.
Чĕри патĕнче темĕн йăшрĕ,
Эрленчĕ, йĕрес килнипе.

- Ку эс, Синерпи-çке... Чĕкеçĕм!..
Пĕлетĕп... Пыратăп хамах...
Кунтах, ак, пăртакçă кĕт эсĕ, -
Сасартăк кĕрет ытама.

* * *

Пĕрне-пĕри курчĕ те мăшăр,
Сиксе ăнтăлайрĕ тинех.
- Ку - мăшăрăм манăн, паллашăр, -
Каларĕ Эпти аслине.

- Чăнах-и? Эппин, саламлатăп
Телейлĕн тĕл пулнă ятпа!
- Мĕн тейĕн? Çапли ку çапла та...
Кĕрсе чыс тусамăр... йышпа.

- Мĕнех-ха? Питех те ку лайăх!
Канар та - каллех малалла!
Пулмасть те вăрах тăхтамалăх,
Пире, Синерпи, ан ятла.

Тăшман тилĕрет. Пирĕн тивĕç -
Ăна хŭтерсе ярасси.
Çук, унсăр алсем канăç пĕлмĕç...
Çак пулчĕ аслин каласси.

Калаçрĕ вăл туслăн та çирĕп.
Эпти патне çитрĕç килне.
Кĕççе пек çерем çинче ирĕк -
Вырнаçрĕç кунтах, çурт умне.

Хăна - çурт тулли. Чупкаларĕ,
Пĕлмерĕ ларма та тăма:
Паян Синерпин савнăç мар-и, -
Тупать кŭршĕрен кĕç хăйма.

Путек Лариван пусса пачĕ
(Ялта ыр çынсем пур та-ха),
Вĕрерĕ сĕткенлĕ апачĕ -
Вăй кĕтĕр часах салтака!

Серте çуса ячĕ. Ак, турăх.
Тухать килте тунă сăра.
Йăлт пулчĕ - мĕскер кирлĕ урăх?
- Тавси, юлташсем, пурсăра.

* * *

Килне пырса çитсессĕн чи малтан
Эпти пĕччен шала алхапăл кĕчĕ.
Чĕри тапса тухас пек кăкăртан,
Хумханнипе вут пек пĕçерчĕ пичĕ.

Ун çумĕнче - ыр мăшăр Синерпи.
Кур - сăпкара çывраççĕ икĕ пĕвĕр.
Мĕскер тăвайăн: пурнăç урапи
Хăй йĕрĕпех кусать, иртет те ĕмĕр.

Чечек çурать хăлхаçакки хирте,
Чĕп кăларать улатакка та карăш.
Кашнин хăйĕн нупи - ыйтмасть пиртен,
Мăнаç этем! Çакна пĕлме эс тăрăш!

Пăхать Эпти пĕрре - сăпка çине,
Тепре - мăшри çине, ним ăнланмасăр.
- Ăçтан ку йĕкĕреш? - ыйтать тинех...
Сасси сасартăк тухрĕ унăн вăйсăр.

Итлет те Синерпи кулать. Вара
Мĕн пулнине питех кĕскен каларĕ.
- Чăнах маттур-мĕн эсĕ!..
Хăй вара
Ачисене ачашшăн ыталарĕ.

Савăннипе кĕç тухрĕ каялла,
Ик аллинче ун ик чăваш юп курчĕ, -
Юлташсене тухса кăтартмалла,
Чĕнсе кĕме тăвăртарах ун пӳрчĕ.

Çерем çине тухать те кил хуçи,
Тӳрех килсе каять пӳрт ум илемĕ.
Ача-пăчасăр пурнăç - пурнăç-и?
Алри ача курсассăн кам киленмĕ?

Çитменнине йăтса тухсан салтак, -
Хальччен пăшал тытса йăлт хытнă алă.
Ăна, тен, ăмсанать кашни пăртак, -
Е хăй килне аса илет, ку - паллă.

Хавасланса каять асли, яшши:
Ку сан-и иккĕш те? Пуян-çке эсĕ?
Калать пĕр вырăс:

- Оба хороши!
Тĕплет тепри:
- Сăнран та ашшĕ тĕсĕ.

Ватăрахxи чарать:
- Ан куçăхтар!
Ача - ачах. Ан тив выляччăр, кулччăр!
Çавна кала эс: курччăр пархатар,
Ыр-сывлăхлă, пиртен телейлĕ пулччăр.

Кулса кăна тăрать Эпти. Кунта
Кĕç Синерпи те тухрĕ: ырă мăшăр!
Чарса лартасчĕ çакă саманта!
Çил кун çинчен калаçрĕ пăшăл-пăшăл.

Часах сăмах пуçларĕ комполка:
- Юлташăмсем! Мĕскер-ха, ĕмĕт тултăр!
Пуласлăхшăн йăтар, эппин, курка!
Çак çĕн ăру пин хут телейлĕ пултăр!

...Команда янăрать - васкас пулать.
Каять ялтан тухса шинеллĕ халăх.
Ватти-вĕтти те ăсатать çула,
Телей сунать ăна вăрман пек алă.

5.

Тин çавăрса çитерчĕ Эптие
Салтак шăпи тăван тавралăха.
Ку - революци хăй лавне тиет,
Ăна туртма хушать малашлăха.

Çул - тăвалла, тумхах çитменнине,
Туртмашкăн çăмăл мар лава, патька!
Кивви тытса чарасшăн çĕннине,
Ура хурать те шăлĕпе шаккать.

Çавах кусса пыратьлав малалла,
Çул çук чакма! Ан сик, пĕтме пӳрни!
Çĕр пире май çăмхаланать, чухла, -
Эппин, пачах та кăлăх тилĕрни.

Хăçантанпа ларман вĕсем çапла
Мăшăрĕпе, ярса сăмах-юмах!
Хăçантанпа хăй çухрăмне шутлать
Этемлĕх кӳлнĕ вăхăт-урхамах!

- Космовский пуçне хучĕ тен-и çак?
Итлет те Синерпи хăй Эптине,
Тĕлĕннипе хытсах каять вăл шак!
- Епле апла! - теет кăна тинех.

- Çапла. Эпир пĕрлеччĕ унпала.
Хăюллă командирччĕ, лайăх çын.
Полк тăшмана пĕр тăтăш хăвалать.
Каç пулчĕ. Ыртăмăр. Салтак та - чун.

Ку - Парамонов хуторĕ пирте.
Ларать вăл сăрт çинче. Çырма-çатра.
Чун лăпкă мар, туятпăр-ха пурте,
Каçхи питех синкерлĕ вăхăтра.

Анчах ăçта каятăн? Канмалла.
Вырнаçрĕ штаб та çавă хутора.
Хăй тĕрĕслерĕ пирĕн хурала,-
Пĕлетĕн: ыйăх - вилĕм-çке, ара.

Кăршĕсемпе те çыхăну-мĕн çук,
Пурри те хутортан питех инçе.
Ирпе, шăп кăвак çутă килнĕ чух,
Пуçланчĕ тамаша...
Шăп ир çинче...

Пĕл: виçĕ полкчĕ шурă казаксен,
Пуçтахланать хурах, хĕссе кĕрет.
Çине-çинех ăшаласа илсен
Пăртакçă чакрĕ... Тăсрĕ пирĕн рет.

Анчах тăшман хăпса килет каллех.
Вăл саранча пек йышлă. Тилĕрсе
Сикет çакскер, тытса илеспĕнех...
Пирĕннисем те çитнĕччĕ хĕрсе.

Кĕçех татса тухатпăр ункăран...
Артнаступлени... Тĕшĕр, ир мура!
Ут утланса унта-кунта кăран
Космовский ыткăнать, çакна кура.

Тăшман пульли сăхать пĕрре, тепре...
Çапах та вăл ăкмест йĕнер çинчен.
Пĕтет патрон та... Штык пур черетре.
Хăтер мура пĕр çын та юлмиччен!

Вăйсем тан мар... Каллех сăхать тăшман.
Ӳкет лаша... Хĕсет-çке вăр-хурах.
Космовский кăларать туртса наган,
Суранлă ун алли, тĕллет çапах.

Инкек: пĕтет патрон... Хирет эшкер,
Ăна тытса илесшĕн чĕрĕлле.
Ун пур граната: «Коммунист, эхер,
Хăрать-и вилĕмрен? Ме, чых пĕрле!..»

...Пĕр сывламасăр ларчĕ Синерпи,
Ытла хăрушă итлеме калав,-
Космовские пĕлет-çке лайăх пит,
Ăна аса илетчĕ-ха вăл шав.

Килне кĕрсе чыс турĕ командир.
Çав саманта, ара, епле манан?
Каларĕ:
- Çĕнтеретпĕрех эпир!..
Ун сăнĕ те куç умĕнче ялан.

- Е çĕнтерӳ, е вилĕм? Çаплалла!
Ан нăйкăш эс: салтак пек çирĕп пул!
Унта май çук вăтам сукмакпала,-
Умра выртать тумхахлă, аслă çул...

Эпти çапла тĕплерĕ сăмахне,
Каларĕ ăс парса Синерпине.
Автан автать-иç. Çурçĕр, ахăртнех,
Çĕн тумхахсем кĕтеççĕ ирхине.

6.

Тухса тăрать чăваш тыр пуссине.
Çӳлтен хĕвел çаплах тăкать кăвар.
Пĕр çак сăмах килет чĕлхе çине:
«Çумасть-çке çумăрĕ, мĕскер тăвар?»

Аптранипе пăхать тӳпенелле, -
Пĕр çĕлĕк пек те пĕлĕт курăнмасть.
Кив тырă пĕтнĕ ун. Мĕн кĕтмелле?
Çемье... Мĕнле пултарăн пурăнма?

Кăчăрт! хыçать çӳхелнĕ ĕнсине:
Турри чăнах çиленчĕ-ши элле?
Юри инкек ярать-шим çĕр çине?
Çӳрет хавха: «Пурин те пĕтмелле...»

Çĕр карнă çăварне, кур, эй, тĕнче!
Калать пек: "Пулăшсамăр, типрĕ ăш!"
Шит пек тыр-пул аран ларать тĕнсе,
Пĕрчи - чăх-чĕп сăхмалăх пулĕ кăшт.

Çаплах çумашкăн çумăр шутламасть,
Этем каплах пулсассăн курĕ шар.
Çук, юрамасть пĕрре те тăхтама,-
Яла хыпса илет-шим выç пушар?

Хирте кашлать пĕртен-пĕрех мăян.
Çăрать выç халăх пашалу унран.
Мăян ячĕпеле кĕрет паян
Историе çав çул, черчен уйран.

Инçе çула пуçтарăнать чăваш,
Калать вăл:
- Мĕн пулать те, мĕн килет...
Йăлт пушанса юлать кил-çурт - йăва,
Çын çаннипе куçне шăлса илет.

Путса анать пăта кив чус ăшне,
Хĕнет те мăлатук шĕлепкинчен.
Хупать çурт хăй чăречине-куçне,
Хуçи кăна тăрать-ха темĕнччен.

Пур çĕтĕк-çурăкĕ ун - лав çинче,
Унтах-çке, кăкшăм пек, ачи-пăчи.
Тен, Çĕпĕрте урăхларах тĕнче?
Хăтарĕ, тен, Украйнă кулаччи?

Чĕтĕресе илет те урапа,
Лăнчăртатса куçать тин вырăнтан.
- Сыв пул, сыв пул, тăван - пичче, аппа!..
Çын эрленсе çитет пит йывăртан.

Ёмĕрлĕхех каять-и - кам пĕлет! -
Тен, урăхран кураймĕç пĕр-пĕрне.
Шухăшласа илсен, йĕрес килет,-
Шел мар-и хăварма тăван çĕрне?

Юлнисене те çăмăл мар, паллах.
Ват карчăк - вилĕм килнĕ çавинне.
Укăлчара куллен вăл хураллать,
Хăшне касса та хунă çемйипе.

Малта кĕтет çĕн тамăк, çĕн тăшман.
Вăл - выçлăх. Ăнтăлать пăвма мăйне.
Ку - фронтринчен те сăхăрах, ăнман,-
Алне сирме мĕнле тупас майне?

Эппин, ку - çапăçу, эппин, ку - фронт.
Каллех ыйту çĕкленнĕ: кам - кама?
Эс халăха тăрант, çĕн влаç-тăк, ăнт!
Ху тăкнă юн ан кайтăр харама.

* * *

Яланлăхах ялта. Тăван кĕтес!
Тĕлĕнмелле: эсех-пи ку ара?
Калать Эпти:
- Çук, ĕненес килмест:
Пăшал сасси кĕрлетчĕ хăлхара.

Халь акă - шăплăх...
Вăл та хăратать.
Çапах та ĕçшĕнех кĕçтет алли.
Тапса тăрать вăй-хал та кăкăрта -
Сахал-и пурнăçа юсамалли!

Курать Эпти: йăлт ишĕлнĕ саман,
Хапха юпи ларать аран кăна.
Сарайăн тăррине те юсаман,
Кĕç йăтăнса анассăн туйăнать.

Мĕн чуль ĕмĕтленмен-пи çак самант
Килсе тавралăха кантарасса!
Этем чунне-ÿтне тек ан амант,-
Çитет, йĕтре, çеçен хирте асса!

Ака-суха тăвас килет халь ун,
Яра куна танккас килет хирте.
Ĕçре хăй канăçне тупасшăн чун,
Ăна умри çут шанчăк хĕтĕртет.

Ак, çитрĕ çав самант. Çук, кĕтнĕ пек
Ялтăраса килмерĕ çĕнĕлле.
Шăмми те тирĕ çыннăн... Ялĕпех
Шĕкĕлчесе тухать-пи? Пĕсмĕлле!

Пĕр йыт-качка та хĕвĕшмест ялта,
Сехре пăкки тухать кушаккисен.

Выç хырăм уяса тăмасть. Йăлтах
Çиет пусса, алли айне лексен.

Çынсем сутса яраççĕ хуралтне.
Валютăран та хаклă, мăянла,-
Хăрушшăн сарнă вилĕм çунатне
Сирес, епле пулсан та, каялла.

Эпти те сутрĕ кĕмĕл сехетне,
Фронтра Космовский панăччĕ, ара.
Парне сехечĕ, çырнăччĕ ятне,-
Илсе тухмашкăн тиврĕ пасара.

Ун хыççăн кайрĕ тăлăп та... Эптин
Ашшех - Куçма - тахçан çĕлетнĕскер.
Е япала, е пурăнăç? Эппин,
Çынпа танлаштарсан, ку вăл мĕскер?

Ял шухăшĕ ўкет комбед*) çине,
Лавне тĕпри пулса туртать Эпти.
Ирпе тухса каять те, каçхине,
Ырсан, килне пырса çитет вăл тин.

...Ир-кăвакарчăн çитрĕ тухăçран,
Ун тĕсĕ ўкрĕ чўрече çине.
Çырни сасартăк йăнăш пуласран
Эпти çыртса илет хăй чĕлхине.

Çапла, ирех ларать вăл кирлĕрен:
Кам шыçăннă, кам тăлăх, чирлĕ кам,-
Шута илсе тухайрĕ килĕрен,-
Вăл çырнă хут самай пулăшакан.

Мăкăртатать хăйпе-хăй:пуç ан ус!
Патшалăх пулăшать...
Пĕррехинче
Пăртакçă кўрсе килчĕ куккурус,
Пур вăрлăх Мукаçей кĕлетĕнче.

Эпти ас илчĕ: мăрикан парни
Хăтарасса хăтарчĕ халăха,
Пĕри çапах та пĕтрĕ, ял çынни,-
Шерип. Ăна ярсаччĕ çăнăха.

---

*) Чухăнсен комитечĕ.

Вăл, выçă хырăм, çăнăха курсан
Лапаткаран тек çинĕ ывăçпа.
Сасартăк аптăрать, килне пырсан,-
Кăнса та кайнă çын каçапала.

Ура сасси кĕç илтĕнчĕ. Такам
Кăшпăртатать час çенĕхре. Кĕрет.
Кам пулчĕ ку, ирех ял касакан?
- Аван-и! Эп кунта килменччĕ, - тет.

Эпти пуçне çĕклерĕ:
- Ухтăм-çке!
Тĕпелелле иртсе ларсам, юлтăш!
Çапла, килменччĕ эс... Эппин, мĕскер
Çăмăлпала? Тăвасшăн-и канаш?

- Канашĕ-мĕнĕ... Пултăм хулара.
Мана... çаратрĕç. Мăшкăл куртăм, шар...
Йĕркепеле сана калам, ара,
Никам çук чух «секрет» кăшт калаçар.

Калать Имет: кĕрер пĕлĕш патне!
Мĕскер вара! Юрать кĕрсе тухма!
Тиркеймĕн хуçанне сăнне-питне,
Кайран хамах ятлатăп: «Эй, ухмах!»

Çапла тĕл пултăм эп хурах пуçне,
Кайран çеç пĕлтĕм эпĕ кун çинчен.
Епле чăтать çĕр ун хура ĕçне!..
Хăй пытармасть çакна та çынсенчен.

Çӳç-пуçăм тăчĕ манăн вирелле
Çав вăрă йăвине пырса кĕрсен.
Калать çакскер:
- Хăратăн-и элле?
Çухалмĕ йĕп, ман патăма килсен.

Чылай-и вăхăт иртрĕ пасарта.
Ĕçе пĕтертĕм. Килтĕм хваттере.
Ирпе шыратăп: михĕсем ăçта?
Укçа пĕр пус та çук ман кĕсъере!

Хам юлашки тырра сутсаччĕ-çке!
Ăçта кайса чикес ухмах пуçа?
Куççульпелех йĕретĕп, амутке,
Пăхатăп та - умра тăрать хуçа!

- Мĕскер улатăн? - тет çакскер. - Ухмах!
Ман йĕкĕтсем кам иккенне пĕлмен...
Асту, тепрехинче пул ăслăрах,
Ме укçуна! Эккей, кайман-килмен!

Хĕрсех калаçрĕ Ухтăм. Вăл - вăтам.
Лаши, ĕни те пур ун. Çĕр çынни.
Мала иртмест, кая юлмасть çынран,
Шăвать хăй еккипе çара çуни.

Чухăнпала пĕр лавччĕ Ухтăма!
Кулак лачакинче, çын, ан кĕвел!
Çак çĕнтерӳллĕ утăма тума
Хăçан килсе çитет иккен мехел?

- Пăхатăп та эп сирĕн ĕç çине,
Питех те кирлĕ, тĕрĕс ĕç куран.
Тĕреклĕ пурăнма май пур чухне,
Эс халăхпа пĕрле выçах ларан.

Хăçан вăл пулнă пуçлăх, старшина
Хăй халăх нушипе пĕрле тӳсни?
Çавăнпала каласшăн эп сана:
Ак кайтăр харама çын тăрăшни.

Пĕр шутласан, кунта та çул кĕске,
Шикленмелле, хăтланăшне кура.
Авантарах сыхласчĕ тетĕп-çке
Çав эшкертен мукаçейри тырра.

- Тав, Ухтăм! - терĕ, савăнчĕ Эпти.-
Ара, эс питĕ тĕрĕс шухăшлан.
Ял-йышăм ăрăс*) курнă чух эп тин
Аппаланма пултарăп хампалан.

7

- Шак-шак! - шаккарĕç кĕçĕн алăка.
Имет куçне хупсаччĕ чут кăна.
Леш алăк хăлăпне çаплах лăкать,
Тем шăршласа çӳрен каçхи хăна.

- Уç, карчăк! - тесе хушрĕ. Сисрĕ чун.
Кĕç тăчĕ те пĕркенчĕ açамне.
Хуçа çуртне пăхса çӳрет ун-кун,
Вăл хăй кăна чухлать хăни камне.

---

*) Ăрăс - телей.

Матки сасартăк тăчĕ хăраса.
- Пĕлместĕп, тем калаççĕ вырăсла...
Такам вăрри ан пултăр... Тух, ăсат...-
Калаçрĕ макăрса вăл ярасла.

- Тен, Петĕр килнĕ, - терĕ старикки.-
Сĕтел çине пăртакçă тирпейле!
Хĕрарăма касать пуçра çукки! -
Хăй лăкăштатрĕ алăк патнелле.

Чăнах та, Петĕр кĕчĕ алăкран.
Вăл пĕччен мар, йĕкĕчĕсем те пур.
- Тăван килте тухас пулать ăсран,
Тек пытанса çÿрес пулать-çке, мур!

- Ÿпкев ан тăвăр, иртĕр тĕпеле,-
Çапла, ялан вăл тĕттĕмре чăваш,-
Каçхи паллана тус-йышсемпеле
Имет калаçрĕ питĕ те йăваш.

Вăл хушнипе чашлатрĕ сăмавар,
Черкке çÿрерĕ алăран алла.
Матки, пĕр ăнланмасăр, янавар,
Чăх пек, йăрка кăна калла-малла!

Самай хĕрсе çитейрĕç хайхисем,
Асăрханса хăтланчĕçĕ çапах.
Черкке тĕпне васкавлăн типĕтсен,
Каясшăн пулчĕç килнĕ пĕр çулпах.

- Эппин, ĕçсем те ăнччăр, господа,-
Тесе хуçа ăсатрĕ кусене.
Пăшăлтатса илет Имет хăта,
Тем ăс парать çаплах пĕр кĕсене.

- Ăçта каятăн кусемпе, Имет? -
Хăра-хăра калаçрĕ карчăкки.
- Кам нумайрах пĕлет - вăл час вилет,-
Тесе хурать хайхи, ун «ват кăркки».

- Эп ăсатса яратăп та - килеп,
Унччен, кĕтсе, лар пĕчченех килте...
Сĕм тĕттĕме пăха-пăха илет,
Çук, кинемей курмарĕ нимĕн те.

Тӳпе çыврать - пӗркеннӗ утиял,
Вăл сирӗлнӗ çӗрте пӗр çăлтăр пур.
Куçне хӗсе-хӗсе илет йăл-ял,
Кинемее тем йӗкӗлтет вăл, мур.

- Çӳрет сӗтӗрӗнсе ват пуçӗпе! -
Вăрçать стариккине те карчăк. - Ы-ы—ых!
Самант та туйăнать-мӗн талăк пек,
Чунне хӗне-хӗне кӗтет вăл сых.

Сасартăк килсе çитрӗ шăй та çуй;
Пăшал сасси кисретрӗ таврана.
Сăх-сăхрӗ кинемей. Калать:
- Ай-юй!
Кутне пусса ларасчӗ, тăмана!

Курать вăл: тикӗт евӗр сӗмлӗхрен
Хăпса ӳкет пӗр сассăр ӗмӗлке.
- Имет-и ку? Мӗскер туса çӳрен?
- Хуп çăварна тесе калана-çке!

Шапа çăварӗ! Илтсе çитӗç кӗç!
Сан ӗçӳ мар ку! Вырт кӗрсе пӳрте!
Шăвайрӗç пулмалла... Тухмарӗ ӗç!
Пӗри лексессӗн - пӗтрӗмӗр пурте.

8.

Килрен-киле çӳрет Хуçа Илтерӗ,
Вăл Советра-çке стурăш, пирӗн тус.
Паян килрен-киле çитсе пӗлтерчӗ:
«Пухха чӗнеççӗ... Тумалла калхус!..»

Хуçа ятне аслашшӗ парнеленӗ,
Хăй ӗмӗр вăл çӳренӗ тарçăра.
Хӗрсен вара: «Хуçа эп, - текеленӗ,-
Хуçа таврашӗн, пирӗн, юн çăра».

Хăй тарçăрах ку тӗнчерен ăсаннă,
Çапла пуçне вăл çинӗ хӗрӗхре.
Калаççӗ курнисем: арман юсанă,
Чул пек кӗç аннă татăлса çӗре.

Те чăн ку, те суя: çӗре ӳксессӗн
Пӗтӗрӗнсе илейнӗ виçӗ хут.
«Шăпа!» - куляннă килтисем, пӗлсессӗн,-
Унран иртмесӗр, майӗпен эс ут».

Çапла вара Илтер валли хăварнă
Пĕртен-пĕр чаплă ят кăна - Хуçа.
Илтершĕн татăк çăкăр та тăварлă,
Ылханнă вăл çак тертлĕ пурнăçа.

Пĕр хăй камне астутарсах илтернĕ,
Çын çăварне эс чӳпĕк чикĕн-им?
Каланă шăл йĕрсе: «Хуçа Илтерĕ»,-
Çӳренĕ ырăпа та псевдоним.

Çук, çиленмен: Хуçа тесессĕн - пынă,
Ытленĕ те, йăлт тунă хушнине.
Хăюсăр та çемçе ыр чунĕ унăн,
Вăл кăларман ниçта та ăшрине.

Ун пур-и, çук-и урăх хушамачĕ -
Ялта çакна пĕлешĕн те çунман.
Ĕни ун хĕсĕр - сĕтсĕрех хăварчĕ,
Илтер лашин те ячĕ çеç - чуман.

«Калхус, калхус...» сăмах çӳрет халь-хаççăн,
Мĕскер пулать-ши çакă япала?
«Калхус тусан реххет», - тесе калаççĕ,
Тепри пур - хăратать те унпала.

«Калхус тусан туртса илеççĕ санăн
Пĕр лашуна кăна-и?.. Арăмна!..
Йыша пĕр утиял илсе чăрканăн,-
Калхус вăл çакă пулчĕ те сана!»

«Аплах-ши?» - шикленсе ӳкет теприйĕ,-
Апла калхус вăл - ахăр самана!»
Сăмах çӳрет тĕрли... Вăл айăн-çийĕн
Çавăрттарать тăман пек - тӳс кăна!

«Мана пулсассăн - пурĕ пĕрех мар-и?
Паллах, пăртакçă шел те мăшăра.
Пĕр утиял тени - ют çын çăварĕ.
Çаплах-и, тен. Эпти пĕлет, ара».

Хăй шухăш çăмхине сӳтсе пыруçăн,
Килтен-киле çитсе шаккать Илтер:
«Пухха чĕнеççĕ!.. Павăл! Хветĕр, Уçăп!..
Калхус, калхус тăватпăр, ан кĕттер!..»

* * *

Кĕрлет-шавлать пуху. Сăлтавĕ пысăк
Çамка тирне пĕрмешкĕн хресченсен.

Калхус, калхус... Сăмахĕ те вĕт кăсăк!
Кĕрсессĕн лайăх-и, е кĕмесен?

Чылайранпа кĕрлеççĕ те шавлаççĕ,
Тӳпе маччи те ĕнтĕ хуп-хура.
Ăна шăтарнă çăлтăрсем. Хĕл каçĕ.
Тăман шăлать кĕленче пек юра.

Пӳртре, шалта, тӳсмешкĕн сывлăш йывăр.
Йĕпеннĕ пăчланса пĕренесем.
Лармашкăн вырăн çук. Тăма та тăвăр.
Аран-аран çӳрет çын хĕсĕнсе.

Тулта пĕртакçă сывлăш çавăрсассăн,
Каллех кĕрет вăл, пăра пек, шала.
Унтан-кунтан янраççĕ тĕрлĕ сасă,
Хăшне ăша хывса тăнламалла?

Кăшт кайрисем тухаççĕ-уçăлаççĕ,
Чи малтисен епле-ши тӳсмелле?
Çынсем пĕрне-пĕри чарса шавлаççĕ:
- Ан шавлăр! - теççĕ.
- Итлĕр?
- Пĕсмелле!

- Пӳрте, мунчари пек, тултартăр тĕтĕм!
Пăрахăр-ха туртма! - чарать пĕри.
Тӳрре тухаканни:
- Эп - все!.. Сӳнтертĕм...
Пур çĕнĕрен чăркаканни юри.

Светков илет сăмах. Шăпланчĕ халăх.
Çынни яла килейнĕ вулăсран.
Кĕтни те çакăччĕ кашнин: мĕн калĕ?
Пăрать пуçне, илтмесĕр юласран.

Светков статья çырать-мĕн хаçата та,
Вăл хăрамасть куштансенчен. Маттур!
Хăй - çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ. Унта та
Кăвар сапса тăмашкăн вăйĕ пур.

Саратайра та илтнĕ-ха, пĕлеççĕ,
Нумай пулмасть кĕрленĕ пĕр ĕçе.
Шутла-ха эсĕ: тупăннă суеççĕ -
Чее те сăхă çын... Хайхи кĕçех

Кулаксене пухса çав çын каланă:
«Тăватпăр эпĕр хамăрах калхус».
Хăй Чĕмпĕрте ик çĕнĕ çурт туяннă,
Ялта та çĕр тытма çитернĕ ăс.

Хăйсен çав «колхозне» тек никама та
Яман иккен çав шуньăк яхăна.
Кĕç староста кĕрет иккен, команда
Парса ларма апла-капла кăна.

Чухăнсене кăна-и çак сивленĕ,
Вăтамсемпе те пуçлăх калаçман.
- Çара пакартасем! Тасалăр! - тенĕ,
Шăл ернĕ куç кĕретĕн çав ăнман.

ВЦИКа çити хут çырнă пулнă шуньăк:
«Мĕскер тăвас калхуспала халь ман?»
«Калхусĕнче» кулаксем çеç ун тӳлĕк,
Анчах та кун çинчен вăл шарламан.

Лерен, паллах, çырса яраççĕ: «Тӳсĕр!
Тымар ярса юп курăр ку чухне».
Светков сиссе аркатнă питĕ путсĕр
Чее те сăх этемĕн йăх-яхне.

Паян ăна каçса кайсах тăнлаççĕ
Çĕн пурнăçшăн çĕкленнĕ чăвашсем.
- Ан итлĕр элеке. Ăна сараççĕ
Пĕтмешкĕн пӳрнисем. Чылай вĕсем.

Сирте те пур, паллах. Пĕлетпĕр, чимĕр!
Кирлех пулсассăн калăпăр ятран.
Илсессĕн Кнутов... Шар кăтартнă ĕмĕр,
Хăй тыррине пытарчĕ халăхран...

Тахшинсем мар-çке çаратмашкăн тăнă
Пĕр тĕттĕм каç мукаçейри тырра...
Кулак пире куçран тĕлленĕ сăнă,
Кашни ĕçрех çак вăл хурать ура...

Светлов калать. Ăна тăнлаççĕ тимлĕн
Е хушăран илеççĕ шавласа.
Сăмахĕ - хĕç тăшманшăн, тусшăн - имлĕ,
Туять кашни: ку çын чĕри таса!

Анчах та чирлĕрех-и... Çук, туймарĕç
Çакна сухалла, сумлă арçынсем.
Манса кайса çине-çине чăркарĕç
Пĕр хăнăхнă чикарккине вĕсем.

Çиет пыра та, сăмсана та тĕтĕм,
Памасть, мунчари пек, куçа уçма.
Çухавине вĕçертрĕ, пухрĕ пĕтĕм
Вăйне Светков татах та калаçма.

Эпти - çумри юлташĕ унăн - тăчĕ,
Оратор асапне курнипелен.
Пур форточка пекки те - хупă тачă,
Ана уçса вăл хучĕ пит хуллен.

Тултан пӳрте тапса кĕрсе çӳрерĕ
Чи кирлĕ варкăш çил, чуна уçса.
Пуçне сулса Светков:
- Тав куншăн! - терĕ,
Хăйне каллех вăй кĕнине туйса.

Мĕскер унта уç кантăкран хаплатрĕ?
Пăшал сасси?.. Кĕтмен-туман çĕртен...
Шăв-шав та тĕркешӳ кĕçех хускатрĕ,
Хуллен-хуллен йăванчĕ Демосфен.*)

- Светков! Светков! Сана мĕскер?
- Ан ыйтăр!..
Эпти сиксе ӳксе çĕклет ăна.
- Эй, юлташсем! Çынна вĕлерчĕç! Тытăр!..
Тăшман алли ку! Тартас мар ăна!

9.

Пăлханнă вĕлле пек сĕрле пуçларĕç
Çынсем. Кĕç талпăнаççĕ тулалла.
Куç умĕнчех асаççĕ - хурлăх мар-и!
Кулак çапла-и-ха вăл япала?

- Кунта! Кунта!
Çырманалла вăл тарчĕ!
Куракансем - Йăкăшпала Курак.
Аслисене, паллах, чи çамрăк гварди
Хаваслăн пулăшать, вăйне кура.

*) Авалхи Афинăри чаплă оратор.

Каланӑ еннелле тапса сикеççĕ
Чи вăй питти яшсем, ашса юра.
Тепĕртакран хайхи тытса килеççĕ...
Иметĕн Петĕрне, чее мура.

- Хăйне шаккас!
- Вăт кам, екким раманччă!
Хĕвне чул чикнĕ, вăрттăн шаккама!
- Хăйне мăйран мăйкăчласан аванччĕ! -
Апла-капла пуçларĕç шавлама.

Ял тăшманне Эпти курса каларĕ
- Пĕркун эс лекеймерĕн те, çăхан,
Шалчу çапах та, акă, тулчĕ мар-и,-
Тискер çăткăнлăхна пулах чыхан!

Илтетĕн-и мĕскер калать, ав, халăх,-
Епле тӳссе тăрать сана тĕнче?
Мĕскер эс хăваратăн асăнмалăх?
Сан çук сăваплăх çакă çĕр çинче...

Шур куçĕпе Эпти пăхать çиллессĕн,
Пĕлет: тек калани те кăлăхах.
Преступник çийĕнчен куçне илсессĕн,
Чара-чара каларĕ халăха:

- Çапах та, айăплатăр халăх сучĕ,
Халь витене хупса хурас мура...
Çапса та пăрахатчĕç пулĕ - çăлчĕ,-
Вăл тивĕç çав хаяр приговора.

* * *

Кайри ăспа маттур пулмашкăн çăмăл,
Ун пек чухне ухмахĕ те - ăсчах.
Çавăнпала пăртакçă пур ман кăмăл
Мала кайса ас илтерме анчах.

«Чее кулак...» - çине-çине питлетпĕр
Эп хам та, геройсем те романра.
Ку чух тепри хирĕçлессе пĕлетпĕр:
«Подряд меслечĕ мар-и ку ара?..

Çĕрти тымарĕ, тен, ун пулнă çирĕп,
Татмашкăн çăмăл пулнă-и ăна?
Ака-суха тумашкăн кирлĕ ирĕк,-
Ăна хăй хирĕç тăнă самана.

Тен, килнĕ пуласси ун çирĕп фермер?
Кам тăрантартăр аслă Раççее?
Çакна ăнкарайсан ăна тиркемĕр:
«Кулак - çапла, кулак - апла, чее!..»

Тен, кăлăхах ун ĕмĕтне те хуçнă?
Çĕртен татăлайсассăн хăй Антей...
Мĕн каласси! Хресчен çын ăслă-пуçлă,
Кам парĕ валеçсе пире телей?

Чаянов çырнине вăл вуламан, тен,
Ăна хăй чунĕ хушнă çаплалла...»
Ку чух çапла тиркенине те илтĕн,
Ман кун пирки мĕскер каламалла?

Ăçта ўкессине пĕлмен никам та,
Пĕлсен - хресчен саратчĕ улăмне...
Çўлтен куллен янăракан команда
Пуçне тек минĕретнĕ унăнне.

Ахальтен мар амаланать трагеди
Хĕн-хур та, терт те тўснĕ çак ялта.
Черечĕпе вăл романа та кĕчĕ,-
Хам курмасан та, пулнă ку йăлтах.

* * *

Каллех пуху. Хăшин чĕлхи те ырнă,
Сăмах-юмах çапаççĕ хресченсем.
Сăмах-юмах кăна-и! Ку вăл - пурнăç.
Сăлтав çук мар каламалли вĕсен.

Сăмах çапма пĕри те ăста мар та,
Кирли çапах та пур кун пек чухне.
Светковăн вилĕмĕ паян сасартăк
Чарр! уçрĕ кашнинне куçне-пуçне.

- Кунсем хаяр. Куратăр ĕнтĕ хăвăр.
Юлташ, сыхлан! Çĕннишĕн кар тăрсам!
Ан уç пуçна! Чуна, чăнах та, тăвăр,-
Тусу та, тăшману та паллă сан.

Эртелпеле тăшман çулне пўлетпĕр,
Пĕрлешўре - çут шанчăк та хăват.
Çĕннишĕн тухнă - çĕнтеретпĕр эпĕр,
Хăй телейне этем хăех тупать!..

Хăй сăмахне Эпти çапла тĕплерĕ,
Калассине тӳп-тӳррĕн каласа.
Такам сасси:
- Мана та çырăр! - терĕ,-
Çемйипелех кĕретĕп калхуса!

Çапла кĕскен те уççăн евитлерĕ
Хăй çĕнĕ пурнăçшăн тăни çинчен
Чи хĕсĕк кĕтесрен Хуçа Илтерĕ...
Çĕкленчĕç алăсем енчен-енчен.

- Мĕн калласси! - тухсах калаçрĕ Ухтăм,
Кая юлман, мала иртмен вăтам.-
Ку тарана çитсе тĕрли эп куртăм,-
Ял-йышăмпа кăна пĕрле утам.

Çĕннишĕн ял пĕр çын пек пачĕ сасă,
Вăрман пек ал çĕкленчĕ çӳлелле.
Эпти саспах шутларĕ, васкамасăр,
Сасси янрарĕ чаплă кĕвĕлле.

- Колхоз ятне епле хурас, этьсемĕр?
Эртел пĕр кĕттермесăр ят шырать.
- Светков ятне парсан епле-ши, чимĕр?
- Ĕмĕрлĕхе юлайтăр...
- Чаплă ят!..

- Хуçалăха халь кирлĕ председатель.
- Ĕлĕкхилле пулать-и кăлава?
- Тиек е кăлава тени кушганччĕ...
- Эпти туртма пултарĕ ку лава.

- Телеева суйлас... Телей! Порядок!..
- Тек çук-и сирĕн урăх кандидат?
- Телей! Эпти!..
- Ну, сасăлас апла-тăк...
Çапла Эпти пĕр саслăн суйланать.

10.

Каç сăнĕ таврана çапать,
Пиçсе çитет каçхи апат.

Вĕрет яшка кив лаçăра,
Вăл пиçнĕ, хатĕр паçăрах.

Кăвак тĕтĕмпеле пĕрле
Çӳрет шăрши ялта çĕрле.

Кĕрет те сăмсапа пыра
Кăтăклама пуçлать вара.

Çăтать çын хăйĕн чĕлхине,
Васкать, васкать вăл кил енне.

Ыран ирех ун тăмалла,
Ака-суха - васкамалла.

Сӳре ачи-пăчи кăна
Тытать пĕр ырă йăлана:

Яшка пиçет - вăл çук килте, -
Яш-кĕрĕм çуйăхнă тĕлте.

Ырсассăн та çӳрет вăр-вар,
Анчах та яшлăх - санăн мар.

Ирпе - каллех ура çинче, -
Çапла пырать иккен тĕнче!

Вăхăтĕнче ху пулнă яш -
Ас ил те, чарăн, ват чăваш!

Ан ил эс йывăра яша,
Илентĕрех юрра-ташша.

Ёне пуссан ури çине,
Тинех кĕрет çын картине.

... Эпти те паçăрах килте -
Хаçат вулать вăл тĕпелте -

Йăкăшпала Курак тулта -
Ача-пăча шавлать унта.

Пур Синерпи те лаçăра, -
Яшки ун пиçнĕ паçăрах.

Кĕтет вăл: кĕреймерĕç çак
Çаплах Йăкăшпала Курак.

Шаклатрĕ тимĕр шушилкке,
Ку кам? Ют сасă пулчĕ-çке?

Тахçан килмен çын кĕнĕрен,
Сăмах пуçланчĕ чĕререн.

- Ку Кĕлпике-çке пулчĕ?.. Лар!
Ара, кĕтмен те... Калаçар.

Мĕн çăмăлпаччĕ-ши, инке?
Сиксе тухман пуль те инкек?

Хĕç пек çӳхелнĕ, имшеркке,
Эс пит тулличчĕ, Кĕлпике.

Нумай пулать-çке курманни,
Анаткаса анайманни...

- Инкекĕ-мĕнĕ... Чирлĕ эп.
Тен, çаплипех çĕре кĕреп.

Куратăн: юлнă шăмă, тир,
Пуссах çитерчĕ йывăр чир.

Çиен çиет, куран, шалтан,
Йăлт кайрăм ку чухне халтан.

Таçта та çитрĕм юмăçа, -
Хамах çиетĕп хам пуçа.

Пит пысăк çылăх тунăран,
Хĕн килнĕ, теççĕ, турăран.

Ара, çаплах ку... - Тем пекех
Йĕрсе калаçрĕ Кĕлпике. -

Пĕтерчĕ Петĕр пурнăçа,
Тахçан çухатрăм тăнăçа.

Хĕрлех вăл ячĕ чысăма,
Пĕлмерĕм эп ниçта кайма.

Çие хăварчĕ те, кайран
Çӳрерĕ пăрăнса хамран.

Çапла эп кĕтĕм çылăха,
Пĕтерчĕ Петĕр тăлăха.

Хăра-хăра кĕтейнĕ кун
Çитсен... Çуралчĕ мĕскĕн чун.

Ăçта хурас-ха намăса?
Нумай тăмарăм шутласа...

Чăркарăм та ăна эп, ак...
Çапла, вăл ман ача... Курак...

Юрать-ха хăйĕн телейне
Пулайрĕ ырă çын тĕлне.

Халь пурĕ пĕр мана. Каçар...
Мана кĕтсе тăрать масар.

Каçартăр турă çылăха,
Кун патăр мĕскĕн тăлăха...

... Хыпарĕ пулчĕ тип аçа -
Кисретрĕ шуххăн пурнăçа.

Касса илейнĕн чĕр ўте...
- Атя, кĕрер, кĕрер пўрте...

Эпти мĕн калĕ? Хăй, Курак?..
Тĕшĕрĕлет алпа ура...

"Мĕскер вăл тейĕ каласан?
Тен, аванрах шарламасан?

Ўссен пĕлет-çке вăл çавах...
Ун чух мĕскер калас-ха?.. Ах!.."

Пулать те çав-мĕн тĕнчере, -
Епле пулсан та, тўс, чĕре!

Шута кайса тăрать Эпти:
- Апла иккен, - калать вăл тин.

Апла-мĕн Петĕр - чул чĕре! -
Ылханăм çиттĕр ирсĕре!

Ылхан ăна, пин хут ылхан:
Ял-йыш ылханĕпе чăлхан!

Курак çынна çитмен те - ар,
Атя, хăйне чĕнсе калар.

Кăçал çўрет вăл сўрене,
Хĕлле шкулта та вĕренет.

... Йĕкĕреш евĕр ар чĕппи -
Килсе те кĕчĕç - кур, эппин.

Йăкăшпала Курак яппăр -
Çире тăп-тăпăл шăлавар.

Кĕç тытнă - хуçнă çăпата -
Мĕскер çитмест сана тата!

Пăртакçă Йăкăш сарăрах,
Хăй ашшĕ-амĕш сăнлăрах.

Куракăн çÿçĕ - сăмала,
Курсан такам та савмалла.

Пÿ-сийĕ йăлт пĕр калăпран, -
Сăпайлăн кĕчĕç алăкран.

Кураççĕ: килнĕ-çке хăна,
Хыптарчĕ темĕн яш чуна.

Мĕскер туса çÿрет инке?
Пĕр шутласан, тухать тинке.

Куçран пăхаççĕ мăннисем,
Тем шарламаççĕ çак хăйсем.

11.

Тăкать сентябрь хăйĕн ылтăнне.
Укçа миххи иккен çак харсăр уйăх.
Мулне шутла-ха эсĕ унăнне -
Ĕç тухас çук. Апла пулсан ан çуйăх!

Екки кайсассăн патшасем çапла
Авал укçа тăкса хăтланнă, теççĕ.
Тен, авăн та хăйне çапла шутлать,
Ун туприне çынсем шутла пĕлмеççĕ.

Сапсах тăрать ăна вăл çĕр çине.
Ан пытăр яхăна çĕрти-çÿлти патши те.
Вăл хăй те шутламан сар укçине, -
Пуян та, кăмăлĕ çемçе ун питĕ.

Çĕре кавир пек сарнă укçапа...
Ку кашнине сÿнми хаваслăх кÿнĕ.
Укçа парса илет йăлттам чапа
Хуçа-çĕн уйăх çак тÿлек кĕр кунĕ.

Ача-пăча хаваслăн калаçать.
Кĕреçесем аллисенче. Чĕнеççĕ:
- Атьăр!
Паян - субботник.Никĕслеççĕ сад.
Хунав та кÿрсе килнĕ ĕнтĕ, хатĕр.

Кунта авалтанпах çырма-çатра,
Пĕр уссăрах çўренĕ пулнă выльăх.
Ак, малашне кĕр кунĕ çак садра
Юрла-юрла улма пуçтарĕ халăх.

Ан тив паян хурхух та армути
Çак çырмара хуçаланса кашлатăр, -
Ахаль-и илтĕнет отряд утти,
Ватти-вĕтти тухать ĕçе, куратăр.

Хĕп-хĕрлĕ пĕсехеллĕ отряда
Ертсе пырать учитель Павăл Палыч.
Йăкăшпала Курак унта, малта, -
Юр пуçласа ярать çап-çамрăк халăх:

«Эпир çак - тимĕрç, шаккасси - пирĕн ĕç,
Туптас телейĕн уççине.
Мăлатук йăтăн, сулмаклăн тирĕн эс,
Сик хурçă кăкăрсем çине,
Çине, çине!

Тупта-тупта мăн çул уçатпăр,
Туптатпăр хамăр телее.
Умри çут куншăн кар! тухатпăр,
Çитетпĕрех çитес тĕле,
Тĕле, тĕле!»

Юхать çунатлă юрă таврана,
Вăл янкăр тўпене çити çĕкленчĕ.
Çырмапала каять те - таврăнать, -
Кĕрлет çĕр-шыв кĕтесĕ - пĕр тĕпренчĕк.

Кĕрленĕн туйăнать вăл талккишпех.
Ёçе чĕнсе янрать хаваслă юрă.
Çынсем, чăнах та, тухнă ялĕпех,
Тăнлаççĕ яшсене - юрлаççĕ ырă.

Кур: Лариван, Эпти те Синерпи
Кĕтсе илеççĕ отряда хаваслăн.
Çĕнтерекен хăватлă вăй пирки
Çак самантра кашни шутлать мăнаçлăн.

Хунав лартмашкăн шăтăксем чавса
Турат çинчи пан улмине куратăн.
Мĕн пур Тăван çĕр-шыв кунта халь сан
Куçу умне тухать ем-ешĕл садăн.

ВИҪҪЁМЁШ ПАЙЁ

Пирён иртнё кун-çул - хапха çинчи
тикёт мар, ăна хырса тасатаймăн.
М. Горький.

1.

Çав кун Хёвел-атте, чăнах,
Хёрсех ёçлерё хайхискер.
Ăшши çёклерё ун чуна, -
Тўпе вёр-çёнё пек сенкер.

Реххетленет йăлттам этем
Хёвел шевлийён хўттинче.
Çапла, нихçанхинчен-и, тен,
Хитреччё ун чухне тёнче.

Çурхи ёç-пуç вёçленнё май
Хăпартланать ял-йыш чёри.
Пучах пит селём-çке ай-ай!
Ватти курма тухать юри.

Лере, питех те инçетре,
Карталанать кăвак вăрман.
Калать çав чи ватти:
- Хитре!..
Кун пеккине нихçан курман!

Тёплет вăл хăйён туйăмне
Сăвапла сăмахпа:
- Пехил!..
Тухса тăрать, тен, ун умне
Варне йăлт витнё ёлёкхи.

Тыр-пул пит тулăх сёрёшет,
Пёрчи пухать çёртен сёткен.
Çынна çёрти-çўлти тивлет.
Çапла килсе çитет иккен.

Ахальтен мар ёçчен этем
Паян нихçанхинчен хавас.
Шăй-çу эрне малтан илтен:
«Эй, халăх, ака туй тăвас!»

Йăли ку юлнă авалтан,
Сăн-пичё çеç ун çёнёлле:

Кашни поселокран, ялтан,
Хум евёр, халăх килмелле.

Хускалчё кёç этем юххи...
Вăл пуçланать те праççакран,
Кёрлет-шавлать вара хайхи
Чул сарнă аслă çул таран.

Тулсах пырать этем çырми,
Чётёресе тăрать тавра.
Лара-тăра пёлми, ырми
Çӳрет яш-кёрём уявра.

Пар ут е тройка вирхёнет,
Пёкки те лавё - чечекре.
Эрешлё урапа çине
Пăхса тăрсассăн чун хёрет!

Çул пар! Тиеннё çамрăк вăй!
Утсем те туйнă ун шайне.
Çула пӳлсе тăма ан хăй! -
Çёкленё урхамах мăйне.

Пуçне уха-уха илсе
Мăнаçлăн кёçенет лаша.
Мухтавлă тивёçне сиссе,
Илсе пырать йăлттам йыша.

Чуна çёклет йёс шăнкăрав,
Ун авалхи, асам сасси.
Юхать çунатлă юрă, ав! -
Хитре! Хитре! Мён каласси!..

Лав хыççăн лав, лав хыççăн лав
Иртет райцентр еннелле.
Хăват илет çурхи хускав,
Тёнче кисренчё темелле.

Чăнах кисренчё пăртакран...
Анчах çакна никам пёлмен.
Паян - ман халăх уявра,
Ёçчен этем ăçтан килмен!

Йăмра та хурăн сулхăнне
Яшшар сутуçă иленет.

Кур: лавккисем ун пĕр енне
Ларса тухайнă ретĕн-рет.

Çав илĕртӳллĕ рет патне
Чипер яш-кĕрĕм иленет.
Асра тытса савни ятне
Парне илме хатĕрленет.

Сăйлать канфет-пĕремĕкпе
Мăнни хăй ывăлне-хĕрне.
Чыслать çын, чун çĕкленнипе,
Сăнран паллать те пĕр-пĕрне.

Çатма пек ипподром тавра
Ларса кĕççе-çерем çине
Сăмах-юмах яра-яра
Ĕçчен çын кантарать чунне.

Пĕри пуçлать те пĕр енчен,
Тепри - сĕвеннĕ ун çумне:
Сӳтсе яваççĕ çĕр çинче
Мĕн çуккине, мĕн пуррине.

Чи кăсăкки вара - лаша!
Тăрать пек ун çинче тĕнче.
Ватти-вĕтти те тавлашать, -
Куçне ямасăр ут çинчен.

Кашни мухтать колхоз чапне
Çӳле çĕкленĕ ăйăра.
Ун хăватне, ун йăлине
Йăлтах калать сана вара.

- Троян-и чаплă, Бриллиант?
Е Музыкант? Мадагаскар?
- Чунна эс кăлăх ан амант!
Куратăр акă, васкас мар!

Кĕç çитрĕ чаплă çав самант,
Чуна уçса яраканни!..
Пуçланчĕ! Пур-ши халь хăват
Ăна тытса чараканни!

Кур: сывлама та чарăнса
Сăнать этем вĕри ута.

Йĕп çинчи пек ларать курса
Лаша пăхма ăста хăта.

Сиксе тăрса çĕклет шăв-шав,
Реххетленет вăл вăй парса.
Трибуна çийĕнчи хускав
Тинех çитет амаланса.

Мала кам тухнă - чыслама
Хăни те килнĕ Мускавран.
Эппин, ял чапĕ йышланать
Асри шĕкĕр хула таран.

Агапов вырăс тĕс кӳрет
Çак чаплă, кăсăк хускава.
Çынни лаша чунне пĕлет,
Ун ĕçĕ тивĕç мухтава.

Вăл - зоотехник. Яш хусах.
Тин çеç пĕтернĕ аслă шкул.
Лаша ăсти. Халь тарласах
Вăйне хурать, чухланă пул.

Лаша, лаша! Çав кунсенче
Эсехчĕ шанчăклă хăват.
Этем упрать хăй чĕринче
Сана ахаль-и, çил çунат.

... Каллех чан çапрĕç те старта
Тухать кĕç Ămăрт урхамах.
Хĕрӳ килет ăна... Татах
Янрарĕ чан...
Ма чарчĕç?..
Ах!..

Ăçта çав виççĕмĕш сигнал?
Мĕн-ма пулмарĕ чан сасси?
Шăплан, юлташăм, ан хускал!
Мускавăн пур тем каласси!..

2.

Урам пушах... Çурт ретĕн-рет...
Ватти-вĕтти кăна килте.
Унта - хур-кăвакал çӳрет,
Чăх-чĕп куратăн ку тĕлте.

Реххетленет çул варринче
Ырма пĕлмен ача-пăча.
Хĕвел - тӳпемĕр тăрринче,
Кăвар тăкса тăрать анчах.

Такам шăпиль пăтапала
Çапса хăварнă-ши элле?
Ни малалла, ни каялла
Кусмасть-шумасть вăл темелле.

Пĕр çакă кирлĕ те ăна,
Утма вĕреннĕ шĕвĕре.
Эппин, халь вăхăт шеп кăна
Шыва кĕмешкĕн пĕвере.

Вĕри кĕл евĕр тăпрана
Тусан çĕклентерме аван.
Ака туйра пичче, аппа, -
Асли - пĕр карчăк, куçлакан.

Çав йăрă чунлă ушкăнра
Хама та эп куратăп-çке.
Тĕлĕнмелле... Йăлтах умра...
Тăсасчĕ алă - ал кĕске!

Сулмаклă тимĕр шĕтĕрне -
Вăл трактор сăнлăн курăнать.
Куçран пăхатпăр-пĕрне,
Пире хăй тинĕс парăнать.

Ан тив карап - хăма татки,
Сип-симĕс тинĕс - валашка.
Питех тавлашмăн кун пирки,
Тĕллев патне çитме васка!

Лупас тăррипеле йăмра
Турачĕсем - сан çич тӳпе.
Унта çитетĕн те вара,
Ĕрлетĕн хыттăн чĕлхӳпе.

Ĕнтĕ пулать ку - «яраплан».
Çапла вĕçсе куратăн эс.
Çав ик çунатлă япалан
Асамĕ ма-ши иксĕлмест?

Ăçта çухалтăн эс, çарран
Чупса çӳрен пĕр ĕмĕлке?

Епле сана тытса чаран?
Ачалăх - вăхăтлăх ĕлккен!

... Çапах та ялĕ пушах мар,
Пĕр кил-çуртра сĕрлет хăна.
Эппин, йĕркипеле калар,
Хисеплĕ вулакан, сăна:

Синерпипе Эпти пичче
Пурнаççĕ çакă кил-çуртра.
Карчăкпала старик - пĕччен,
Йăкăшпала Курак çара

Кайсаччĕç иртнĕ кĕркунне.
Ку чух тăраççĕ Анăçра.
Çыру çыраччĕçĕ килне, -
Çуралнă ял ялан асра.

Унта та-мĕн вĕсем пĕрле:
Пĕр танк, пĕр паттăр экипаж.
Хуть кăнтăрла, хуть сĕм çĕрле
Хупмасть куçне салтак тавраш.

Çыраççĕ: «Сывлăхсем аван,
Вĕренӳре ялан малта».
Пул лăпкă, аякри тăван,
Çук, ямĕç чыспала ята.

Çыру илеççĕ те ялта
Синерпипе Эпти пичче,
Кӳрши-арши таран йăлтах
Сӳтсе яваççĕ темĕнччен.

Эпти шуралнă та самай,
Вăйне хурать-ха колхозра.
Кам ӳркенмест - ун ĕç нумай,
Ăсталăхĕ те çӳл шайра.

Çулсем иртеççĕ, яш - ӳсет,
Вăл ăнтăлать-çке малалла.
Вĕреннĕ - ытларах пĕлет,
Ваттин ун - ватă пулмалла.

Çӳç шурă - пуçĕ ăслăрах,
Çамрăккинче - вăй-хал, хăват.
Эппин, ĕçлес ылмашсарах,
Тĕп витĕм çавăн чух пулать.

Кĕтни, ĕмĕтленни, шанни
Чăна тухса пынипелен
Хавас Эпти - чăн çĕр çынни,
Телейлĕрех туять куллен.

Ахальтен мар пĕлмест ырма,
Ват çын - тăватă çын тесе.
Çапла, вăл хăнăхнă курма
Çĕр-тăпрана - хура тĕсе.

Яшпа пĕрле вара хире
Вырма, çулма тухать ватти.
Ун аллинче питех хитрен
Вылять сава, платник пуртти.

Хаваслӑ Синерпи аппа
Хăйне шăпа пӳрнипеле.
Шутланă-и, майпа-шайпа,
Юп курасса вăл хальхилле!

Ун икĕ ывăлĕ-чĕппи
Хăлат пек илчĕçĕ çунат.
Мĕскершĕн халĕ те эппин
Вĕсемшĕнех чĕри çунать?

Пĕрре те тикĕс мар тĕнче,
Çакна кашни туять-сисет.
«Атте-аннеçĕм, леш енче
Шавкка вĕрнийĕ илтĕнет».

Кил-йыш туять, ăша кĕрет, -
Ытарлăн çырнă çыруне.
Çавăнпала çунать чĕре,
Хĕсет атте-анне чунне.

Мĕскер чуна хĕсет, тăван?
Сенкер тӳпе хуралнă пек?..

Тутанхамонăн тӳчĕ ян!
Янранă - кĕт, эппин, инкек!*)

Çав «кушак пуçлă тăмана»
Систернĕ тейĕн халăха.
Çӳçентерет ахаль çынна
Çĕр çийĕн вĕçекен хавса.

Тен, кăлăхах-и пăлханни:
Пĕр ирхине, кĕтмен çĕртен,
- Аван-и! Çитрĕмĕр! - тени
Янрарĕ хыттăн тĕпелте.

Çапла яш, паттăр тăвансем
Хăйсем кĕç çитрĕçĕ яла.
Салтак киле килет тесен -
Кам пĕлмĕ ку ăраскала!

Ун ашшĕ-амăшĕ çеç мар,
Пур кӳршĕ-аршă савăнать.
Кашни калать: «Кĕрсе курар», -
Пӳртре кĕрлет вĕрле-хăна.

- Нумайлăха-и каплалла?
- Курма кăна, курма кăна...
- Хăçан килетĕр каялла?..
Тĕпчет пĕлеспĕн сан хална.

Пĕри, тепри килсе кĕрет,
Йыхрав тăвать пырса курма.

*) 1922 çулта акăлчансен археологĕ Говард Картер Египетра пирĕн эрăчченхи 1350 - 1341 çулсенче пурăннă XVIII династин юлашки фараонĕн Тутанхамонăн гробницине тупнă. Ку вăл çаплах халиччен тупнă чи пуян гробница шутланать. Çав коллекцисем хушшинче «Тутанхамонăн çар тӳчĕ» уйрăмах палăрса тăрать. Ахальтен мар ăна 150 пин кĕренкке стерлинглăх страхланă.

1939 çулта Египетри государство радиокорпорацийĕ Тутанхамон тӳтне янраттарса пăхнă, ун сассине çырса илме йышăннă. Çав сасă фонограммине тĕнчери чылай радиостанцисем туянма килĕшнĕ. Анчах та икĕ кунтан иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланса кайнă. Египетри наци музейĕнче ĕçлекенсем фараон тӳчĕн сасси ырра мар янăранă тесе шутланă. Çавăнтанпа ăна никам та тĕкĕнме хăймасть. *(Автор асăрхаттарни).*

Сана, ак, пухăнчĕ те рет, -
Лартать юр-вар, çырла-улма.

Кума, вăртах ярать сăра,
Сăйлать хăнасене малтан.
- Тавси, - тет ăшшăн, - пурсăра!
Алкум патнех çитет унтан.

Чи ватă, сумлă Лариван,
Сăпайлă, ăслă шур сухал,
Хĕрсе çитейнĕ те аван,
Калать:
- Эпир ĕлĕк-авал!..

Эпир те паттăрччĕ, ай-ай,
Çапла, яш-кĕрĕм, пĕлнĕ пул!..
Ман вулакан, тăнланă май,
Хисеплĕ ватăран ан кул.

Этем кашни вăл çавнашкал,
Калатпăр эпĕр, çын - çынах.
Хĕрсессĕн каппайни кал-кал, -
Каланă евĕрли пулнах.

Аваллăх - паянхи тĕрев,
Малашлăх никĕсĕ - хальхи.
Çитес тесен çитес çĕре
Ун-кун пăхас пулать хайхи.

- Сире юмах ярса çитет,
Тăсар, тăванăмсем, юрра, -
Хушать пĕри - хурать пичет,
Мучи çулăхнине кура.

Кĕç меллĕн ĕнерет хăна...
Епле хитре чăваш юрри!
Вăл мĕншĕн çывăх-ши чуна?
Епле аван-çке вăл пурри!

КĔРЕКЕ ЮРРИ

«Урамăрсем вăрăм - утмашкăн,
Хапхăрсем вырăсла - уçмашкăн.
Пĕвĕр-çийĕр лайăх - пăхмашкăн,-
Вăтанап умăрта тăмашкăн.

Тата кунтан ытла мĕскер кирлĕ,
Сар çу пек ирĕлме мел кирлĕ.
Сар çу пек ирĕлме мелĕм çук,
Твансем, сиртен ытла савнă çыннăм çук.

Атăлĕсем тулли, каçмисем çук,
Хамăр хурса хамăр каçар-и.
Ĕçекенсем нумай, юрлакан çук, -
Хамăр ĕçсе хамăр юрлар-и.

Вун ик улма йывăç, ай, пĕр тĕпрен,
Тавай харăслатса касар-и.
Мĕн пур тăван килсе çитнĕрен
Тавай харăслатса юрлар-и.

Çӳрен ут пур чух çӳресе юл,
Çӳреймерĕм тесе ан кала.
Пуçра сывлăх пур чух савăнса юл,
Савăнаймарăм тесе ан кала».

Каллех тулта - ура сасси.
Кам? Уттинчен пулать пĕлме.
Ку - почтальон. Кин пуласси...
Кама-ши пӳрнĕ Селиме?

Ватти-вĕтти ăна савать:
Сăпайлă, пĕве çитнĕ хĕр.
Ун пĕвĕ - яштака хăва, -
Ăçтан пулмашкăн пĕлнĕ-тĕр!

Сăнĕпеле кăна та мар,
Чунĕпеле пике хитре.
Кашни пĕлет, ĕçре - вăр-вар,
Ыр кулă ялкăшать питре.

Ваттипеле вăл - ватăлла,
Çамрăккипе чух - çамрăкла.
Вăлтать, тесе эс ан шутла,
Ял-йыш пĕлсе калать çапла.

Кăтра та сарă çивĕтне
Хыçалалла ярать - ĕлккен.
Пырса тăрсассăн çывăхне
Тӳрех сисетĕн: чăн иккен!

Сисетĕн чунĕ ăшшине,
Кăвар хĕрӳллĕхне туян.

Ман халăх ĕмĕр тăршшĕне
Ун пек пикесемпе пуян.

Çуртра хăна-вĕрле курсан
Именчĕ тĕпеле иртме.
- Мĕскер сăну салхуллă сан?
Мĕн пулчĕ, хĕрĕм, Селиме?

Эпти пике-почтальона
Кĕтсе илейрĕ çаплалла.
- Кĕрсе самантлăха кăна,
Ман телеграмма памалла.

Хĕре курса, ăна илтсе
Çĕкленчĕç Йăкăшпа Курак.
- Мĕскер çўретĕн çĕмĕрсе? -
Хаваслăн сăмах хушрĕç çак.

-, Иртсем, тархасшăн Селиме!
Епле эс кайнă çке ўссе!
Тек хăяймарĕç шўтлеме
Яшсем, пăтăрмаха сиссе.

- Мĕн? Телеграмма? Кўр, ара...
Мĕскер амакĕ-ши, атьсем?
- Эсир илтмен-и-ха вара?
Пуçланнă вăрçă, теççĕ тем...

... Каллех куратăп эп умра
Çара уран ĕмĕлкене.
«Килсем! Ку - эпĕ, ан хăра», -
Туртатăп кăчăк хам енне.

Килмест вăл чĕннĕ çĕрелле,
Тĕтреллĕх чатăрĕ чарать.
«Мĕскер ку? Тĕлĕк-и элле?
Юмах-и?» - тетĕн эс вара.

Апла та мар, капла та мар,
Хаклăраххи, йăлттамраххи.
Тусан ăшне манса хăвар
Теттўсене, çын хăраххи!

Пўрте, аннў çумне кĕрех, -
Мĕн-ха йĕрет пичче, анне?

Ăспа пĕлсе çитмесĕрех
Чунпа туятăн инкеке.

3.

Кирек епле пулсассăн та,
Ахальтен мар ял-йыш хŭхлет.
Çак самантра таçта, унта,
Çын аманать, ŭксе вилет.

Кĕç çитрĕç, кур, уяврисем, -
Ăçта хавасла шăй та çуй?
Саланчĕ, хурлă тĕс илсе,
Тин çеç янравлă ака туй.

Çĕр çĕмĕрсе те вĕçтерсе
Çул тытрĕ халăх каялла.
Чуна чул илнĕ хĕстерсе, -
Часрах - киле, часрах - яла!

Вăй питтине - военкомат,
Ыттисене - кĕç уйрăлу
Кĕтет. Ăшра сан вут çунать, -
Çук, çăмăл мар каяс çулу.

Тен, ĕмĕре, тен, ялана?..
Мĕскер кĕтет унта, умра?
Этем каймасть-çке хăнана?..
Чипер юл, ĕмĕрхи йăмра!..

Чипер юл, вырăсла хапха,
Çатан пахча, юратнă кил!
Тен, çаврăнса та килĕп-ха, -
Тăванăм, тусăм, аса ил!

Атте-анне, аппа-пичче,
Юратнă мăшăр, кинемей!..
Ял-йыш, тепре тĕл пуличчен!
Ывăлăра ан манăр, эй!

Ан манччĕ, сăпкари пепке,
Çак шăрт сухаллă аçуна!
Эс ŭснине курасчĕ-çке,
Кĕтсе илесчĕ çав куна!

Енчен килеймесен киле,
Ан ус эс тăлăххăн пуçна.

Телейлĕ ĕмĕр пехиллеп,
Çӳлте тыт ятупа чысна!

Калать те сăмаха хуçа -
Йĕрет кил-йыш, йĕрет тăван.
Пăхса илет çын Анăçа,
Хушать çавах хăй:
- Ан кулян!..

Тытса чарми юхать куççуль,
Вĕри те пит тăварлăскер.
Пĕрле пухсассăн пулĕ кӳль,
Тесе шутлатăн хайхискер.

Ахахлатать-и, тен, тĕнче,
Кун пеккине никам ан кур!
Тăп-тăп салтак хутаççинче
Йăтма çук пысăк хуйхă пур.

Çанталăк пăхрĕ-пăхрĕ те
Мăнаç этем хӳхленине,
Тинех вара, кĕтмен çĕртен,
Тăкма пуçларĕ куççульне.

Шарларĕ пĕлĕт-куçсенчен...
Çерем, кĕрхи пек, йĕп-йĕпе.
Ислетрĕ виçĕ талăкчен
Минтер-çĕре куççулĕпе.

... Тĕнче инкекĕ пуç çине
Кашта пек йăтăнса ансан,
Эпти хытарчĕ хăй чунне,
Кил-çурт юлайрĕ пушанса.

Çула пуçтарăнчĕç самант
Йăкăшпала Курак вăр-вар.
- Анне, чуна эс ан амант, -
Тек тăхтамашкăн вăхăт мар.

- Асран кайми атте, сыв пул!
Каяс çул çывăх мар, пĕлен!
Кĕтсе те ĕненсе эс юл:
Ыр-сывă килĕпĕр киле!

Пĕррех çĕкленĕпĕр хăпса.
Пуçтах, хăруш шаккалăнне

Пуçне салатăпăр çапса...
Ёнен, атте!
Ёнен, анне!

Ик-виçё уйăх кăна пар,
Çур çул-и - питё нумайран...
(Этем, чăнах-çке, пророк мар,
Ăс-хакăлё çўрет кайран).

Кам пёлнё çавă самантран
Тёнче хăш май çаврăнасса,
Этем кун-çулё ăнсăртран
Ун сулăнкне çапăнасса.

Кам пёлнё çак планета- Çёр
Хăй канăçне çухатасса,
Çав самантран кунпала çёр
Тамăкри пек тăсăласса.

Миллионшар çын кăлăхах
Çёре ўксе варăнасса
Пёлмен эпир.
Хăруш сăмах
Витмен-ха тап-таса ăса.

4.

Салтак юрри... Салтак юрри...
Кунран -кун илтёнет ялта.
Кам вăй питти, хевте пурри
Ăсанчёç темелле йăлтах.

Военкоматăн алăкне
Шаккать çара янахлă яш.
Фронта яма ыйтать хăйне.
Ăна калаççё:
- Кёт, юлташ!

Черет çитсессён хамăрах
Чёнетпёр, çамрăк гражданин!
Фрица тылра шакка, ара,
Халь ёç те - фронт...
Кунать леш тин.

Чакать кунран-кун ёçлё йыш,
Юлать-ватти-вётти, чирли.

Апла пулсан та эс ан йăш:
Йăлтах - фронта! Ку - чи кирли!

Хирте кам тăрĕ ĕç умне?
Лава, çула ярас хăшне?
Тиет хĕрарăм хăй çине
Мăшăрĕпе ачин ĕçне.

Килте те ун ĕлкĕрмелле:
Апат пĕçер, çĕле, сапла.
Ир - шуçăмла çĕклен, çĕрле
Ан çывăр...
Кунран-кун çапла.

Инкек-и... Тӳснĕ çĕнĕрен,
Апла пулин те нăйкăшман.
Çапла пулма эс пĕлнĕрен
Тĕп пулчĕ мар-и сăх тăшман?

Хĕрарăм!
Çакăншăн кăна
Сан умăнта эп пуç таям!
Йĕрсем картланă сан сăнна
Чĕре панче усрам паян...

Канас çеç тенĕччĕ Эпти,
Тĕнче капла çаврăннăран
Килте ларайĕ- и ватти? -
Хал пур иккен - строя тăран.

«Ват çын - тăватă çын», - тесе
Шӳтлетчĕ халăх умĕнче.
Эпти ертсе пырас ĕçе
Каллех сăмахсăр кӳлĕнчĕ.

Колхоз правлени пичетне
Тыттарнă май калать Яхун:
- Сан кăмăлна пĕлсе, кĕтнех,
Эппин, ман лăпкă юлĕ чун.

Эртел тивлечĕ, ун хевти,
Пĕлетĕп, шанчăклă алра.
Эппин, атя, Яхун Хвети.
Çынтан ан юл, ан пыр кайра!

Чăшлатакан çĕлен-калтан
Пуçне касма васка, вĕçтер!..

Çапла ăсанчĕ вăл ялтан,
Хальччен «броньпа» пурăннăскер.

Эртел ĕçне парăннăран
Ăна сума сăвать кашни.
Çынни вăл - тăванран тăван,
Сая каймарĕ тăрăшни.

Çĕкленчĕ пархатарлă ят
Район та область умĕнче.
Анчах çак вăрçă-хăямат
Пыра чăн шăмăн тăрăнчĕ.

Ăсатнă майăн пуçлăха
Калать Эпти, куçран пăхса:
- Ĕçсем çапли - çапла та-ха,
Алла лараймăпăр усса.

Кунта çавах ўкмест йĕтре,
Сивлеккĕн пуля шăхăрмасть.
Ир-каçăн пирĕн пĕлĕтре
Тăшман çăханĕ явăнмасть.

Туса пырасчĕ ĕç-пуçа
Çынран юлмасăр, вăхăтра.
Шан, тăрăшатпăрах, хуçа!
Анчах унта сире, фронтра

Йывăртарах çĕр хут, пин хут,
Çавах шанатпăр авана.
Тыт çул курки халь, пĕреххут,
Часах курасчĕ çав куна!

* * *

Кунсем мăран, кунсем лўппер, -
Иртеççĕ майĕпен, аран.
Кунпа çĕр пĕр - хура, тискер,
Хирет фашист Мускав таран.

Çитсе шаккарĕ хапхаран
Пуçтах, каппайчăк çын çиен:
«Эй, парăн, вырăс! Эс ыран,
Иван, çавах чĕркуçленен!»

Мухтанчăк фюрер çав самант
Шутлать парад çинчен анчах.

Эпир те шанчăк çухатман,
Вилме пуçтарăнман пачах.

Сывлать-ха тикĕссĕн, патвар
Мускав - Тăван çĕр-шыв чĕри.
Эпир - хăравçă йышши мар,
Çакна ариец пĕлтĕр-и!

Çапла шутлатпăр та кашни
Кĕтетпĕр хамăр мехеле:
Хĕçпе килен - хĕçрен пĕтни
Пулман-и халиччен элле?

... Унта çапла та, çăмăл мар
Яла юлнисене те халь.
Кашни килтен ăсанчĕ ар,
Ăçтан тупса çитерĕн ал?

Хирте ака-суха тума,
Лава кайма, çурт пурама,
Çулма, вырма, кĕлте çыхма
Е йышлă выльăх усрама -

Мĕн чухлĕ кирлĕ ăста ал!
Ĕçчен те вăйлă алăсем!
Пĕр ĕмĕтпе çĕкленчĕ ял
Кĕтмен çĕртен инкек килсен.

Çак шухăшпа тухать Эпти
Çын хушшине ирпе ирех.
Ун çирĕп, сулăмлă утти
Тумхахлăх виçнĕпе пĕрех.

Тĕп шанчăк - виçĕ «хурçă ут»
Тахçан пăрахнă кĕçенме.
Вĕсем - хуçасăр... Пĕреххут,
Эп хам та вĕренмен темме?

Вĕсем - «такансăр». Çураки
Çитсен мĕскер ĕçлемелле?
Суха пуçне? Ĕлĕкхилле?
Касать лаша е çын çукки.

Çапла, лаша та салтака
Ку чух ăсанчĕ сахал мар.

Этем пек, вăл та юн тăкать,
Тӳсет, курать ун пекех шар.

Хуçа Илтерĕ пур та-ха,
Пĕртен-пĕр ватă трактарист.
Çынни вăл - ылтăнран паха,
Çук мар ун ырă ят та чыс.

5.

Ирпе правленире - наряд.
Кунтах «вăтăм командирсем» -
Бригада, ферма пуçĕсем
Тени ку чух çапла пулать.

Килсе çитеççĕ улттăрах,
Сĕм тĕттĕмре ирхи урам.
Хĕл каçĕн чатăрĕ, ара,
Пĕр шăтăк-çурăксăр, хура.

Нумай лармарĕç шавласа,
Пит тĕплĕн картрĕç ĕç кунне.
Пĕр шухăш çеç пăраласа
Тăрать Эпти пичче чунне:

"Такансăр" "хурçă утсене"
Епле кĕртсе хурасчĕ чун?
Кам тытса пырĕ вĕсене?"
Йăлт хуравлас пулать халь ун.

«Кайса килес-ха апата», -
Тесе хурать юлашкинчен.
Çапла хăйне хăй йăпатать,
Тухать тула правленирен.

Çил çук. Сивĕ. Шартлама.
Тул çутăлса килет хуллен.
Пĕччен юлса шута кайма
Питех те меллĕ пирĕн ен.

Ун-кун пăхать Эпти пичче,
Курах каять ĕмĕлкене.
Кĕтет пăртакçă хыç енчен
Хăваласа килекене.

Пуçне куç урлă, шăнасран,
Шел-мамăк тутăр çыхнăран,

Ăна палларĕ вăл аран,
Сăмах пуçларĕ кăмăлтан.

- Ку эс-и пултăн, Селиме?
Каçар, пикеçĕм, палламан.
- Юрать-и халь ыйтса пĕлме?
Каламалли сăмах пур ман.

- Паллах, юрать, пике, юрать!
Ма ан юратăр? Ыйт, кала!
Сирсе, кĕленче пек юра,
Хĕр тутăр айĕн пăхкалать.

- Мĕнпе пире савăнтаран?
Çыру тавраш çук-и, тен?
Ни Куракран, ни Йăкăшран
Ку чух илсе пулмарĕ тем.

- Çыру тавраш - тепрехинче...
Тен, ерçеймеççĕ... Ху пĕлен...
Çĕре-шыва шăп чĕринчен
Сăхма пăхать-çке-ха çĕлен.

Эпти пичче, итле чунран...
Калас сăмахăм - урăххи..
Кăлар мана почтальонран...
Пит тархаслатăп, - тет хайхи.

Шарт тĕлĕнсе ўкет ватти:
- Эс, хĕрĕм, мĕн каларăн çак?
Элес-мелес, яппун турти!
Ма минрететĕн ман пуçа?

- Хаçат-çыру-и валеçме
Ача та, тетĕп, пултарать.
Каясчĕ манăн вĕренме, -
Тет Синерпи, лăплантарать.

- Ăçта каяшăн эс вара? -
Кăсăкланать çаплах Эпти.
- Эп çўретесшĕн трактăра...
Хĕре ăнланчĕ пуçлăх тин.

- Чим, чим!.. Кала йĕркипеле...
Эс питĕ тĕрĕс шухăшлан...

Вёренмелле, вёренмелле...
Асатăпăр ирех ыран.

- Эп пёччен мар, тантăшăмпа,
Велимепе шутларăмăр.
Ёçрен тухасшăн çавăнпа...
Çук мар, ёнен, вăй-халăмăр.

- Маттур, маттур эс, Селиме!
Тултартăн ман кăмăлăма.
Çич ютсене тӳпелеме
Ангелина ма пулас мар?

6.

Пур «хурçă ут» та «картара» -
Çуракиччен якалмалла.
Ун тимёр урисем ара
Ни малалла, ни каялла.

Пёрин - металл-чёри хавшак,
Теприн «пёверё» чирлёрех.
Вăй-халсăр трактор вăл - ашак,
Чипер хуçа алли кирлех.

Пусать хуçи рубильнике,
Кёрет чун пётём таврана,
Тытса тăмасть çын пилёке,
Илет-хурать ăна-кăна.

Кёрлет станок, çавра хăйра
Хём кăларать-и хурçăран...
Ун умёнчи... Çапла, майра,
Эс арçынна сайра куран.

Хёр çийёнче - комбинезон,
Чипер, анчах мазутлă ал.
Асăрхаймарăн: курăсăн,
Кёç çатăр! çыпăçать металл.

- Мёскер хавасла эс паян? -
Сасартăк ыйтрё Велиме. -
Телейлён, сисёмлён кулан,
Мана юрать-и тёпчеме?

Хёр-тантăш, ырă Селиме
Çаплах илет кула-кула.

Пытараймасть. Йăлл! кĕлеме
Питне ун çапăннă, вула!

Чи варлă туйăм тулалла
Ялан тухасшăн талпăнать.
Хăй тăванне ун тупмалла, -
Асту, тытса ан чар ăна!

Инкек тавраш̆ĕ пур-и сан -
Ун пек чухне хŭхет самай.
Йăлттам хаваслăх тупăнсан,
Вăл йышлăланĕ тухнă май.

Çыру-мĕн илнĕ Селиме,
Хăй калашле, «кĕтмен çĕртен».
Мĕскер тумаллине пĕлмест, -
Ыйтать хăй пек чипер хĕртен.

ЙĂКĂШ ÇЫРĂВĔ

«Ыр ентеш-пике, тархасшăн,
Каçарсамччĕ, Селиме!
Ырă кун сана сунасшăн
Çакă çырăва илме.

Мĕн кĕтет, пĕлместĕп, ŭлĕм?
Чи малтан çакна калам:
Йышăнсам манран хĕрŭллĕ,
Чăн гвардеецла салам!

Тĕлĕнсе ан ŭк, пикеçĕм,
Манăн çакă çыруран.
Эс çулпа пăртакçă кĕçĕн,
Пулнă урăх касăран.

Пĕр-пĕрне сайра тĕл пулнă,
Урама тухсан кăна
Хушăран выляннă, кулнă,
Пĕл: ачалăх вăл - хăна.

Ŭссе çитĕнтĕмĕр акă,
Сартăмăр çунат. Унтан
Вĕçрĕмĕр тухса вĕт-шакăр
Пулнисем тăван ялтан.

Кĕркунне ĕмĕтленеттĕм
Тавраннма яланлăхах.

Таврана вут-çулăм, тĕтĕм
Карса илчĕ чăн-чăнах.

Шан пире: эпир хаяррăн
Тавăратпăр йăх-яха.
Час вĕçленĕ-ши çав парăм?
Каламашкăн йывăр-ха.

Çĕртмене канма пырсассăн,
Тĕл пулсассăн ăнсăртран
Пуçласа сывларăм ассăн,
Эс каймарăн асăмран.

Каçарсам, калас сăмахăм
Тупăнмарĕ ун чухне.
Тĕлĕк пулчĕ-и, чăнах-и? -
Чухлаймарăм ахăртнех.

Çитменне хыпар-хăнарĕ
Тип аçа пек пулнăран,
Тен, чĕлхе çаврăнаймарĕ, -
Тен, ăс çитрĕ-ши кайран?

Калаймарăм... Халь калатăп...
Кĕç кĕретпĕр, ак, фронта...
Ху та лайăх ăнланатăн,
Шăпи иккĕллĕ кунта.

Тен, юлатăн ырă-сывă,
Е хума тивет пуçа?
Калайман сăмах вăл - йывăр,
Кун пекки чуна хуçать.

Çавăнпа калатăп уççăн,
Çырупа пулин те, халь:
Пулччĕ манăн çывăх тусăм,
Аякран тăсатăп ал.

Таврара - пушар та вилĕм,
Ум-хыçа ўкет йĕтре.
Юрату ăша-и килĕ?
Пурнăç çавăнпа хитре...

Юрату килсе çитсессĕн
Тамăкра сарать чечек.

Куç хупсассăн та пĕр эсĕ
Умăмран каймастăн тек.

Сивĕре чухне те ăшă,
Вут ўксессĕн те тўсен...
Питĕ вăхăтлă салтакшăн
Юрату çўрет, ĕнен.

«Çук!» - тесе чуна ан сивĕт.
Çилленсессĕн те, эхер,
Çыру çырччĕ, ылтăн çивĕт,
Тўррине кăна пĕлтер...»

- Эй, эс телейлĕ те иккен! -
Каларĕ савăк Велиме
Хĕр-тантăшне. Хушать чеен
Çыру çырма тата кĕтме.

Унтан хăй ассăн сывласа
Пĕлтерчĕ, тантăшне кура:
Ахаль çеç мар, сăвăласа
Çырать-мĕн ун патне Курак.

7.

Ĕç-пуçĕ - çапăçури çар...
Траншея... Тĕтĕм... Тар шăрши.
Тăшман хĕсет, вăйсем тан мар.
Татах чакмашкăн тивĕ-ши?

Хăçан çĕкленĕпĕр хўмен
Чăлпар! ватма çĕлен пуçне?
Пĕр хутчен мар-çке çĕклемен
Эпир Тăван çĕр-шыв хĕçне?

Анчах - приказ... Итлемелле...
Курăнарах парать çўлтен.
Шăпах чи кирлĕрех тĕле
Мехелĕ çитеймен-и, тен?

Ялан чакатпăр каялла...
Юлать хыçа хула та ял...
Эппин, хăвна ху ил алла,
Кун пек чухне те туп эс хал.

Чеен те вăрттăн çыртакан
Йытта чарма ансат-и-ха?

Çĕре таптарĕ ют такан,
Кăтартрĕ шар ман халăха.

Чун кӳтнине, ăш хыпнине,
Выçлăхпала терт-мăшкăла...
Тӳсмешкĕн тиврĕ малтине
Мĕскер-мĕскер кăна, кала!

Ку çак тискертерех, ĕнен,
Хаяртарах та вилĕмрен.
Ырри те çитĕ ӳлĕмрен,-
Ун чух салхуччĕ пирĕн ен.

Йăлт тӳсрĕç Эптипе Курак
Çав пит тумхахлă вăхăта.
Кунсем çаплах каç пек хура,
Мĕскер кĕтет иккен малта!

* * *

Танк - хурçă крепость, вăй-хăват.
Апла пулин те, танк - мишень.
Ку чух хăй хурçă та çунать,
Асар-писер йĕтре тивсен.

Вăя ахаль сая яман,
Шалта чупать юн, вĕресле.
Хĕрӳ пит килчĕ çав самант,
Тăшман хĕсет, хĕсет, эсрел!

Вăйсем тан мар-çке-ха çавах...
Каллех чакма тивет, каллех...
Мĕн чухлĕн тупрĕçĕ çăва,-
Епле чăтать анне-çĕр!..
Эх!..

Чĕре çине яланлăх карт
Чĕретех вăхăт çĕççипе.
- Пулатпăр эпĕр арьергард! -
Пĕлтерчĕ Йăкăш рацпипе.

Тӳнккет пĕррех йĕтре-тăпач
Ганссен, фрицсен пуç чашкине.
Пĕтессине кура-тăркач
Леш сĕкĕнет çине-çине.

Курак пит-куçĕ - хăрăм, тар.
Хĕмне хупсах ун тăмалла.

Водитель - Йăкăш.
- Шарлантар!..
Пĕр ĕç кăна-и ик алла!

Танк - крепость, тĕрĕс ку сăмах.
Вăлах - мишень те, шел, чăнах.
Калаççĕ: пуля - суккăрах,
Эппин, йĕтре те çав-çавах.

Çĕр чĕтĕренчĕ... Мĕн тăвас?
Тăлланчĕ улăп çăпати...
Анчах та сывă экипаж,
Вут явăнать люка çити.

Ак, уçрĕç аялти люка,
Ум-хыçлăн тухрĕç те шуса,
Сăнарĕç çывăх лаптăка:
Тăшман уçма памасть куçа!

Йăкăшпала Курак - чăваш,
Хусан тутарĕ -Эмиржан...
Ыр-сывă юлчĕ экипаж.
Мĕскер тăвас фашист курсан?

- Пĕрерĕн шăвăнса тухас!..
Хушать те Йăкăш... Хăй юлать.
Çапла, ку пулчĕ халь - приказ, -
Йышу ăçта сан - хăвала!

Шăлать тăман... Пите-куçа
Иле-иле сапать юрпа.
Ху çĕрýнте эс ху хуçа, -
Вит, вырăс хирĕ, шупăрпа!

Çапла упра ачусене
Тăшман курса лектересрен.
Вăй пар халь эсĕ вĕсене
Тухма хăрушă кĕтесрен.

Тăман итлерĕ... Шупăрпа
Хуплăрĕ икĕ çын йĕрне.
Хистерĕ, чĕнчĕ çав çулпа
Шуса тухмашкăн тепĕрне.

Часрах!.. Часрах!.. Вăрман кати
Хыçал енче курнать хуран.

Унта çитсе ўксен, ытти,
Салтак, йăлтах килет санран.

Танк вут сапма пăрахнăран
Хăюллансах çитет эшкер.
Пĕрре перет вăл тупăран,
Тепре тĕллет ăна çакскер.

Йăлт çитнĕ çакă шăртланса,
Çине-çинех перет вăл халь.
Сасартăк кайрĕ шартлатса...
Тип вутă пек çунать металл.

Тинех йăнса çитет çилли
Танк, вырăс танкĕ аркансан.
«Çук экипаж тĕлли-палли?
Пĕтнех, - шутлать, - апла пулсан».

Çак хушăра хура ката
Хăйпе хуплаpĕ Йăкăша.
Вăл кĕрт ăшне пута-пута
Çывăхлатать инçе хушша.

Вăл шурĕ-шурĕ кĕрт ашса,
Тăшман сиссен-курсан - пĕтен!
Йăлтах пиçсе çитет ăшша,
Вăрçать хăй фрицсене:
- Кикен!..

8.

Тухайрĕ Йăкăш тамăкран,
Асаплăн çитрĕ те утса,
Пĕлтерчĕ хăй çинчен аран,
Кĕçех каятчĕ йăванса.

Кунтан ăсатрĕç санбата,
Пĕр-ик кунтан вăл илчĕ вăй.
Сестрасене халь васкатать,
Лара-тăра пĕлмерĕ хăй.

- Ăçта Курак?
- Курман-илтмен...
- Ăçта ун тусĕ, Эмиржан?
- Тен, иккĕш те сывах, вилмен...
Кунта тĕрли пулать вăл, шан!..

Ав, ху та юлнă-ха сывах.
Тĕлĕнмелле, аса илсен...
Шырарĕç сиплĕрех сăмах
Чи çывăх, хаклă тусĕсем.

Анчах ун чунĕ лăпкă мар,
Чĕри çаплах çунать вутра.
Ăçта-ши шăллĕ, янавар,
Çак пит синкерлĕ самантра?

Ăçта маттур Курак? Ăçта?
Ăçта çухалчĕ Эмиржан?
Е çул çухатрĕç-и таçтан?
Кĕрет çак шухăш та ăша...

Е пуля, е йĕтре лексе
Юлмарĕç-ши вырттса хире?
Чул евĕр йывăр шухăшсем
Пуртан хŭхлерĕ чун-чĕре.

Епле пулсассăн та, халь ун
Тупас пулать Курак йĕрне.
Çавăнпала çунать те чун,
Тухмасть çеç тĕтĕм куç умне.

Эппин, çул малалла кăна!
Каллех тăшман енне çĕклен!
Вăл тытса илнĕ салана
Кăларĕ ирĕке ку ен!

Ыран - атакăна, вута,
Паян - яш аллинче канверт.
Çырать-мĕн Селиме ялтан,-
Хумханчĕ Йăкăш çавхатер.

СЕЛИМЕ ÇЫРĂВĔ

«Çыруна эп илтĕм, Йăкăш!
Шур хута хуратнă май
Сан çинчен шутлатăп тăтăш,
Çăмăл мар унта ай-ай!

Çăмăл мар, паллах, пĕлетпĕр,-
Сăхă та хаяр тăшман.
Çич юта çапах та эпĕр
Пуç çапмашкăн хăнăхман.

Çакна çеç паян каласшăн:
Шалчи тулĕ аçтаххан!
Çав куна çывăхартасшăн
Тĕмсĕлетпĕр-çке ялан.

Çырăву пĕр хумхантарчĕ,
Пĕр çĕклерĕ чĕрене.
Каласмашкăн вăхăт марччĕ
Тĕл пулсассăн пĕр-пĕрне.

Кам шутланă - кун самантлăх
Пулнă шухăшсăр, айван.
Кăкăрти питех те хаклă
Сăмаха та калайман.

Тĕл пулса калаçрăм эпĕ
Аçупа. Çӳрет вăр-вар.
Çăмăл мар ăна, сисетпĕр,
Хăй пуçне усасшăн мар.

- Валеçсе çитет пуль, - терĕм,-
Хаçатпа çыру тавраш.
- Е фронта каясшăн, хĕрĕм? -
Тет кулса хастар чăваш.

Каласан - çуталчĕ пичĕ.
Халĕ акă юсавра.
Вĕрентмешкĕн хапăл пулчĕç -
Кĕç çӳретĕп трактора.

Ытларах хĕрсем çӳретпĕр...
Кӳршĕри Велимепе
Пĕр ялтан халь иккĕн эпĕр,
Вĕренетпĕр хĕлĕпе.

Пирĕн шеф - Хуçа Илтерĕ,
Хăй ĕçне пĕлет ăста..
- Юсава та çӳрĕр, - терĕ.
Халĕ эпĕ, ак, аçта!

Е алсиш, нуски çыхатпăр
Каçсерен... Мĕн юлчĕ-ши?
Час сире ярса паратпăр.
Çав парне те - кил ăшши.

Тăван ен асра-и пулĕ,-
Ан хăра, ан иккĕлен.

Пуç çине йĕтре те пуля
Тăкăнмасть кунта, пĕлен».

Вулать те каччă - ăнланмасть,-
Çырмасть хĕр юрату пирки.
Эппин, чăнах-ши хăяймасть
Чунне уçма чăваш пики?

Кулать усиллĕ старшина:
- Çырмасть пике, юратмасан...
Эп хам та курнă, шан мана!
Шутла: йăлтах вăл халĕ сан...

9.

Салхуллă Синерпи. Килте.
Сĕтел çинче - хаçат тĕрки.
Ку чух кирек те хăш тĕлте
Этем шутлать фронтри пирки.

Мĕнле унта ĕçсем? Хăçан
Тăшманăн тулĕ-ши шалчи?
Ахаль-и тухнă Анăçа
Кил пуçĕ, пиччĕшĕ, ачи?

Юратнă мăшăр е савни,-
Чи çывăх çын кĕрет вута.
Паян капни совет çынни
Ылхан ярать хаяр юта.

Кĕтет çыру, хаçат-журнал,
Мĕскер унта, фронтра, çĕнни?
Пĕр ĕмĕтпе çĕкленнĕ халь
Пирте хула е ял çынни.

Çав ĕмĕт - вăрă-хураха
Хăй йăвинчех тĕп тăвасси.
Пĕлмест, кĕтмест вăл урăха,
Сăвăплă, çирĕп ун сасси.

Кĕтет, шанать те ĕненет
Çав Çĕнтерӳ те килессе.
Пĕр ĕмĕтпе вăл кӳлĕнет
Куллен-кун çăмăл мар ĕçе.

Çавăнпала вăл каç та ир
Илтесшĕн савăк хыпара.

Чун кĕтнĕ хаçатсем, эсир
Мĕскер çыратăр-ха, ара?

Вулать те Синерпи - йĕрет,
Ёсĕклесех йĕрет пĕччен.
Вулать вăл... «Правда» пĕлтерет
Пĕр Таня ятлă хĕр çинчен.

Допрос тăваççĕ-мĕн ăна,
Анчах та лешĕ шарламасть.
- Кам эсĕ?
- Таня! - тет кăна.
Вăл вилĕмрен те хăрамасть.

Хĕнеççĕ çав хĕре тискер.
Ыйтсассăн шыв - сĕнеççĕ вут.
Фашист вăр-хурахне мĕскер?
Çара уран юр çийĕн ут!..

Анчах çĕнеймĕç чăнлăха!
Шар тӳснĕ хĕр тупать хăват.
Хăйне кун панă халăха
Вăл çирĕп паттăрлăх сунать.

Фашист! Мур пуçĕ! Чун илли!
Этем сăнарĕ пур-и сан?!
Мĕне кура эс, мĕн валли
Юнланнă аллуна тăсан?

Куççуль тумлать, тумлать, тумлать...
Шур тутăр вĕçĕ йĕп-йĕпе.
Ман халăх йывăр кун кунлать,-
Çакна туятăн чĕрӳпе.

Пӳрт ăшчикне краççын лампи
Сапса тăрать хăй çутине.
Çапла пĕччençĕ Синерпи
Кĕтет каç-ирĕн Эптине.

Сĕтел çинче - хаçат тĕрки,
Стена çинче те - çав хаçат.
Шпалер таврашĕ çук пирки
Кив хут унта та çыпăçать.

Шултра е вак шрифтсемпеле
Çырни... Ӳкерчĕксем-и çак...

Куллен куçпа курнипеле
Кĕрсе юлаççĕ пурнăçа.

«...И шли на дно, на дно, на дно...»
Сăмах пырать-ши кам пирки?
Пуçламăш çыпăçнă... Кино...
Вулатăн: «Парень из Тайги...»

Хулан пĕр йĕкĕчĕ çинчен
Ӳкернĕ фильм та... Вула!
Пăхать вăл сан çине пĕччен,
Хăй тухнă çав хăруш çулах...

Рабочи пĕшкĕннĕ... Йĕтре
Хайлать иккен ăста алли.
Вулатăн эсĕ çав питре:
«Йăлтах тăватпăр фронт валли!..»

Кур: паллă, ишлĕк хулара
Утса пыраççĕ салтаксем...
Сăнран уйăрма çук вара,
Пĕртен-пĕр силуэчĕсем.

Çырни те пĕр йĕрке унта:
«Фронта каяççĕ резервсем...»
Инçе, тӳлек çуртра, ялта
Хускатрĕç сан чунна вĕсем.

Çапла... Пĕр пĕчĕк ĕмĕлке
Пулин те хаклă-çке кашни.
Вăл кам? Шăпи мĕнле иккен?
Пĕлеймĕн! Кăлăх тăрăшни!

Кирек епле пулсассăн та,
Вăл пур, çав çын, утать фронта.
Çаплах вăл юлĕ асунта,-
Шăпи ун иккĕллĕ унта.

Атте-и, ывăл е пичче,
Савни тивет-и вăл хăшне -
Епле пулсассăн та, ĕçчен -
Вăл саншăн кĕнĕ вут ăшне.

Эппин, хальччен курман-илтмен
Пулсан та, хаклă пур енчен.

Эс çавăнпа та темĕнччен
Куçна илместĕн ун çинчен.

Вулать те Синерпи хаçат,
Асрах Йăкăшпала Курак.
Шухăшпала фронта куçать,-
Çаплах пĕри çырмарĕ, ак.

Кĕç пилĕк уйăх та пулать
Юлашкинчен çыру килни.
Фронтра унта тĕрли пулать:
Вилни, хыпарсăр çухални...

Анчах ан лекчĕр тыткăна,
Ку - вилĕмрен те хăрушши...
Шутланăччĕ çапла кăна,
Шаккарĕ алăка тахши.

Паллах, Эпти ку. Вăл килет
Ялан çапла, кая юлса.
Ёç-пуçĕ - лав, ĕлĕкхилле,
Ку чух йăлт çитрĕ шуралса.

Ик-виçĕ кун пушшех кичем:
Чĕнсех каймасть... Васкать ĕçе...
- Эпти?! Эп час... Уçса кĕртем...
Эпти кĕрсе тăрать кĕçех.

- Сана мĕн пулнă? Ма йĕрен? -
Ыйтать Эпти мăшăрĕнчен.
Каларĕ лешĕ йĕркерен
Пĕр паттăр хĕр шăпи çинчен.

- Çапла, пурне те çăмăл мар...-
Хăй ыталарĕ мăшăрне.-
Пул çирĕп, Синерпи... Хыпар
Килни çитет часах эрне.

Пама шикленнĕ почтальон,
Хама курса, темиçе хут.
Куракăн, пирĕн ывăлăн,
Хут килнĕ... Килнĕ... вилнĕ хут...

Ан хуçăл, амăш, ан хŭхле,
Атя, пĕрле ларар-ха... Кан...

Вăл, кун пекки, тепре, итле,-
Йăнăшпала та пулакан.

* * *

Кĕтмен-туман хăруш хыпар
Хĕстерчĕ тепĕр чĕрене.
Кам пулчĕ? Селиме! Вăр-вар
Чупса та çитрĕ ирхине.

Велимесенĕн килĕнче
Сакай тулли запаслă пай.
МТСри пек - эй, тĕнче! -
Нуши те, ĕçĕ те нумай.

Нăш-нăш выртать ĕсĕклесе,
Минтерĕн пичĕ - йĕп-йĕпе.
Калаçрĕ Селиме, кĕрсен,
Чун-чĕререн хăй тусĕпе.

- Ан çун, ан татăл, Велиме!
Ан хуçăл пит, чунна хытар.
Халь пирĕн юрамасть вилме,
Чĕре суранлă? Тавăрар!

Çырмасть ман Йăкăш та пачах...
Çук, пулас мар фашист хурри.
Хирте ўсен кашни пучах
Тăшманшăн пуля пултăр-и!

10.

Пĕррехинче, ĕçрен килсен,
Эпти каларĕ мăшăрне:
- Çула кайма тирпейленсем,
Çитес районăн центрне.

Кўрсе килейнĕ-мĕн унта
Ачасене Ленинградран.
Хам куçпала йăлт куртăм та...
Тухма пĕлмеççĕ асăмран.

Синерпие аван пĕлен:
Итлерĕ тимлĕн, хумханса.
Епле тўсес ача тесен,-
Самант - йăлт çитрĕ тумланса.

Ирех тăрать вăл ирхине,
Кумать тĕпелĕн кукринче.

Илтни витерчĕ чĕрине,-
Бежăнцăсем-и? Эй, тĕнче!

Часрах! Вĕт-шакăр инкекре!
Илес пурне те хŭтлĕхе!
Анне чĕри - хитре чĕре,
Пĕр иленсен - ĕмĕрлĕхе.

Пĕр иленсен, пĕр хĕмленсен
Вăл ялкăшать сŭнми, ялан.
Ахальтен мар, анне тесен,
Кĕтсе тăратăн чунпалан.

Кайран, сухал шăтсассăн та,
Çав туйăма манаймăн эс.
Ĕмĕрлĕхе сан ăшунта
Анне тата тăван кĕтес.

Варта ŭтленнĕ-и е ют -
Ыратĕ амăшĕн чĕри.
Сŭнме пĕлмест ăшра çав вут,
Сив чух та кăкăрта вĕри.

Çапла пулма пĕлнишĕн тав!
Хĕрарăм! Пуç пĕкем сана!
Яту мăнаçлă, чаплă та,-
Ялан çŭлте тыт эс ăна!

* * *

Чултан çĕкленĕ шур кермен.
Хуçи - йăлттам ача-пăча.
Иртсе мĕн чухлĕ çŭремен,
Кĕрсе тухман вара пачах.

Сăлтав пулман-и темелле,
Ку чух, ак, вăхăт та сайра.
Кĕтсе илет тĕлĕнмелле
Ыр кăмăллă хитре майра.

Унпа паллашрĕç мăшăрсем,
Тирпейлĕн иртрĕç тĕпеле.
Кĕç, мĕншĕн килнине пĕлсен,
Çиçсе вăл илчĕ хĕвелле.

- Тархасшăн! Ларăр. Çул килсе,
Тен, ырнă пулĕ... Ак, тенкел...

Хăш ял? Миçемĕш çулхисем?
Ăалсем мĕнле?
- Тĕрĕс-тĕкел...

Майра ыйту парать тата:
- Арçын ача е кирлĕ хĕр?
- Ик ывăл пур... Фронтра... Тăхта,
Иккĕшĕпех те илĕпĕр.

..Хĕвеллĕ, хăтлă пулĕмре
Ача-пăча вылять-кулать.
Вĕсем çине пăхсан чĕре
Хумханнипе вăр-вăр тăвать.

Ăçта аттепеле енне?
Ăçта кил-çурт, тăван-пĕтен?
Чĕрен çĕр анлăш суранне
Чăнах тусет-пи мĕн этем?

Мăнтарăн вăрçă ачисем
Ку чух тусеççĕ, акă, кур!
Чĕвĕлтетеççĕ чĕлхисем,
Кулма та вăй-хăвачĕ пур.

Вылять тетте-лашапала,
Пуканелле - ача-ачах.
Паллах, чĕррин - пурăнмалла,
Салхуллă куçĕсем анчах.

Мăн çын пек ăслăн тинкерет
Вăл сан çине. Юлать асрах.
Çапла чуна йăлт витерет,
Вăл çулĕнчен те аслăрах.

- Анютапа Светлана пур,-
Калать çурт пуçĕ. - Йĕкĕреш...
Эпти хаваслăн:
- Çырса хур,
Пĕрлех, апла-тăк, ўстерес!..

- Анюта, кил-ха çывăха,
Светлана, эс те кил-ха, кил!..
Йăлт çитнĕ пĕчĕк халăха,
Эс кăчăк турт çеç, чĕнсе ил!

Ун кўтсе çитнĕ чĕрине
Эс ăшăтмашкăн туп сăмах...

Санпа тĕнчемĕр хĕррине
Вĕçмешкĕн хатĕр вăл, чăнах.

Этем кун-çулĕ-мĕн кăра,
Вăл океан пек чӳхенет.
«Атте-анне» тени вара
Чăн-чăн карапăн илтĕнет.

Унпа эс путмăн авăра,
Унпа хумран та вăйлăрах.
Атте-анне пур чух çумра
Эс инкекрен те ан хăра.

Ун чух тумхах та - тумхах мар,
Ун чух эс кӳтмĕн сивĕре.
Атте-аннесăр ан хăвар,
Шăпа, ӳссен те эс пире!

11.

Куçне уçайрĕ те Курак
Чухларĕ: вăл вилмен, сывах!
Эппин, телей çук мар куран?
Тӳрех кăнни, тен, аванрах?

Каç пулнă... Уйăх çуккипе
Тавралăх тĕксĕм, куç курми.
Фашист мундирĕ пек тӳпе,
Çап-çутă çăлтăр - ун тӳмми.

Тăватă-пилĕк çухрăмра
Вут хыпнă пĕчĕк салана...
Умри пĕчченçĕ ват йăмра
Ун çуттипе кăварланать.

Куракăн пуçĕ çаврăнать,
Шавлать чулпа тивертнĕ пек.
Асра пĕртен-пĕр шыв кăна -
Çăварĕ типнĕ пĕтĕмпех.

Ăшра та ялкăшать пушар,
Ăна та хыпса илнĕ вут.
Ăçта-ши фронт? Тен, юнашар?
Аса илет çын тепĕр хут.

Çапла... Вут хыпнă танк... Унтан
Йĕтре те пуля шăхăрни...

Ўксе шартлатрĕ ăнсăртран
Курак умнех тăшман «парни».

Тек астумасть... Хуплать тĕтре.
Ăçта эс, Йăкăш? Эмиржан?
Пушар çути çеç пĕлĕтре,
Тўлеклĕхе питех ан шан!

Хускалчĕ вырăнтан Курак -
Алли-ури сурать ай-ай!
Эппин, тăнне çухатнă çак
Йĕтре ўксе шартлатнă май.

Ăçта илсе каяççĕ... Чим?
Ăна çара çунапала?
- Салтак вăранчĕ, господин! -
Такам калать...
Çунать сала.

Малта, хыçра - ĕмĕлкесем.
Вăрçса илеççĕ:
- Руссиш швайн!..
Курак чухларĕ: «Нимĕçсем!..»
Вăл-тыткăнра... Мĕскер тăван?..

12.

Йĕри-тавра - пралук карта,
Ўпле таврашĕ - вăл та çук.
Салтакĕ йышлă хуралта,
Сыхлаççĕ хытă - шăй та çу!

Вĕреççĕ шуххăн йытăсем,
Лараççĕ сыхă, сăнчăрта.
Эсрел хуçи хушсан, вĕсем
Хăрушă урнă кашкăртан.

Этемĕн ĕмĕрхи тусне -
Йытта тăвайнă та тăшман,
Вĕреннĕ тĕплĕн хăй ĕçне,
Хастаррăн тăрмăшать, ăнман.

Вăл сумлăрах та этемрен,
Ĕçет-çиет паха апат.
Яшку сан - йўçĕ эрĕмрен,
Çапах çын ирĕксĕр сыпать.

Чĕнмеççĕ тек ăна ятпа,
Пур - бирка, номерĕ ун, кур!
Йытта - çапмаççĕ патакпа,
Таçта тă йыттăн ячĕ пур.

.... Стройпа тăратчĕç пĕрреччен,
Яланхи пек, тĕрĕслесен,
Кунтах куçларĕç темĕнччен
Яка та штатски этемсем.

Ермĕнккере купса тавраш
Паха тавар суйланă пек,
Апла-капла çавра-çавра
Юп курчĕç, тĕрĕслерĕç тек.

Ак, улача тумли-юмли
Çывхарчĕ. Маййăхлă, хыткан.
Хăй çĕрĕнче питех сумли, -
Çакна пĕрре пăхсах чухлан.

Хыткан этемĕн аллинче
Çинçе те кукăр çеç патак.
Шăпах Куракăн тĕлĕнче
Тăп! чарăнса тăрайрĕ çак.

Эрешлĕ, кукăр патакне
Тӳрех тĕллерĕ яш çине...
Вара хайхи хуçа патне
Ăсатрĕç çавă ирхине.

* * *

Ырхан пит-куçлă çĕн хуçа -
Курт Вальттер ятлă фабрикант.
Вăл анлăн сарнă ĕç-пуçа,
Хăма завочĕ тытакан.

Завод йĕри-тавра - хӳме,
Шалта - барак çине барак.
Чура-çынна ĕçе кӳлме
Ансат - виç хут услам парать.

Кăшман турамĕ те шпинат
Ярса вĕрет те хурана -
Пăхсассăн - çăлтăр курăнать!
Антар та ума хур ăна!

Чи мăнаçлин те ун чухне
Пăкки шанать, тесе-ши Курт
Тискер фашизм чăнлăхне
Кăтартрĕ уççăн тепĕр хут.

Аран-аран ал-урине
Йăтса çӳрет чура-этем.
Çапах çĕкле эс пĕрене,
Е йăт хăма - атту пĕтен.

Йăвантăн, ывăнтăн - капут,
Сана яраççĕ «расхута».
Кун пек чухне хавасла Курт, -
Каллех кулать хитре тута.

Анчах пĕрне вăл уяман,
Йăлтах-çке маннă чăнлăха, -
Курак, чăваш ачи, манман
Кун пек чухне те çынлăха.

Совет çыннин чунне хуçма
Меслет те, май та çук иккен.
Шăпах çакна вăл чухлайман,
Акмасăр ашкăрнă кикен.

Шăпа çывăхлатать çынна,
Вăл туслăха йăлт тĕрĕслет.
Курак та малтанхи кунах
Шырарĕ тĕрлĕрен меслет.

Унпа паллашрĕ, кунпала...
Хушсассăнах пĕр-ик сăмах
Чухлатăн эсĕ кампала
Пуплешнине. Ёнен, чăнах!

Юлташлăх, туслăх чăмăртать
Чăн-чăн эртел - Хирĕçтăру.
Кăвар сӳнмен-ха кăкăрта,
Пăчлаймĕ нимĕнле чару.

Хăюсăр халлĕхе эртел,
Тĕллевĕ унăн пысăк мар:
Перекетле вăйна, туп мел,
Çăл юлташна, ӳкме ан пар.

Мĕнпе сывлать мăнаç тĕнче?
Мĕнле-ши Тухăçри фронтра?

Фашист тарать Мускав енчен?
Яра парас килет: «Урра!»

Эппин, ун ĕçĕ те кирлех,
Фашист ӳтне çиет шалтан.
Сăмах хăвачĕ вирлĕрех
Витĕмлĕрех те пăшалтан.

* * *

Ыр шăршă кăтăклать пыра.
Чухлатăн - кухня çывăхра.
Пуçне çĕклерĕ те Курак
Сасартăк курчĕ повăра.

Васкавлăн тухрĕ. Халатпа.
Ун пуçĕнче - шап-шур калпак.
Витре йăтса хăрах алпа
Йăкăрттарать патвар халпа.

Йытти хăй хыççăн явăнать,
Пăру пек пысăк та йăваш.
Витрерине валашкана
Хайхи-майхи силлерĕ лаш!

Хăй кĕрсе кайрĕ каялла.
Йытти пĕр-иккĕ шăршласан
(Хуçи пек тутă пулмалла)
Лӳпперрĕн утрĕ пăрăнса.

Апат каяшĕ - мăккарун,
Выртать ахаллĕн пăсланса.
Курак тинкерчĕ те ун-кун,
Ун пуçĕ кайрĕ çаврăнса.

Татах тинкерчĕ - юнашар,
Çук, курăнмарĕ полицай.
Пĕртен-пĕр нимĕç. Паллашар.
Вăл - заводри ват маçтăр - Клай.

Ытти пек мар вăл, Клай. Йăваш.
Çӳренĕ хăй те тыткăнра.
Ахальтен мар ютри чăваш
Кăмăллăха курать унра.

- Каларĕ Клай:
- Атя, вĕçтер!
Анчах, асту, эс, тупата!..
Самант - çын явтарать çакскер
Валашкари ăш апата.

Алпа иле-иле хыпать,
Хăй тинкерет пурсуй çине.
Леш - хам! та çук. Куçне хупать,
Тăсать пуçланă ыйхине.

Сисмен те - хыçалтан такам
Тытса çĕклерĕ çухаран.
Пăхать Курак: хураллакан!
Çĕкленчĕ яш аран-аран.

Шатра сăн-питлĕ. Мăйăхпа.
Чăпар ун çÿçĕ те. Çавах
Патвар-ха ватă сывлăхпа,
Мундир çеç уртнă, çын - çынах.

Çитет уратупань вĕçне
Куракăн чунĕ çак самант.
- Ан çи эс йытă çимĕçне,
Ман чĕрене эс ан амант.

Тахçан сăнатăп эп сана,
Анчах пĕлместĕп-çке ăсна.
Сăну ытти сенчен расна,-
Пуплерĕ нимĕç вырăсла.

Ку Клай пулмарĕ - полицай.
Сăмахĕ тĕлĕнтерчĕ шарт!
Чăн вырăсла çапать ай-ай!
Тумпа - фашист, чĕлхи - юмарт.

- Кала, юлташăм, ăçтисем?
- Юлташ-и? Тур çырлахтăрах!..
- Питех тиркемĕн эс, пĕлсен,-
Çуралнă эп Российăрах.

- Çапли çапла пуль те... Раççей
Питех те аслă, сумлă ят.
Ютра тытма çак тивĕçе
Чунпа таса юлас пулать.

- Эс çамрăк-ха, анчах вĕри...
Хитре юрлатăн та... Тăхта...
Ман акă - пурăнăç хĕрри...
Хам ирĕкпе лекмен юта.

Яш чух унарĕ самана...
Эп - Чĕмпĕр енчисем, чăваш...
- Чăваш?!. Ан тĕлĕнтер мана!..
- Чăваш...
Старик сывларĕ лаш!

- Апла эпир пĕр енчисем...
Чăваш-çке эпĕ те...
Курак
Ват полицай «чăваш» тесен
Юпа пек хытса тăчĕ, ак.

- Хăш ял?
- Саратайсем пулап.
Эп - Петĕр... Имет Петĕрĕ.
- Кулакăн ывăлĕ апла...
- Вăл - иртнĕ... Пурнăç пĕттĕрĕ...

Телей Эпти ăрăскала
Пĕтерчĕ, хучĕ те ура...
- Ăна апла эс ан кала.
Мана вăл çăлчĕ. Эп - Курак.

Анне ман пулнă Кĕлпике...
Çак пĕр ята çеç асăнсан
Мучи шуралчĕ кĕл пекех...
- Апла... açу. açу эп сан...

Мăю çинче сан - тур палли,
Асăрхасаччĕ теплерен...
Чĕтрерĕ полицай алли,
Куçран тинкерчĕ çĕнĕрен.

- Пулма пултараймасть... Тăхта!..
Атте-анне та манăн пур.
Анчах вĕсем, вĕсем ялта,
Тăшман чури эс пултăн, мур!

- Эс - çамрăк-ха... Ĕне пусман
Уру çине. Кунта - пĕтен.
Çемье те, килĕм те пур ман,
Тăватăп, килĕшсен, этем.

Раççей çине халь тин эс сур,
Çавах пĕтет часах Совет.

Кунта - тăван аçу сан пур,-
Ун хŭттинче, ну, кам тивет?!

Пулман-мĕн санăн ăраскал,
Çиетĕн йытă çимине.
Нихçан каçарас çук Мускав
Ютра сыв юлнă çыннине.

Эп пулнă санашкалах яш,
Эп - хамăн самана çынни...
Чăваш - ĕçчен, сăпай, йăваш...
Вăратрĕ усалне çĕнни.

Пуçланчĕ ахăр самана,
Кисренчĕ кив йăлттам йĕрке.
Ейŭ шыв илчĕ таврана,
Хускатрĕ-ишрĕ çĕрĕке.

Эп - хум çинчи пĕччен турпас,
Чылай чŭхентĕм çаплалла.
Çухатнă канлăхе тупас
Тесе чун туртрĕ кив яла.

Анчах унта тупмарăм эп
Чăлханнă канлĕх-телее.
Çапах тĕнче касса çŭреп,
Кĕтни çитмерĕ темелле.

Тăван уй-хир çаплах асра,
Çаран та улăх, кил, хуралт,
Сенкер тŭпе, хура тăпра...
Çулсем иртсен те куç курать.

Çырма-çатра та ешĕл çыр
Умра чух хаклă мар пире.
Аякра чух асамĕ пур,
Çав тунсăх çаврăнать чире.

Кив пурнăç, авалхи йăла
Халь тин тавăрăнаймĕç тек.
Пырасчĕ те тăван яла,
Пурнасчĕ лăпкă та тŭлек.

Анчах çакна калам сана:
Аваллăх юлчĕ ялана.

Иртейнĕ чĕлтĕрти куна
Курайăп тĕлĕкре кăна.

Иртни вăл - пирĕн, ватăсен,
Хальхи - яш-кĕрĕмĕн тупри.
Пуласлăх - çĕнĕ ăрусен,
Çаплах пур витĕмĕ тĕприн.

Шăпамăр килчĕ пит кăра,
Тертне куратпăр-ха пĕрле.
Асар-писер Российăра
Этем кун-çулĕ хирĕлет.

Фашист кăна-и-ха тискер?
Шăлать-и Сталин пит-куçран?
Пăхсам: ун аллинче мĕскер?
Палачăн пурттинех куран.

Хайхи-майхи большевиксем
Сахал-и пĕтрĕçĕ пÿкле?
Халь - «халăхшăн тăшманĕсем»...
Äçта вăл тĕрĕслĕх? Итле!

Ку чух, ак, лекрĕн тыткăна -
Çав самантран эс ху - тăшман.
Ёпле-ха шанăн Сталина?
Вăл çын-и? Çук! Вăл - çĕрçăтман!

...Çапла калаçрĕ чылайччен
Синкер шăпаллă сутăнчăк.
Куракăн шухă чĕринче
Йĕтре шартлатнăн туйăнчĕ.

Мĕн-ма тĕл пулчĕ вăл ăна?
Мĕн-ма çак çыпăçрĕ, кĕсен?
Çĕре ÿкетчĕ кăшт кăна
«Аçу эп сан...» - тесе чĕнсен.

Неушлĕ ку чăнах çапла?
Эппин, яла ăçтан пĕлет?
Çитменнине чăн чăвашла
Чиперех сутăнчăк пĕлет.

13.

Хисеплĕ кун - куян çинче,
Тертри - пырать вăкăрпала.

Вăрçать ик тытăм, ик тĕнче,
Пĕрин пĕрне хупламалла.

Ютри пĕр кун та ĕмĕре
Аса илтерĕ-и сана.
Çапах та урнă чĕмере
Хашкарĕ, ахăртнех, сăна!

Ак, хĕл те иртрĕ, çитрĕ çу,-
Мускав сывлать, Мускав пĕтмен.
Илтетĕн урăх калаçу,
Мĕн чуль çав саманта кĕтмен!

Кунта та ахрăмĕ çитет,
Этем туять чĕрипеле.
Хыпарĕ ăшăтать ўте,-
Эппин, тўсесчĕ, тўсмелле!

Мускав та Сталинград сăмах
Ютра парса тăрать хăват.
Пĕри, тепри çўрет чăлах -
Куçран пăхма хăрать, шăвать.

Ĕçпе тухсассăн хулана
Ăна-кăна куратăн эс.
Хыпар кăвар пек саланать,
Тупать вăл чĕрере кĕтес.

Эппин, йăх-ях, эс ху чĕтре!
Раççей нихçан та парăнман.
Мĕнех, халь эсĕ черетре.
Пуçна çиесшĕн... Пĕт, ăнман!

Йăлт тўсрĕ чĕрĕ тамăка
Хастар чăваш ачи, Курак.
Пит йывăр килчĕ çамрăка,
Ват çын пек чăпарланчĕ çак.

Татах та Вăхăт урапи
Кăлтăртатсен шăн çулпала
Картланчĕ çак çынсен шăпи,
Асап шартлатрĕ çурмалла!

Мĕскер амакĕ? Аслати?
Кĕрлерĕ уççăн инçетре...

Тӳпе - таса. Чухлать çын тин...
Çиçет халь шанчăк та питре.

14.

Ак, кĕтнĕ ирĕк! Утăрья!
Çĕклен кĕрешĕве, салтак!
Терт тӳснĕ чун та кăтăрать,-
Вăл çапăçма-и маннă çак?

Тытать те аллине пăшал
Туртса илсе ăçтиçукран,
Калать:
- Куç умĕнчен тасал!
Паян вăйли те çук унран.

Çапла кĕрет тус ытамне
Терт, мăшкăл тӳснĕ çын - Курак.
Совет салтакĕн тум-юмне
Ăна каллех тыттарчĕç, ак.

Кĕтни те çавă çеçчĕ ун,-
Инкек вĕçне тухас чухне
Пурнăçламашкăн ырă сун
Ырми-канми салтак ĕçне!

Усал сунакансем те, шел,
Ку чух пĕтмен-ха çĕр çинче.
Кĕтмен çĕртен усал-тĕсел
Курак тĕлне те тупăнчĕ.

Чĕнсе кăларчĕ пĕрреччен
Яка пит-куçлă офицер.
Ăна-кăна тавçăриччен:
- Каятпăр. Лар! - хушать çакскер.

- Ăçта? Мĕскер тума?..
- Кайран...
Ан ыйт, голубчик, кăлăхах.
Ыйтмашкăн тивĕç халь санран:
Ма сутрăн хамăр халăха?

Хушать пĕрле килнисене
Татса илмецкĕн пакуна.
Мĕскер эс калăн вĕсене?
Тĕртсе кĕрсе пĕр вакуна.

Хупса хураççĕ. Пăртакран
Яка пит-куçлă офицер
Сăмах пуçларĕ катаран:
- Ăçта çуралнă? - тет çакскер.-

Мĕн ятлă? Кам аçу-аннӳ?
Кулакăн ывăлĕ апла?
- Ман атте мар вăл...
- Ман сĕнӳ:
Тĕрĕссине çеç хуравла...

Хăçан илейнĕччĕ çара?
Хăçан лексеччĕ тыткăна?
Аçун ятне ма пытаран?
Кала тĕрĕссине кăна!

Чăн-чăн салтак вилсен - вилет,
Лекмест нихçан та тыткăна.
Çапла пулмашкăн вĕрентет
Аттемĕр Сталин...
Эс хăвна

Çăласшăн çуннă чи малтан,
Тарса тухмашкăн тăрăшман.
Çитменнине - аçу унта,
Чее преступник, сăх тăшман.

Эс тунă, тен, унпа кавар?
Йăлт йышăн айăпна. Эхер...-
Сапать суран çине тăвар
Яка сăн-питлĕ офицер.

- Ёненĕр... Йăнăш ку... Элек...
Пач урăхла... Ман айăп çук,-
Калать Курак. Çаплах сивлек
Пăхать çеç тутă сăнлă чун.

Пачах кĕмест вăл ўкĕте,
Куçайĕн çеç ларать пăхса.
Хĕн-хур, терт тўснĕ йĕкĕте
Кĕç судсăрах лартать хупса.

Куракăн вăхăчĕ чылай
Пĕччен чухне. Ватать пуçне: .
«Ăçтан çапла пĕлет нумай
Çарти чиновник ун ĕçне?»

Тинех ас илчё: пёрреччен
Ана сайларё этемкке.
Калаçрёç, ларчёç темёнччен,
Трофей-эрехё те пур-çке.

Чёлхе пăртакçă сўтёлсен
Унпа калаçрё чёререн...
Çав саманта аса илсен
Шăнать халь чунё çёнёрен.

ЭПИЛОГ

1418 талăк
Тăрмаларё тăхлан çёре.
Кашнине ёмёрсем асăнмалăх
Упрать кăкăрта чёре.

1418 талăк
Кёрлерё çёр çийён пушар.
Мён чухлё çёр-шыв та халăх
Тўсейрё суран та шар!

1418 талăк
Ун шавё татрё ыйха.
Ариец - юнлă алă -
Хăратасшăнччё пирён йăха.

Вёлерчё, тăлларё тăлă,
Вăл çакрё те печё пире.
1418 талăк
Хула çаврăнать пуш-хире.

1418 талăк
Дахау... Майданек... Ытти...
Кёрсен уçăлман тек алăк,
Тулланă фашистсен йытти.

1418 талăк
Кётейрё савни мăшăрне.
Кётсе илеймерёç яланлăх
Чылайёшçавах пёр-пёрне.

1418 талăк
Ёрлерё хура çăхан.
Кётеттёмёр кунсем урлă:
Хăçан шалчи тулё, хăçан?

Йăлт пулчĕ... Пылчăк çăрни те,
Путни те шывра, шурлăхра...
Пире çитĕйместчĕ-ха витĕм
Çав кун, эрнере, уйăхра.

Анчах та эпир хавшак-и?
Пирте вĕремен-и юн?
Вăл сиснĕ-ха, фюрер салтакĕ,
Çакна та, хăй тапăннă кун.

Шăлне вăл самай ыраттарнă
Брест крепоçне çыртнă чухнех.
Вăл туйнă - апачĕ тăварлă,
Ылханнă вăл вырăс йăхне.

«Пулать те... Мĕнле ку халăх?..
Чулран та этем çирĕпрех...»
1418 талăк
Çын тӳснĕ, ӳксен те йĕтре.

Кĕç илтрĕмĕр Зоя та Лиза...
Тюленин, Олег Кошевой -
Çĕршывăвăмăр ячĕ те чысĕ
Парса тăчĕ сулăмлă вăй.

Тухайрĕ Матросов - яш каччă -
Çĕр çийĕн çĕкленчĕ те, ак...
Ун хыççăн татах йĕр хăварчĕç,
Кур: 300 яхăн салтак.*)

Пурне те ятран асăнаймăн,
Манаймĕ пĕрне те чĕре.
Паян та, çулсем иртнĕ майăн,
Хуратпăр чи тĕплĕ çĕре.

Иртет ветеран - пăхатăн,
Унра эс паттăра куран.
Ахаль салтакран тытăнса та,
Шур çӳçлĕ маршал таран.

Сахал-и çĕрте кам ятсăр?
Кашниех чăн паттăр, ĕнен.
Кучан пуçĕпе уямасăр
Кĕчĕ те - пĕтрĕ çĕлен.

---

*) Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче 274 совет воинĕ Александр Матросов паттăрлăхне кăтартнă.

Кам ятсăр?.. Ят пур кашнийĕн,
Калаçнă, çÿренĕ этем.
Ун юлнă ачи-пăчийĕ,
Е çывăх тăван-пĕтен.

Эп курнă... Эп хам пĕлетĕп...
Хастарччĕ, хăват пуртан,
Ырмасчĕ алли те, ури те
Пурнатчĕ ялта Миккан.

Яш каччă, ĕçчен сухаçă,
Ват ашшĕ те амăш килте.
Ят тухрĕ: çын кайрĕ - çухалчĕ,-
Çип татăлчĕ çинçе тĕлте.

Пĕлетĕп... Искак Имечĕ,
Роман персонажĕ мар...
Хĕр пек йăлл! кулса илетчĕ,
Сапатчĕ ун куçĕ кăвар.

Имет комсомолецчĕ мар-и,
Умрах çут сăнарĕ, ак.
Ялти комитет секретарĕ,
Кайран - чи хăюллă салтак.

Ун аслă аташĕ пурччĕ...
Вăл тимĕрçĕччĕ, тепĕр Имет.
Калатчĕç: Илпек Имечĕ,
Сунталĕ - вут-хĕм сирпĕтет.

Кайран çын çухалчĕ хыпарсăр...
Хыпарсăр? Ял-йыш пĕлет:
Вăл паттăра тухнă Указсăр,
Янташ, пулеметчик Имет.

Вăл сывă чух Гитлер эшкерĕ
Пĕр утăм мала иртеймен...
Историк çакна та тишкерĕ,
Эпир çухалмашкăн килмен.

...Сăнне хупламан-ха юшкăн...
Çап-çамрăк Çĕвĕç Ванькки,
Ун тантăшĕсем пĕр ушкăн
Çÿреççĕ - чăваш йĕрки.

Юрлаччĕ... Шур тутăр уснă,
Куччулĕ тумлать ачан.
Вун саккăр тин çеç-ха пуснă,-
Ача - йăнăшмарăм пачах.

Учитель ялта ĕçлетчĕ,
Атте вырăнне килнĕскер.
Ванюшкин Лексантăр, - тетчĕç,-
Салтак пек шакла пуçлăскер.

Ăна вăрçăччен ят тухрĕ
Каймашкăн çара, салтака.
Хыпарсăр-хăнарсăр пач çĕтрĕ,
Çын путрĕ хура шăтăка.

Эп курнă... Сăнран пĕлетĕп...
Ку - хайлав мар, документ.
Астунă тепри те, эс те...
Çын кайнă - килне килеймен.

Хăйсен кăкăрĕпе хуплана
Çĕр-шыв кăкăрне ютран.
Металл тӳсеймесĕр шăраннă
Салтак утса кĕнĕ вутра.

Паттăрсем тухрĕç пиншеррĕн.
Пулнă... паян та пуртан
Çĕр-шывăм сывлать ман чĕррĕн,
Вăл çăлăнчĕ сăхă муртан.

Шăмăсен сăрчĕ те пулнă,
Ку - ирĕксĕр вĕлернисен шăмми.
Çав хуйăха кам тӳссе курнă?
Асапĕ - чуна шăнăçми...

Кĕçех ал пусать Маршал Жуков
Çĕр-шыв ятĕнчен Акт çине.
Тинех каçару-и? Çуккă!
Преступник, туян пайтине!

...1418 талăк
Чăлăм куç хупман эпир.
Шутланă: вăй илтĕр патшалăх,
Хумхантăр тыр-пуллă хир!

Йăлттам Çĕнтерӳшĕн хучĕ
Пур халăх та хăй тӳпине.

Çунтарчĕ хаяр вăрçă вучĕ
Сахал-и чăваш ачине.

Анчах та вăл тухнă паттăр
Вутран пиçĕхсе ытларах.
Каланă чăваш:
- Вăй патăр!
Ачам, ан кĕттер вăрах!

Ислет фашиста пĕр тăтăш!
Ылхан Гитлĕре, ылхан!..
Юхтарнă вăл тар, юнпа хутăш,
Вăл вилнĕ те, кирлĕ пулсан.

Кам манĕ? Çырсаччĕ «Правда»
Герой Павел Лаптев çинчен.
Сăнран çын сăпайлă кăна та -
Çĕр-шыв тĕлĕнет ĕçĕнчен.

Смирнов пулеметчик, пĕлетĕр,
Орлов тухĕ сирĕн ума...
Манмасть халăх чи ятлине те,
Кам ятсăр - ăна та манмасть.

Янташ, Кив Улхаш чăвашĕ,
Ку - Князькин Николай, танкист.
Сире пĕлтермешкĕн хавас эп,
Чăн, тивĕç юрра ун пекки.

Пуç хунă çыравçă Бараев,
Фронтра - Хусанкай та Ухсай.
Вĕсем пĕччен марччĕ, нумайăн,
Поэзи тăрать-и пăхса!

Вут-çулăм кĕрлерĕ каç-ирĕн,
Çыравçă йăлт илчĕ ăша.
Илемлĕ яш проза та пирĕн,
Поэзи те пулчĕ пăшал.

Асту-ха: Тимĕрçен чăвашĕ,
Профессор Кармуççа Ванькки
Хайланă металл таврашĕ -
Тăшман ылханни, ун çукки.

Çĕкленчĕ те çăлтăрлă кăйкăр
Вирт ячĕ тăшман çăханне.

Май мар-и? Тăхтавсăр йăкăр!
Тасал вĕçсе килнĕ енне!..

1418 талăк
Питех те килейрĕ хĕрӳ.
Çапах та вăл çитрĕ яланлăх,
Эпир чи кĕтни -
ÇĔНТЕРӲ!

* * *

Каллех сас кайрĕ: «Ака туй!»
Каллех кĕрлет район варри.
Мĕн чухлĕ тĕс çиçет: ай-уй!
Хĕрли те симĕсси, сарри...

Каллех юхать этем çырми,
Кĕрлет тулли те аслăскер.
Пуçламăш сыпăкра çырни
Каллех çĕкленчĕ хайхискер.

Эллада тĕмсĕлни, кĕтни,
Эппин, сывах эс, Ахилес!
Аваллăх авăрне путни,
Каллех чĕлхе çинче-çке эс!

Сана çав тĕпсĕр авăртан
Гомер туртса кăларнă та,
Çав самантран эс, çав кунтан
Çĕнтернĕ паттăр Вăхăта.

Çапăçури хастар тусу
Пуçне хурсассăн ăнсăртран,
Çитернĕ сан йăлттам ăсу
Чун пусарма ипподромра.

Вара çĕкленнĕ сăр тусан
Çатма пек такăр çул çинче.
Шух ăйăр урипе тапсан
Кисреннĕ тейĕн çут тĕнче.

Ахаль-и халь аса килет,
Эллада паттăрĕ умрах.
Паян та ипподром кĕрлет,
Вĕçет çунатлă урхамах.

Троян вăрçи-харçи асрах,
Хитре юмах - пĕлекене.

Ку чухнехи - хаяртарах,
Çунтарчĕ, ĕнтрĕ тĕнчене.

Çак уявра курмастăн эс
Чылай паллана сăн-сăпат.
Çур ялĕ - ĕненес килмест -
Паян инçе çĕрте выртать.

Кашни хастар та вăй питти
Çÿренĕ мирлĕ вăхăтра.
Тăратчĕ пур ватти-вĕтти
Çĕр çуннă чух ялта шатра.

Чĕрри çĕртишĕн тавăрать,-
Тинех вăл таврăнчĕ килне.
Çĕрпех кĕç хупласа хурать
Вут-вăрçă кăмрăкне, кĕлне.

Манмасть пуç хунă паттăра,
Чыслать ăна çак уявра.
Халь çĕн хускав ипподромра,
Халь урăх урхамах умра.

Сăр гимнастерка, галифе...
Çиçет-и орден е медаль...
Çĕре çут атă кĕлипе
Пичетлесе иртет çын халь.

Утать вăл çирĕппĕн пусса,
Хавасла ĕнерхи салтак.
Вăл пуррипе, ума пăхса,
Чăн телее куратпăр ак.

Мăнаçлă ункă варринче
Хăмач ялавлă çын çÿрет.
Кур: гимнастерка çийĕнче,
Медалĕ йышлă, икĕ рет.

Палларĕ халăх: ал çупать.
Ара, Агапов-çке, маттур!
Çынни лашапалах супать,-
Пĕлни те, туртăмĕ те пур.

Судья вăл - ĕнерхи салтак,
Уяв хуçи, ун чун-чĕри.

Хăй тĕрекленнĕ çеç пăртак,
Ĕлĕкхиллех хĕрӳ, вĕри.

Ак, çапрĕç чан...
Тепре...
Татах...
Хайхи пуçланчĕ!.. Пачĕç старт!
Ура хуçса ларать вăртах,
Хупать:
- Эпир камне кăтарт!..

Çапла парать вăл хăй вăйне
Колхоз чысне çĕклекене.
Илем кӳрет ака туйне
Чи хаклине парса - чунне.

Хĕвел çиçет ĕлĕкхилле,
Каллех тӳпе сенкер, чипер.
Кашни питре вылять шевле,-
Чи кĕтнĕ куншăн хĕпĕртер!

Хĕм-телее кĕлтен-кĕлтен
Сапма Атте-Хĕвел хавас.
Телей валеçнĕ чух килте,
Асту, ларса ан юл, чăваш!

Геройсене кĕтсе илет
Ял-йыш колхозăн садĕнче.
Кунта ватти-вĕтти килет,-
Хĕвел шевли питсем çинче.

Сĕтел тулли - улма-çырла,
Симпыл, сăра - курка тулли.
Пит пысăк сăлтава пула
Кĕрлет ял-йыш сасси, кулли.

Чи варринче вара, тĕпре,
Кур: çĕнтерӳçĕ-паттăрсем.
Кăкăрĕсем çинче хитрен
Хĕлхем сапаççĕ çăлтăрсем.

Кунтах Синерпипе Эпти...
Кӳрсе кĕрекене илем,
Хăй сăмахне пуçлать ватти,
Ытти итлет йĕркипелен.

Тулли те чаплă кĕреке,-
Кун пек уяв хальччен курман.
- Иртсем, тархаспăн, килекен,
Сире калас сăмах пур ман...

Çĕклерĕ Çĕнтерӳ курки
Эпти - йыш пуç, йĕркипелен.
Чуна витен сăмах пирки
Каларĕ уçăмлăн, хуллен.

Сасси çитет çирĕплене
Сăмах вĕçне... Атя, çунтар!..
Хăнасене хисеплесе
Татах сăра курки тултар!

Паллатăн: Йăкăш, Селиме,
Хавасла иккĕш те раснах.
Хăймарĕ яш савни теме,
Сăмахĕ хатĕр ун, асрах.

Анютăпа Светлана та
Лара-тăра пĕлми хавас.
Вĕсем те çак йышра, тăхта,-
Хĕртеççĕ мар-и çакă вальс?

Мĕн калăн: савăнма чунран
Сăлтавĕ пысăк хальхинче,-
Вĕсем те катăк мар çынран,
Вĕсен те пур та-ха пичче.

«Хĕр пулчĕç»,- теççĕ ватăсем,
Вĕсем чухлаççĕ вăхăта.
Пĕрре, йăлишĕн, вĕçтерсе
Киле те пырĕ-ха хăта.

Анчах ăçта çӳрет Курак?
Вăл курăнмасть çуй йышĕнче.
Шăпи те хурлă та хура,
Çаплах манмаççĕ килĕнче.

Анчах та халăх умĕнче
Ун ячĕ илтĕнмест темме.
Питех те аслă та тĕнче,
Унта пур вырăн кичеме.

Шывланнă куçĕ Велимен,
Вăл çеç телейсĕр те хăрах.

Курак çинчен вăл пач пĕлмен,-
Те вилнĕ лешĕ, те сывах?

Тен, килĕ вăл та... каярах...
Пулать-мĕн ун пекки чылай.
Ак мĕншĕн Велиме хăрах,
Хуйхи ун пысăк та нумай.

...Вăрçăчченхи, ун хыççăнхи,
Çыр пек ун вирринчи - вăрçи...
Эс ху та урăхрах хайхи,
Хуçу сан - Вăхăт, эс - тарçи.

* * *

Тинех вĕçленчĕ ман калав
Ялти Телей тавраш çинчен.
Анчах пĕтме пĕлмест ялан
Хуйхи-суйхи те çут тĕнчен.

Паян Синерпипе Эпти -
Шап-шурă çÿçлĕ ватăсем.
Хунать, çул иртнĕсем, вĕтти,-
Эпир пĕлмен Телеевсем.

Анютăпа Светлана, кур,-
Кил ăшшине тупайнăран,
Тăлăхскерсем, тÿсмерĕç хур -
Халь пĕртте катăк мар çынран.

Хăйсен çемйи, ачи-пăчи
Паян ялта çÿрет вĕсен.
Хусамăр ыйтăр:
- Кам ачи?
Илтетĕн эс:
- Телеевсем.

Пукане пек ача-пăча
Кÿрет этем чунне илем.
Вĕçленчĕ юррăм ман. Анчах.
Пĕр саманта аса илем.

Шăпах иртейрĕ çирĕм çул
Эсрел фашист шалчи тулни.
Чуна пусать-ха йывăр чул,
Куç умĕнчех иртни-пулни.

Çук-çук тесессĕн те иртни
Хумхантарать киле-йыша.
Мĕн-ма атте-анне тени
Çынна çитсен кĕрет ăша?

Анютăпа Светлана та
Час-час шутлаççĕ кун пирки.
Телей те тупнă-ха кунта,
Чăнне пĕлеспĕн: кам пирки?

Кам пулнă? Пур-и тымарсем?
Аттепеле анне сăмах
Асамлă-мĕн. Усрав хĕрсем
Çакна манмаççĕ-çке, чăнах.

Паян хăйсем те - амăшĕ,
Çапах иртни кĕрет ăша.
Чун тӳрлетмешкĕн тăрмăшĕ
Çак арăш-пирĕш йăнăша.

Манса каймашкăн çук йăлтах
Чĕре çине тĕрленине...
Шырать, ырмасăр, эфирта
Сыв ашшĕ-амăш ачине.

Чĕнет тăлăхсене «Маяк»,
Ырма пĕлмест - хаçат-журнал.
Кĕтни ан кайтăрах сая,-
Тăраççĕ пинĕн алла-ал.

Юлашкинчен, сăмах çинех,
Çитет яла пĕр ирхине.
Хăй Амăшĕ тупать тинех
Маттур чăваш хĕрарăмне.

Тахçан çухалнă ик хĕрне
Палларĕ, тупрĕ кинемей.
Куç хыврĕç виççĕн пĕр-пĕрне...
Анчах та ма йĕрет Телей?

Вăл çăмăлпа килмест иккен,
Пур çӳрекен те çавапа...
«Телейлĕ эпĕ», - теекен
Нумаях мар, тен, çавăнпа.

Пур сапаканĕ наркăмăш,
Элек таврашĕ акакан.
Ахальтен мар вăркать сан ăш
Çакна курсассăн аякран.

Телей патне çул çăмăл мар,
Çакна çын шăпинчен сăна.
Эпир палланă хĕр е ар
Йăлт калĕ кун çинчен сана.

Чăн-чăн телей килмест ансат,
Çӳрет вăл тăвăлпа пĕрле.
Сан кĕсменӳ хума касать,
Мал ĕмĕт - çутатать çĕрле.

Çынна мĕн чухлĕ валеçсен -
Чĕре çӳпçи тулать çапла.
Çакна пĕлмен çын вăл - кĕсен,
Питех те мĕскĕн вăл апла.

Кирли нумай этем йăхне,
Кашни çынна, кашни киле.
Ытти хĕн-инкекре чухне
Нихçан кураймăн эс телей.

Эппин, тыт яланах асра
Кăвак-планета-аннӳне.
Çĕр!
Çаврăн, çаврăн уçлăхра!
Валеç пурне те тивĕçне!

Тӳрлетĕр вăрçă йăнăшне,
Этем суранĕ хухтăр шав!
Этем йăхне, ун таврашне
Телей сунакана мухтав!

1956-71, 1973-1974-88.

ТУПМАЛЛИ

Чёмпёр ен юрăçи

ТЁРЛЁ ÇУЛХИ СĂВĂСЕМ

Шурă хурăн....7
Йăмра....7
Çырма....8
Кимёç....8
Икё кёпер....9
Тёл пулу....10
Ялавăр....11
Коновалов сачё....12
Çырлара....13
Яковлев шкулё....14
Çёр....15
Поэт куççулё....16
Чăваш наци конгресне....17
Хут мыскари (шӳт)....18
Пёрремёш хёл....21
Черет....24
Ыйткалакан....24

ПОЭМĂСЕМ

Тăван ялта....26
Йывăç велосипед....38
Ултав?....47
Пурнăç авăрё (сăвăлла роман)....53

Анатолий Юман (Ермилов Анатолий Федорович)

ИЗБРАННОЕ
Стихотворения, поэмы, роман в стихах

На чувашском языке

Под редакцией автора
Художник *В. Я. Кашеев.*
Технический редактор *Е. К. Коломыцева.*
Корректор *Л. В. Ныйкина.*

Сдано в набор 13.07.94 г. Подписано в печать 9.12.94 Формат 84x108 $^1/_{32}$
Бумага тип. № 1. Гарнитура Тип-Таймс. Офсет. Усл. печ. л. 10,5
Уч.-изд. л. 10.0. Тираж 1000 экз. Заказ № 1611. Цена договорная.

Областное книжное издательство "Симбирская книга"
432021. г. Ульяновск, ул. Гончарова, 52.

Облтипография "Печатный двор"
432061, г. Ульяновск, ул. Пушкарева, 13.

3.000=